К84.09(=Чув)
К 43
Ч-47561

НИКОЛАЙ КИРЮШИН

Çул çӳревçӗ калавӗсем

Ульяновск 2015

Национальная библиотека ЧР
4-047561

К
К 84.09(=4у
К43

«Çул çӳревçӗ калавӗсем»
Николай Кирюшин

Рекомендовано к изданию Союзом писателей Чувашской Республики. Чувашской народной академией наук и искусств, Союзом Чувашских краеведов, филиалом Международной академии Болгарознания, инновации и культуре – МАБИК (Болгария).



Николай Кирюшин у памятника царю Великой Болгарии кану Кубрату в Старое Прищепино Украина 2013 г.

Çул çӳревçӗ калавӗсем

Ульяновск 2015

ББК 26. 8+84Р2
УДК 91
К 43 Николай Кирюшин «Сул çӳревсĕ калавĕсем»

Дарственный экз
К84.09(=4чВ)6-445,444.3

Материал подготовлен к печати с помощью редакции газеты «Канаш».



Ăсчахсен шучĕ ӳссе пырать. □Канаш□ хаçатăмăра вулакансем Николай Кирюшин тавраπĕлӳçĕн хушаматне вулакансем аван пĕлеççĕ. Вăл нумай тухса çӳрет. Мĕн курни-илтнине пирĕн хаçата çырса тăрать.

Хисеплĕ çул çӳревçĕ ĕçне Шупашкарта та асăрханă. Чăваш халăхĕн тава тивĕçлĕ ăсчахĕ Юхма Мишши унăн хайлавĕсене тишкернĕ хыççăн ăна □Чăваш халăх ăсчахĕ□ ята пама йышăннă. Унсăр пуçне Николай Кирюшин пăлхар-чăваш халăхĕн историне тĕпчес ĕçре палăрнăшăн Пайдул Искеев ячĕллĕ премине тивĕçнĕ. Пайдул Искеев 1670-1671 çулсенче Степан Разин ертсе пыракан хресчен вăрçинче çар пуçĕ пулнă. Сăвăсем çырнă.

Чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕнче Юхма Мишши ентешĕмĕрĕн кăкăрĕ сине □Чăваш халăх ăсчахĕ□ тата □Чăваш халăх академине 20 çул□ кăкăр паллисене çакса яна.

Ч-47561

@ Николай Николаевич Кирюшин – автор рассказов, издатель 2015
Николай Григорьевич Кондрашкин – составитель и научный консультант 2015
Нина Егрaшкина и Михаил Аляпкин – редакция, перевод – 2015

Национальная библиотека
Чувашской Республики
Проверено 8 СЕН 2017

Предисловие - малтисăмах



Возвращаясь к исторической памяти своего народа, мы каждый раз вспоминаем общеизвестные крылатые слова - **«Человек, не знающий историю своего народа, похож на дерево без корней».**

Чуваш – одно из древнейших слов на земле, связанное с первобытной религией. Как немецкий журнал «Свободный мир» в марте 1979 года опубликовал очерк журналиста Лотара Куша «Инки на Волге» с сенсационными для нас новостями. Будто бразильский ученый Любомир Зефиров обнаружил в инкском языке около 170 чувашских, а в чувашском языке около 120 инкских слов. В инкской мифологии есть даже слово «Чуваш» - имя бога света. Он когда-то, приблизительно 10 тысяч лет назад прибыл на землю.

Великий русский ученый. академик Дмитрий Лихачёв утверждал: «Память – одно из важнейших свойств любого бытия: материального, духовного, человеческого… Каждый культурный подъём был связан с обращением человечества к духовному прошлому». А прошлое у нас великое! Недаром оно до сих пор вдохновляет молодых ученых историков, поэтов, краеведов, скульпторов, писателей, заставляя переосмыслить нашу историю, постараться разобраться в ней и воздать по справедливости.

Мой коллега, чувашский краевед-путешественник из Ульяновска Николай Кирюшин поставил перед собой вполне реальную достижимую исследовательскую и увлекательную задачу – побывать и увидеть своими глазами на земле своих древних предков и рассказать об этом другим, где в разные исторические периоды болгаро-чувашской истории проходили великие историко-культурные события в разных регионах постсоветского пространства. За последние пять лет неутомимый чувашский путешественник посетил самые интересные и отдаленные исторические места болгаро-чувашской диаспоры. Таким образом, он два года тому назад побывал на месте захоронения царя Великой Болгарии кагана Кубрата в с. Малое Прищепино под Полтавой, куда мы были приглашены украинскими коллегами вместе с болгарскими братьями на 100 летний юбилей вскрытия золотого захоронения царя Кубрата. А в этом году ему довелось побывать на «Чувашской горе» и на Бичуринских чтениях в Тюменской области вместе с другими чувашскими

краеведами, и даже на южном побережье Кавказа в поисках приключения и исторических артефактов великого наследия болгаро-чувашского этноса.

Данная книга, это путевые записки автора о том, где он побывал и что увидел своими глазами, поможет подрастающему поколению молодежи не только прикоснуться к историко-культурным ценностям древнего и многострадального болгаро-чувашского народа, но и переосмыслить свое представление о культурном наследии своего Чувашского края и великой истории всей мировой цивилизации.

Председатель Ульяновского отделения Союза писателей Чувашской Республики, академик Международной академии Болгарознания, инновации и культуре (Болгария), заслуженный работник культуры ЧР, Чувашский народный академик Н.Г. Кондрашкин.



«То, что путешествие бывает настолько увлекательным и познавательным, это я знаю по себе…»

Академик МАБИК Николай Кондрашкин в гостях у дунайских болгар, братьев Маджаровых, г. Варна (Болгария), май 2013г

Дунай-Пăлхар хăни чăвашсемпе тĕл пулчĕ



Эпĕ вулакансене малтанах çакна каласа кăтартасшăн, юлашки вунă çул хушшинче Чĕмпĕр енчи хастарлă чăвашсем - ăсчахĕсем, тĕпчевçĕсем, çыравçисем, тата таврапĕлюçисем пĕрле халăх хушшинче питĕ пысăк та пархатарлă ĕçсем туса пыраççĕ

Çапла вара паллă чăваш ăста художникĕ, скульторĕ, çыравçи, таврапĕлюçи тата тĕпчевси Николай Григорьевич Кондрашкин тăрăшнипе чăваш енчи çыравçисемпе таврапĕлюçисем Дунай-Палхар енчи ăсчахĕсемпе, тата çыравçисемпе çыхăну тытрĕç. Ку туслăха çиреплетес йĕркипе малтанах ХХ мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче питĕ нуммай ĕçленĕ чăваш халăхĕн паллă çыравçисемпе поэтĕсем, вĕсен хушинче - Алексей Талвир, Педĕр Хузангай, Юхма Мишши тата Виталий Станъял паллă йĕр хйварнă.

Ça венĕпе сире çакна каласа хăварас килет, юлашки виçĕ çул хушшинче çыравçă, ăсчах Николай Грирорьевич Кондрашкин икĕ хут Дунай-Пăлхарсен тепчев конференцине кайса пĕтĕм тĕнчери Болгари тăванлăхăн килĕшӳпе культурă çыхăну ĕçĕсене çирĕплетсе килчĕ.

2013 мĕш çулта утă уйахен 11-мешенче Чĕмпĕр хулине Болгари çĕршывенчен истори тĕпчевси Ангел Христов ăсчах вĕçсе килчĕ. Вăл малтан Пушкартри чăваш таврапĕлуçисемпе тĕл пулнă. Кайран Киколай Кондрашкин чĕннипе Чăваш тĕнчине курма килчĕ, унта мана та чĕннĕчĕ, ун патĕнче иеĕ кун хăна пулчĕ те эпир вара унпа тепĕр кун Пăлхар хăнине Шупашкара илсе кайса кăтартрăмăр. Çула май Кугеç посăлокĕнчи Никита Бичуринăн музейне кăрсе тухрăмар. Хăнана Бичурин востоковед синчен каласа патăмар. Вал питĕ тĕлĕнчĕ унăн пурнăсĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен пĕлсен. Самах май кунти музей директорĕ – Кивĕ Улхашра суралса ӳснĕ Ирина Удалова (Ельмукова)

Чăвашсен тĕп хулине çитсенех, пире Николай Григорьевич шăнкăравланă тăрăх чи малтан паллă ученăй Николай Егоровпа халăхăн паллă писателĕ Юхма Мишши кĕтсе илчĕç, весем Пăлхар хăнипе малалли перлешӳллĕ ĕçĕсене палăртрĕç. Хаклĕ хăнана ăсатса Юхма Мишши нумай кенеке, брошюра парнелерĕ Ун хыссăн пурте Чаваш радиостанцине сул тытрăмăр.



Презентация книги Николая Кондрашкина «Болгариада» 2013 г.



Ангел Христов в Чувашском национальном конгрессе 2013 г

Унта эпир паллă ученăй, писатĕльпе Геннадий Тафаевпа тата Сывăр-Тимĕрпе тĕл пултăмăр, «Чăваш радио» центăрĕнче хăнаран интервью илчĕç, çур сехете пыракан каласура вĕсем нацин сивĕч ыйтăвесене сӳтсе яврĕç Ун хыççăн вара калаçăва Чемпĕр хăнине ертсе çӳрекенĕ Николай Кондрашкин скульптор тата çыравçă хутшанчĕ. интервью пачĕ. Вал мĕнле Пăлхара кайса, мĕнле ĕçсем туса килни çинчен нуммай каласа пачĕ, Дунай пăлхарĕсемпе пĕрле ĕçлеме сĕнчĕ.

Пирĕн çул малалла Чăваш наци библиотекине выртрĕ, Мĕнле вăхăт çитмесен те çул çинче чарăнса паллă чăваш поэчĕпе Валерий Тургайпа хăнана паллаштартăмăр та кăмăлтан виç сăмах калаçрăмăр.

Библиотекăра вара Николай Кондрашкин сырнă «Болгариада» ятлă кĕнекен хăтлавĕ иртрĕ. Кунта наммай чăваш академикĕсем пухăннăччĕ, çав майпа Ангел Христов истори валли кинофильм снимат турĕ. Юлашкинчен Тимĕр пурне те чăваш пĕттине çиме сĕнчĕ.

Çак пысăк мероприятисене Шупашкарта иртерме пире чăваш халăх ученăйĕ, филологи профессорĕ Николай Иванович Егоров нуммай пулăшрĕ, вăл çакăн пек пысăк ĕçсем тунăшăн ĕсчаха Николай Григорьевича чĕререн тав турĕ. Палхар хăни хисеплĕ ханасен кĕнекинче хай шухăшĕсене сырса хаварче.



Встреча Болгарского ученого Ангела Христова в столице Чувашии г. Чебоксары чувашскими учеными и культурными деятелями. 2013 г.



Утă уйăхĕн 11-мĕшĕнче Чĕмпĕр хулине Болгари çĕршывĕнчен истори тĕпчевси Ангел Христов ăсчах вĕссе килчĕ.



Ангел Христов на презенетации книги Николая Кондрашкина «Болгариада» в Республиканской библиотеке г. Чебоксары 11 июня 2013 г.



Встреча болгарского ученого А. Христова в г. Ульяновск. 2013 г.



Кубрат палăкĕ Уменче пуçа тайрăм.

Кубрат палăкĕ умĕнче пуçăма тайрăм

Ака уйăхĕнче эпĕ чăвашсемшĕн хаклă вырăна – Аслă Пăлхар-чăваш патшине –Кубрата – пытарнă тĕле çитсе куртăм. Тепĕр майлă ăна вырăссем «Перещепинский могильник» теççĕ.

Кам-ха вăл Кубрат? Вăл Аслă Пăлхар патшалăхĕн пĕрремĕш хăватлă патши. 605-607 çулсенче çуралнă. Патша пуканĕ çине вăл куккăшĕ хыççăн (ăна Орган тесе чĕннĕ) 635-660 çулсенче лартнă. Кубрат ăслă, пуян, тĕрĕслĕхе юратакан çын пулнă. Пĕвĕпе кĕрнеклĕ, çӳллĕшĕ –180 сантиметр. Вăл пилĕк ывăл ӳстернĕ. Виççĕшĕ –хăйĕн, иккĕшĕ – усрава илнисем. Асли – Питпуян (Батбаян) ашшĕ вырăнне юлать. Иккĕмĕшĕ – Котраг (Кăтри) Тамаис (Дон) юхан шыв урлă каçса тĕпленет. Виççĕшĕ Хĕвеланăç еннелле тухса каяççĕ. Аспарух хальхи Болгари çĕршывĕнче, тепри -- Паннонире (Венгри). Пиллĕкмĕш--Çурçĕр Италие çитет. Кубрат 658-660 çулсенче вилнĕ. Ăна Полтава облаçĕнчи Константинов уесĕнче (халĕ Ново-Санжар районĕ) Кĕçĕн Перещенино ялĕ çывăхĕнчи çеçен хирте пытанă.

Унăн вилтăприне 1912 çулхи çĕртме уйăхĕн 1-мĕшĕнче тупнă. Икĕ ача (10-12 çулхисем) – Карпо Манжар тата Федор ятлăскерсем кĕтнĕ. Пĕри ăнсăртран шăтăка анса каять. Тимĕр ещĕке пырса тăрăнать. Сĕтĕрсе кăларма хăтланать – пултараймасть. Юлташне чĕнет, тинех туртса кăлараççĕ. Шаларах чаваласан икĕ авăрлă чӳлмек, ылтăн кубсем тупаççĕ. Кубратăн тупăкĕ ылтăнран пулнă. 600

пластинăран тăнă. 240 пластинине çеç тупаççĕ. Ыттисене ял çыннисем вăрласа пĕтернĕ.

Кĕтӳçĕсем те ылтăнĕсене килĕсене илсе таврăнаççĕ. Пĕрин амăшĕ ылтăн курсан хăраса ӳкет. Чиркӳрен вăрланă пулĕ тесе вăл стражниксене кайса парать. Вĕсем килсе çитнĕ çĕре çур ял çĕр чавнă: çĕмĕрнĕ, кăкланă, аркатнă. Стражниксем килĕрен ылтăн шырма тытăнаççĕ, анчах пурне те тупаймаççĕ. Вилтăпринче 50 гилограмм кĕмĕлтен, 20 гилограмм ылтăнран тунă япаласем тухаççĕ. Унсăр пуçне Кубратăн пиçиххине, виçĕ шăллă йăх мĕлкине («Дуло»), «Кубратос» тесе çырнă çĕррине тупаççĕ. Çак вырăнпа ăсчахсемпе археологсем те кăсăкланма тытăнаççĕ. Константинополь хула паллиллĕ кĕмĕлтен тунă япаласем, Паттерна Епископ паллиллĕ турилкке, алă çумалли кăкшăм, мăя çакмалли хĕрес тупаççĕ. Иоахим Вернер историк вара вилтăпри чăннипех те Аслă Пăлхарăн пĕрремĕш патшин –Кубратăн пулнине çирĕплетет. Çак япаласем халĕ Санкт-Петербургри Эрмитажра упранаççĕ.

Тăватă-пилĕк çул иртсен çак ялта пурăнакансен кирпĕчрен тимĕр тăрăллă çĕнĕ çуртсем çĕкленсе лараççĕ. Ку япалана мана вырăнти историк каласа пачĕ.

2001 çулхи августăн 18-мĕшĕнче пăлхарсем Кубрата хура гранитран палăк лартаççĕ, «Хан Кубрат» ятпа ыркăмăллăх фондне йĕркелеççĕ. Кăçалхи çу уйăхĕн 21-22-мĕшĕсенче вĕсем палăка уçнăранпа 10 çул çитнине паллă тума хатĕрленеççĕ. Унта мĕнпур пăлхар халăхĕ пуçтарăнмалла терĕç. Эпĕ ыркăмăллăх фончĕн çыннисемпе калаçрăм. Пăлхар хули çинчен, Чĕмпĕр чăвашĕсем çинчен каласа патăм, «Канаш» хаçатпа паллаштартăм, 500 ытла сăн ӳкерчĕк турăм. Пăлхарсем Чĕмпĕр чăвашĕсене те хăнана чĕнчĕç.





Наша задача приумножение духовного наследия чувашского народа.

Халăх ячĕ –VIII ĕмĕрте

Тува Республикин çурçĕр пайĕнче Чăваш ятлă çырма пур. Вăл Хамсара юхан шыв юппи. Хамсара Аслă Енисее юхса кĕрет. Чăваш çырми Анăç Саянăн кăнтăр айккипе юхса анать, тăршшĕ çĕр çухрăма яхăн. Чăваш халăхĕн историне нумай тĕпченĕ В.Ф. Каховский профессор «Чăваш халăхĕ кайни» кĕнекинче (195-196 стр.) чăваш çырми пирки **унăн ячĕ авалтан килет пулсан чăвашсен мăн аслашшĕсем хунсен тапхăрĕнчех «чăваш» пулнă тесе шутлама юрĕччĕ** тесе çырнă. Вăл çак ят аваллăхне çирĕплетмелли документа тупайман. Пирĕн паллă археолог тата историк чăвашсемпе хакассен çын, çырма, ял ячĕсен пĕрпеклĕхне те палăртса тĕслĕхсемпе çирĕплетсе хăварнă.

Чăваш çырмин ячĕ VIII ĕмĕртех **Чăваш** пулнине çирĕплетекен документа историксем XIX ĕмĕртенпех пĕлеççĕ. Ăна Раççейĕн тата ют çĕршыв ăсчахĕсем нумай хут тишкернĕ, халĕ те тĕпчеме пăрахман-ха. В.Ф. Каховский те ăна лайăх пĕлнĕ. Çак документ – Моголири Орхон çырми патĕнчи тĕрĕксен улăпне Кӳл-тегине халалланă асăну комплексĕнчи ятарлă чул çине вырнаçнă текст. Унта тĕрĕксем токуз-оргузсемпе вăрçни çинчен çырнă тĕлте эпир вĕсемпе тăваттăмĕш хут «Чуш башында çапăçрăмăр» теннĕ. В.В. Радлов профессор (1895) çак

сăмахсене «Чуш тăвĕ тăрринче» тесе ăнланнă. С.Е. Малов профессор (1951) «Чун çырми пуçĕнче» тесе куçарать, тĕрĕссипе вара, çапăçу **Чăваш çырмин пуçламăшĕ** патĕнче пулса иртнĕ. Ăна кӳршĕ халăхсем Чуаш тенĕ. Тĕрĕксен орфографийĕ сăмах пуçламăшĕнчи е варринчи аш сыпăка пĕр **ш** саспаллипе çеç палăртма хушать, анчах тӳрк чĕлхинче сăмах пуçĕнче тата варринче нихăçан та уçă сасă юнашар тăмасть. Вĕсемшĕн «Чуаш» сăмах ют сăмах пулнă. Çыракан ăста Йоллыг-тегин «чу» çырнă хыççăн , хăнăхнă пек , «аш» вырăнне «ш» çырать; ас тăвăр – чул касса çырать вĕт, пĕр çырсан тӳрлетме май çук. Ку хутĕнче чу хыççăн , **ш** умĕн **а** çырмаллах пулнă çав – тăван чĕлхен орфографине пăснине пăхмасăр. (Тĕрĕксем руна саспаллийĕсемпе сылтăмран сулахаялла çырнă).

Кăнтăр Çĕпĕрте «Чу»-па пуçланакан юхан шыв питĕ йышлă – Чузик, Чулым, Чулышман, Чульча, Чумыш, Чуна, Чуня, Чуя тата ытти те. Çак топонимика динлин йăхĕсенчен юлнă имĕш (А.П. Дульзон).

«Чуаш» çырма ячĕ те çак йышранах. Тата халĕ ăна пурте «Чăваш» теççĕ пулсан çав çырма тăрăхĕнче ĕлĕк-авал пирĕн măн-măн асаттесем самаях вăрах пурăннă ĕнтĕ. Вăтăртан та ытларах вилĕ тата чĕрĕ тĕрĕк чĕлхинчен пĕр чăваш чĕлхинче кăна, саккăрмĕш ĕмĕрти тӳрк чĕлхинчи пек, икĕ уçă сасă юнашар тăмасть; тăмаллах чух вĕсен хушшинче **«в»** сасă кĕрсе ларать; уçă сассисенчен пĕри «у» е «ӳ» пулсан ăна «ă» е «ĕ» сасă улăштарать: пăру-пăрăва, кĕтӳ-кĕтĕве; Чуаш-Чăваш.

Вăрах пурăннă-ши чăвашсем Чăваш çырми тăрăхĕнче? Пĕр иккĕленмесĕр калама пултаратпăр—вăрах. Мĕншĕн тесен динлинсем Кăнтăр Çĕпĕрте пирĕн эрăчченхи III ĕмĕртен пуçласа пирĕн эрăри V ĕмĕр таранччене пурăннă. Çак тапхăрта кăна пулас чăваш **чуаш** ятлă пулнă, урăхла каласан – тĕрĕк чĕлхине куçиччен. Тĕрĕк чĕлхине йышăнасси хунсем Ту ен Енисее вăрçса илсенех пуçланма пултарнă. Апла пирĕн эрăчченхи II ĕмĕрте. Китайсемпе сяньбисем çурçĕр хунсене пирĕн эрăн II ĕмĕрĕнче çĕмĕрсе тăкнă. Чăннипе -- çурçĕр хунсен хушшинче хун маррисем чăн хунсенчен темиçе хут ытларах пулнă тесе шутлаççĕ. Çав хун маррисен хушшинче ас (аш) халăхĕн уйрăм йăхĕ пулнă. Китай çул çыравçисем çурçĕр хунсем таçта анăçалла куçса кайнине пĕлтереççĕ. Унччен чуашсем тĕрĕкленсе **чăваш** теме кăна мар, «çĕнетнĕ» ятпа тăван çырма тăрăхĕнче çĕнĕ ята кӳршĕ халăхсем те, хăнăхиччен, апла пулсан самаях вăрах пурăнма та ĕлкĕрнĕ. **Çакна çирĕплетсех калама Чăваш шывĕ тăрăхĕнче ятарлă археологи ĕçĕсем тумалла (пурăннă вырăнсене, масарĕсене чавса тишкермелле), чăвашсем унта хăçантан пуçласа хăçанччен пурăннине тĕпчесе пĕлмелле.**

Халăхăн пурăнмалли вырăнне улăштарасси ансат ĕç мар. Унăн пĕр пайĕн тĕрлĕ сăлтава пула кивĕ вырăнтах юлма тивет. Ку хутĕнче

те çаплах пулнă. Юлнă ассем, тен, халăхăн пысăкрах пайĕ те пулнă-и; вĕсем ĕрчесе VIII ĕмĕр пуçламăшĕнче самаях йышлă халăх пулса тăнă, Тĕрĕк каганлăхĕн (патшалăхĕн) çарне хирĕç тăма та шикленмен.



Из графической серии «Истоки болгаро-чувашского народа» художника и писателя Николая Кондрашкина 2000 г.

Халăх ячĕ –XIII ĕмĕрте

Чăваша чăваш ятпа вырăссен летописĕнче пĕрремĕш хут 1508 çулта асăннă иккен. Кăçал эпĕ арабсен пĕр летописĕнче чăваш ятне 1221 çулпа сыхăнтарса асăннине тупрăм. Летопись авторĕ – 1160 çулта Месопотамири Джезире-Ибномар хулинче çуралнă Иззеддин Абульхасан Али Эльджезери, ăна историксем ытларах Ибн эль-Асир ятпа пĕлеççĕ. Вăл Мосул хулин атабекĕ пулнă, Нуреддин Арсланшах хĕсметĕнче тăнă, çав хулара 1233 çулта вилнĕ. Вăл çырса хăварнисене Раççей историкĕ В. Тизенгаузен куçарса 1884 çулта Питĕрте кăларнă «Сборник материалов, относящихся к истории Золотой Орды» кĕнекине кĕртнĕ.

Ибн эль-Асир чăвашсене асăннă сыпăкра сăмах монголсем Араб халифатне тапăнса кĕни çинчен пырать. Вĕсем Ирбиль (хальхи Иранăн Тухăç Азербайджан облаçĕнче) патнех çитнĕ ĕнтĕ. Халиф Ирбиль хулин пуçлăхне Музаффареддинне хулана хŷтĕлеме хушать. Летописçре çапла çырнă: «Музаффареддин Декука хули патне çарпа çитсен халиф унта Ирак эмирĕ пулнă Куштемир мамелюка, темиçе эмире тата 800 юланутçа ярать. Çакăнта пухăнса вĕсем халифăн ытти çарĕ килсе çитессе кĕтнĕ. Вăл пĕчĕккине кура Музаффареддин тутарсене хирĕç тухман.

Вăл çапла каланă имĕш: «Халиф мана тутарсене хирĕç тухма хушсан эпĕ ăна тăшман вăйлă, манăн вара ăна кĕтсе илмелĕх çар çук, 10000 юланутçă пуçтарсан тутарсем йышăннă çĕрсене ирĕке кăларайăп терĕм. Вăл мана хускалма хушса кунта çар ярса пама сăмах панĕ. Килсе çитрĕм, анчах манăн кунта 800 чăваш çеç. Малалла кайса хама та, мăсăльмансене те хăрушлăха кĕртсе ŷкересшĕн мар эпĕ». Тутарсем хăйсене хирĕç çар пухăннине пĕлсен чакма пăрахнă. Мăсăльмансен çарĕ Декука патĕнче юлнă, анчах тапăнакан тăшман та, пулăшма килекен те çуккине кура каялла Ирбиле таврăннă.

Араб алфавитĕнче «ч» сас палли çукран Ибн эль-Асир «чăваш» вырăнне «таваш» тесе çырнă. В. Тизенгаузен текста куçарнă чух сăмаха арабри пекех хăварнă. Вăл унăн пĕлтерĕшне тавçăрса илеймен-тĕр.

Çак ĕç-пуç монголсем Пăлхара тапăниччен (1223 ç.) икĕ çул маларах пулнă. 800 чăваш халифат çарне лексе арабсен интересĕсене хŷтĕлесе юн тăкнă пирки тĕрлĕ шухăш пур. Ман шутпа, кунта тыткăна лекнĕ йăхташăмăрсем çинчен çырнă. Авал тыткăна лекнĕ çынсене (çар çыннисене кăна мар) чуралăха сутасси анлăн сарăлнă. Вырăссемпе пăлхарсемех пĕр-пĕрне вăрçăпа тапăнса мирлĕ халăха, çав шутрах хĕрарăмсемпе ачасене те, тыткăна хуса кайни çинчен вырăс летописĕсенче çырса хăварнисем пур. Пăлхар хулине чурасем туянма кăнтăрти çĕршывсенчен купсасем килсе тăнă. XIV ĕмĕрте акă



Начиная с двенадцатого века народы Волжской Болгарии подвергались нападениям и за триста лет была доведена до полного истребления величайшая культура на Средней Волге и на Каме.

Египет султанĕн секретарĕ Ибн-Фадлан эль-Омари Ылтăн Урта ханĕсен черкессен, вырăссен, яссен çĕрĕсенчен чуралăха сутас тĕллевпе халăха хуса яни çинчен çырнă. Тепĕр çĕрте вăлах çапла çырать: Эль-Кербелаи купса 1338 çулта Пăлхартан таврăнсан мана хăй унта ашшĕ-амăшĕсенчен чурасемпе хĕрарăмсем туянса килни çинчен каласа пачĕ, лешсен хăйсен патшин нушине саплаштарма укçа кирлĕ пулнипе ачисене сутса яма тивнĕ пулать.

1302-1303 çулсенче Ылтăн Уртара выçлăх алхаснă. Çав вăхăтра ашшĕ-амăшĕ ачисене, упăшкисем арăмĕсене чуралăха сутни çинчен Египет çынни эль-Макризи тата Сири çынни Бедреддин Элайни çырса хăварнă. Паллах, чăвашсем те çак шăпаран пăрăнайман.

Шел, Ибн эль-Асир летописĕнче хайхи 800 чăвашăн малашнехи шăпи çинчен нимĕн те каламан. Пирĕншĕн халĕ ун хайлавĕнче урăххи хаклăрах – чăваш хамăр историри пăлхарлăх тапхăрĕнче те тĕнчене хăй ячĕпех тухнă. Ку вара мĕне те пулин пĕлтеретех.



Чувашский национальный праздник «Акатуй» в г. Ульяновск 2013 г.

Ч-47561

Национальная библиотека



Чувашский национальный праздник «Акатуй» в г. Ульяновск 2013 г.



Дуэт чувашского национального словесного фольклора на «Акатуйе»

Тĕнче шайне тухаççĕ

Шупашкарта чăваш халăх ăслăлăхĕпе искусствин академийĕн отчетпа суйлав пухăвĕ иртрĕ. Чăваш Республикинчен, Чулхуларан, Ульяновскран, Хусантан, Самартан тата Ĕпхӳрен килсе çитнĕ 150 делегат халăх академийĕн отчетне сӳтсе яврĕç тата президиумăн çĕнĕ йышне суйлрĕç. Пухура наци культурине аталанатарас тата наци ăнланăвне ӳстерес ĕçсенче хастартарах пулнисене медальсемпе Хисеплĕ хутсем парса чысларĕç. Чăваш халăх академийĕн президенчĕ пулма пĕр саслăн пулса Е.Е. Ерагина суйларĕç. Виçĕ доктор тата ăслăлăхăн çичĕ кандидачĕ академин тĕп членĕ пулма тивĕçрĕç.

Тĕнче шайĕнчи академи (МАБИК, Болгари) членĕсен йышне чăваш халăх ăслăлăхĕпе искусствин академийĕн тĕп членĕсене – Е.Е. Ерагина, В.П. Станьяла, И.П. Дубанова, П.В. Сымкина тата Ульяновск таврапĕлӳçисене Н.Н. Кирюшина илчĕç. Чăваш халăх ăслăлăхĕпе искусствин академийĕн çумĕнче тĕнче шайĕнчи çыхăнусен уйрăмне йĕркелесе ярса ăна ертсе пыма Чăваш Республикин культура тава тивĕçлĕ ĕçченне Николай Кондрашкина шанчĕç. Пуху ĕçне Ульяновскран кайнă виçĕ чăваш делегатĕсем – И.М. Кирпичников, Н.Н. Кирюшин тата Н.Г. Кондрашкин хутшăнчĕç.



Народные академики - Н Кондрашкин, П Сымкин и А Юман.



Общеболгарский национальный конгресс, г. София (Болгария) 2014 г.



Болгарская поэтесса Т. Борисова и чувашская: Л. Иванова (Шурсал)



Чувашские краеведы на экскурсии:
Вход в музей – заповедник Билярск 2012 г

АСЛĂ ПӲЛЕР

Кăçалхи çулçӳревре эпĕ ывăлпа авалхи Аслă Пӳлер (Билярск) хулине çитсе куртăм.

Ăна 922 çулта туса лартнă, 1236 çулта Бабый хан ăна аркатнă. Хула тикĕс выpăнта вырнаçнă. Ун çумĕпех Кĕçĕн Çарăмсан шывĕ юхса иртет. Хула тăватă пайран тăнă: цитадель, шалти, тулти хуласем тата хула хĕрри. Хула лаптăкĕ пĕтĕмĕшле 6202000 тăваткал метр йышăннă, укрепленисĕр—4901000 тăватал метр, хула хĕрри – 8000000 тăваткал метр. Шалти хулин укрепленийĕ икĕ йĕрлĕ пулнă, вăрăмăшĕ—4800 метр, туса пĕтермен валĕ – 5400 метр. Валсене тунă чух Билярка тата Елшанка юханшыв юпписене усса кĕртнĕ. Тулти валăн вăрăмăшĕ – 16200 метр пулнă, лаптăкĕ – 4896000 тăваткал метр, çӳллĕшĕ—4-5 метр, вăрăмĕшĕ – 15-18, хулăнăшĕ – 2,5-3 метр.

Халĕ Пӳлерте музей пур. Историпе археологи музейне 1978 çулта уçнă. Вăл кирпĕчрен, икĕ хутлă. Фондĕнче 7 500 япала упранать. Вăл шутра тăмран тунă кăкшăмсем, пăхăр тарасасем, гирĕсем, сăнăсем, хĕрарăмсен янтарьтен ăсталанă капăрлăхĕсем, шăмăран, ылтăн-пăхăртан тунă шăрçасемпе хăлха çаккисем, кĕнчелесем. Хуларан виçĕ çухрăмра таса çăлкуç тапса тăрать. Кунта чăвашсемпе тутарсем, мишерсемпе вырăссем, ирçесем пуç тайма çӳреççĕ.

Унта 444 картлашкапа улăхмалла. Çӳлте – ту тăрринче -- çӳллĕ монумент вырнаçнă. Хура чуллă ту тăрринче кĕлĕ вырăнĕ пур. Йĕри-тавра пысăк тĕмĕсем сыхланса юлнă. Картлашкапа улăхнă тĕлте 11 пысăк шăтăк. Хаяр Иван патша вăхăтĕнче çакăнта мишерсене тĕне кĕртнĕ теççĕ. Çавăнпа ку тăрăхра тĕне кĕнĕ мишерсем нумай.

Пӳлертен инçех мар тăватă хула сарăлса ларать: Горкинское, Балынгузкое, Торецкое тата Николаево-Баранское.

XIV-мĕш ĕмĕрте Балынгузкое хулари çӳллĕ ту тăрринче мавзолей пулнă. Халĕ унта валсем çеç тăрса юлнă.

Эпĕ вулакансене çак сăваплă вырăнсене çитсе курма сĕнесшĕн. Çитес вăхăтра Сувар хулине кайса курас кăмăлăм пур.



Николай Кирюшин в Музее Биляр у бюста Алмушу.



У «Черного камня», Билярск. 2013 г.



Памятник Ермаку в г Тобольск 2013 г.

ЧĂВАШ СĂМСАХĔ

Тобольск хула ҫывăхĕнче Чăваш сăмсахĕ (мыс) пур. Ун пирки эпĕ пĕр вунă ҫул каяллах илтнĕччĕ. Кăҫалхи утă уйăхĕнче ҫак вырăна ҫитсе килтĕм.

Чăваш сăмсахĕ Иртыша Тобол юхан шывĕ юхса кĕнĕ тĕлте мăнаçлăн çĕкленсе ларать. Унăн çыранĕ питĕ чăнкă. Ку тăрăхра халĕ те чăваш ялĕсем сыхланса юлнă: Подчуваш, Панин Бугор, Троицкий Мыс, Александровка.

Чăваш сăмсахĕ çинче археологсем 15 пысăк тĕмĕ (курган) тупнă. Крепоçсен хушши 20-36 метр, тарăнăшĕ 3-4 метр. Тĕмĕ çуллĕшĕ çĕр питĕнчен 2 метр çуллĕрех, сарлакăшĕ – 5-6 метр.

Археологсем кунта нумай япала чавса кăлараççĕ: чӳлмек, чашăксем, ал ĕç хатĕрсем, савăт-сапа, сăнăсемпе хĕçсем тат ытти те. 1953 çулта В.Н. Чернецов тата В.И. Мошинский археологсем çирĕплетнĕ тăрăх, пирĕн эрăччен 1 пин çул маларах кунта угро-савирсем пурăннă.

Вилнисене пытарас умĕн çунтарнă. Тобольскра чăвашсен тата тутарсен масарĕсем пур. Тобольск хули ту çинче çав тери илемлĕн курăнса ларать. Кремльтен инçех мар Ермак сачĕ пур, ун варринче унăн палăкĕ.

Ермак çинчен эпир истори предмечĕ тăрăх пĕлетпĕр. Вăл вырăс çĕрĕсене тăшманран сахал мар хӳтĕленĕ. 1581 çулхи юпа уйăхĕн 23-мĕшĕнче Ермак Чăваш сăмсахĕ çинче Кугум ханпа хаяр çапăçнă.

Чăваш сăмсахĕ тата тепĕр енĕпе паллă. 13-мĕш ĕмĕрте Урал тăвĕсем хушшинче Пачман ятлă çар пуçĕпе унăн арăмĕ Ылтăнчеч монгол-тутарсемпе çапăçса пуçĕсене хунă. Юлнă çарне Чăваш Паттăрĕ ятлă хастар хăй çине илет. Çирĕм çула яхăн çапăçать вăл тăшмансемпе. Пĕр хаяр çапăçура пуçне хурать.

Ку вырăнсене чăвашсен паллă çыравçи Юхма Мишши тата хисеплĕ таврапĕлӳçĕ, педагог Виталий Станьял та çитсе курнă. Юхма Мишшине çак тапхăрти пулăмсем çинчен манси халăх таврапĕлӳçи Юван Шестаков тата мишер таврапĕлӳçи М.П. Ильясов тĕплĕн каласа панă.

Юхма Мишши кăçал Чăваш Паттăр çар пуçĕ çинчен кĕнеке кăларчĕ. Н.Карамзинăн «История Российского государства» кĕнекинче те Чăваш сăмсахĕ пирки асăнса хăварни пур.

Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕренекенсене Чăваш сăмсахĕ çинчен каласа пани паллă. Каярах ун пирки темшĕн вĕрентме чарнă.

«Сибирские летописи» сборникра чăваш топонимĕсем 44 хут тĕл пулаççĕ: Чувашье, Чувашево, Чувашский Мыс, Чувашего гора, Чувашские города, городок Чуваши, Чувашский град, Чувашино тата ытти те.





Чувашский краевед Николай Кирюшин у Чувашской горы 2013



Вид на Тобольский кремль с Чувашской горы



Чувашская гора 2913 г





Тобольский кремл. 2011 г.

Разгром на берегах Волги

Немного пояснительной информации от редакции и составителя книги. В 1376 году верховный правитель **Золотой Орды** хан Урус отправил своё войско на Мангышлак, где его наместник Туй-Ходжа отказался признавать верховную власть.

Более 600 лет назад на Средней Волге произошла жестокая сеча между войсками хана Золотой Орды Тохтамыша и эмира Тамерлана. Поражение, которое потерпел Тохтамыш, заставило его фактически отдать свои владения Железному хромцу. От этого поражения Золотая Орда так и не оправилась — процесс её разрушения было уже не остановить.



Тамерлан разбил войско Золотой Орды, мстя за измену

С конца 13-го века почти вся территория Среднего и Нижнего Поволжья входила в состав Золотой Орды - феодального государства, образовавшегося в результате завоевательных походов монголо-татарских ханов. Однако уже вскоре Орда начала распадаться. Одной из причин этого стали междоусобные войны правящих кланов.

Были кровопролитные бои на Волге Тамерлана с Тохтамышем в 1392 г. Вот об этом дальше описывает в своей статье чувашский краевед Н.Н. Кирюшин.

Атăл тăрăхĕнчи çапăçу

Вăтам ĕмĕрсенче Тăхтамăш ханпа Тамерланăн (уксах Тимур) çарĕсем хушшинче пысăк çапăçу пулса иртнĕ. Димитровград хулинче пурăнакан тавралăхçĕ, Раççей Писательсен союзĕн членĕ Феликс Касимов каланă тăрăх, çак çапăçу 1391 çулсенче хальхи Димитровградран 50 çухрăмра пулнă.

1380 çулта пулса иртнĕ Куликово çапăçăвĕпех монгол пусмăрĕ вĕçленмен. Тепрĕ икĕ çултан Тăхтамăш «чăн хуçа» кам икенне кăтартнă—Мускав хулине çунтарса аркатнă. Тăхтамăша Чингисхан мухтавĕ канăç паман (вăл унăн йăхĕнченех пулнă). Тамерлан, хан титулне тивĕçейменскер, хăйне эмир вырăнне хурса Самаркандра хуçаланма тытăннă, унпа пĕрлех Бухарапа Хорезма çаратнă.

Тамерлан (эмир) 1391 çулта тавăрма шут татать. Июнь уйăхĕн 18-мĕшĕнче икçĕр пинлĕ икĕ çар Кондурче текен шыв хĕрринче тĕл пулать. Йышĕпе вăл Куликово çапăçăвĕнчен икĕ хут пысăкрах пулнă, виçĕ куна тăсăлнă.

Тăхтамăш монголсен çар мелĕпе усă курса çĕнтерессинчен пĕр утăм çеç пулнă, анчах Тамерлан чеелĕхпе усă курса (Куликово çапăçăвĕнче Дмитрий Донской тĕслĕхĕпе) çĕнĕ вăйсем хушать. Виçĕ кун хушшинче Тамерлан Тăхтамăша тăпрен аркатать, юлашки салтакĕсене Атăла пăрахса путарать. Тăхтамăш тарма ĕлкĕрет, вăл Литвара çăлăнăç тупать. Мускавшăн ку аван пулнă. Çакă Ылтăн Уртана саланма, Раççей çĕрне пусмăртан хăтарма пулăшнă.

Çĕнтерӳçĕсем Атăл хĕрринче лагерь йĕркелесе пĕр уйăх каннă: ĕçнĕ-çинĕ, савăннă.

600 çул каялла историри пулăмсене Димитровград çынни Феликс Касимов поэт çырса кăтартать. Çĕнтерӳ тата кану вăхăчĕ Самар Луки тата Жигули тăрăхĕсенче пулса иртнĕ.

Вăтам ĕмĕрте пурăннă авторсем те çапăçусем çак вырăнсенче пулса иртнине çирĕплетеççĕ. Вĕсем каланă тăрăх, Тамерлан Уру-Тюпа текен чечеклĕ çаран çинче каннă, тенĕ. «Уру-тюпа» е «уртюбе» тени туллă утрав тенине пĕлтерет (вăл Атăл çыранĕсене сăнарланă). Çав «утрав» (тĕрĕсрех --çурма утрав Атăл çыранĕсене пиçиххи пек явкалать) шăпах Самар Луки пулать те.

Вырăнти ту ячĕсем: «Царев курган» , «Царевница» -- çакна çирĕплетеççĕ. Кунта паян та пысăк çарпа çӳренĕ темĕнле «патша» пирки халап çӳрет. Гипотеза авторĕ ĕненмеле тĕслĕхсем тата та илсе кăтарать. Тен, малашне археологсем çав вырăнсене тĕпчесе çапăçуран юлнă япаласем тупсан тата ĕненмеллерех пулĕ.

Тамерлан

В 1395 году Тамерлан, шедший походом на Русь, прошёл Рязанскую область и взял город Елец, в том же году Елец был разорён войсками Тамерлана, а князь был пленён, после Тамерлан двинулся в сторону Москвы, но неожиданно развернулся и ушёл 26 августа обратно. Согласно церковному преданию, именно в то время москвичи встречали чтимую Владимирскую икону Божией Матери, перенесенную в Москву для защиты её от завоевателя. В день встречи образа Тамерлану во сне, согласно летописи, явилась Богородица и велела ему немедленно уйти из пределов Руси. На месте встречи Владимирской иконы Божией Матери был основан Сретенский монастырь. До Москвы Тамерлан не дошёл, его армия прошла по Дону и взяла полон





Тамерлан (Тимур; 9 апреля 1336, с. Ходжа-Илгар, совр. Узбекистан — 18 февраля 1405, Отрар, совр. Казахстан; чагатайское (Temur, Temor) — "железо") — среднеазиатский завоеватель, сыгравший существенную роль в истории Средней, Южной и Западной Азии, а также Кавказа, Поволжья и Руси. Выдающийся полководец, эмир (с 1370 года). Основатель империи и династии тимуридов, со столицей в Самарканде. Предок Бабура основоположника Империи Великих Моголов в Индии. Благодаря усилиям именно этого человека, в результате почти полного истребления войска Золотой Орды под предводительством хана Тохтамыша на Днепре и разрушения Тамерланом столицы Золотой Орды, стало возможным освобождение от монголотатарского ига на Руси. *Информация от консультанта Н. Кондр.*



Музей в г Болгар 2014 г



Реконструкция древней истории народов Волжской Болгарии



Укрепительные рвы древней крепости Сарай-Батый



Следы былых сражений

Вуниккĕмĕш ĕмĕрте хăнара пултăм

Атăл тăрăхĕнче Ылтăн Урта пуçлăхĕсен пурĕ виçĕ крепость-хула пулнă теççĕ.

Пĕрремĕш крепоçра – Волгоград облаçĕнчи Сарă Берке текен ялта -- Çĕнтерӳ уявĕ кунĕ пултăм. Ял пуçлăхне курса калаçма май пулмарĕ, ял историйĕпе ялти вулавăш ĕçченĕ Т.А. Андренашенко паллаштарчĕ. Вулавăшра паян музей пур. Мĕн кăна çук кунта: ĕлĕкхи укçасем, кăкшăм-савăт тавраш, хулканпа (щит) сăнăсем, хĕçсем, тимĕр шлемсемпе лашасене илемлетекен япаласем, тата ытти те. Çакăн пек япаласене эпĕ Мускаври истори музейĕнче курнăччĕ.

Кайран тепĕр юлташпа крепость пулнă вырăнсене (хире) кайрăмăр. Унта халĕ те икшер метр çӳллĕш валсем çĕкленсе лараççĕ, авалхи кирпĕч ванчăкĕсем выртаççĕ. Кирпĕчсем хальхи пек мар, çинçерех те вăрăмрах. Ялти ача-пăча çакăнта чаваланма юратать: укçа, ылтăн шырать. Мана пĕри пĕр кĕмĕл тата икĕ пăхăр укçа ахалех пачĕ. Вĕсем ăна укçалла сутаççĕ иккен.

Ялти пĕр пуянăн çуртĕнче Чернышевский революционера Мускава илсе каяс умĕн виçĕ кун тытнă терĕç.

Сарай-Берке çинчен тата кăсăклă япала пĕлтĕм: 1975 çулта çак тĕле метеорит ӳкнĕ. Унăн виçи 1324 килограмм, чи пысăк чулĕ 283 килограмм тайнă. Мана пĕр катăкне туянма сĕнчĕç. Пĕр грамĕ 50 доллар тăрать. Манăн ун чухлĕ укçа çук терĕм.

Кăнтăр хыççăн сывпуллашса Волгограда тухса кайрăм. Каçхине Волгоград-Аçтăрхан пуйăс çине лартăм. Манăн Хазарсен крепоçне – Городище-Итиль текен вырăна -- çитмелле. Вăл Аçтăрхантан 15 çухрăм çӳллĕрех, Долгий текен утрав çинче вырнаçнă. Аçтăрхантан газельпе ларса тухрăм. Рассвет текен яла анса юлтăм. Унта Атăл урлă поромпа каçмалла. Ирхи порома ĕлкĕреймерĕм, каçчен кĕтме вăхăт пулмарĕ, Аçтăрхана таврăнма тӳр килчĕ. Пăртак хула курса çӳренĕ хыççăн Аçтăрхан-Харабали автобус çине ларса виççĕмĕш крепоçе – Сарай Батый текен вырăна – васкарăм. Ялтан инçех мар анса юлтăм. Автобуссем чарăнакан вырăнта «Сарай-Батый. Основан 1242 году» тесе çырса хунă.

Вăл Ахтуба юхан шыв хĕрринче вырнаçнă, 10-15 тăваткал çухрăм çăр лаптăкне йышăнать. Хирте тимĕртен тунă тăватă стела ларать. Юписем çине «Городище Сарай-Батый 13 века. Охраняется государством. Копать нельзя» тесе çырни пур. Кунта вырăссем, мишерсем, казахсем, кăркăссем, нимĕçсем тата тăватă чăваш çемйи пурăнать терĕç. Чăвашĕсем тăван чĕлхепе калаçмаççĕ. Кунта та ача-пăча укçа тавраш шырать. Мана пĕр кĕмĕл укçа парнелерĕç.

Эпĕ пыриччен пĕр эрне маларах Мускавран археологсем килнĕ пулнă. Вĕсем склеп (чулран тунă виле шăтăкĕ) тупнă, калле май хупласа хăварнă. Тепĕр çул çак хирте музей тума палăртнă.

Ялта пĕри çавăн пек склепа тĕп сакай выраннe хурса усă курать терĕç. Кăсăкланса кайсах куртăм. Ăна хĕрлĕ кирпĕчрен купаланă. Диаметрĕ –5, çӳллĕшĕ – 2,5 метр. Вăл тăватă чӳречеллĕ, пĕр алăклă. Эпĕ ăна анса ӳкерсе илтĕм. Кил хуçине Виктор Ляпин тесе чĕнеççĕ (1946 çулхи). Вăл çак склепа укçалла кăтартать. Мукавран килнисенчен – 300, манран 50 тенкĕ çеç илчĕ.

Çапла эпĕ 12-мĕш ĕмĕрте пулса куртăм.



Архиерейская башня Астаъханской крепости. (С интерн.)



На празднике чувашской культуры посвященной Магницкому

ĂСЧАХЛ АСĂНСА

Пуш уйăхĕн 15-мĕшĕнче паллă ăсчах, фольклорист, этнограф Василий Константинович Магницкий çуралнăранпа 175 çул çитрĕ. Çав ятпа Чăваш халăх ăслăлăх тата ӳнер академин президенчĕ Евгений Ерагин конференци йĕркелерĕ. Вăл Етĕрне районĕнчи Советское ялĕнче иртрĕ.

Василий Магницкий 1839 çулхи пуш уйăхĕнче Етĕрне районне кĕрекен Чирекасси ялĕнче çуралнă. Унăн ашшĕ пупра ĕçленĕ. Василий Магницкий чăваш халăхне çутта кăларас ĕçре нумай вăй хунă, Иван Яковлевпа пĕр шухăшлă пулнă. Хусан уесĕнчи вĕренӳ тытăмĕнче ĕçленĕ чух çулсерен икшер-виçшер шкул уçнă. Унăн ĕçĕсем нумай хаçатра пичетленнĕ.

Конференци умĕн Магницкие асăнса кĕлĕ ирттерчĕç. Кайран унăн вилтăпри çине кайса чечексем хутăмăр. Тăпри çинче унăн палăкĕ ларать.

Конференцире пурĕ 24 ăсчах тухса калаçрĕç. Шупашкартан чылайăн килсе çитнĕччĕ. Чĕмпĕртен эпир Николай Казаков ăсчахпа кайрăмăр, пире те сăмах пачĕç. Эпĕ хам çулçӳревсем çинчен каласа патăм, сăн ӳкерчĕксемпе çирĕплетрĕм. Николай Александрович Василий Магницкин таврапĕлӳ ĕçĕсем çинче чарăнса тăчĕ.

Хусантан паллă ăсчахăн кĕçĕн мăнукĕ килсе çитнĕччĕ. вăл мăн аслашшĕ çинчен нумай çĕннине пĕлтерчĕ.





Чувашские краеведы на вечере посвященной 175 летнему юбилею Магницкого в с. Советское Ядринского района ЧР. 2013 г.



□Тăхăрьял□кĕнеке авторне палăк

Нарăсăн 2-мĕшĕнче Тутарстанти Пăва районне кĕрекен Элшелĕнче □Тăхăрьял□ кĕнеке авторне Григорий Тимофеевич Тимофеева асăнса бюст уçрĕç. Авторĕ – Н.Г. Кондрашкин скульптор, писалеь тата академик.

Григорий Тимофеев 1887 çулхи кăрлачăн 27-мĕшĕнче (çĕнĕ стильпе нарăсăн 2-мĕшĕнче) Чăваш Енри Куславкка районĕнчи Тĕрлемес ялĕнче хресчен кил-йышĕнче çуралнă. И.Я.Яковлев шкулĕнчен вĕренсе тухсан 1896-1908 çулсенче Элшел шкулĕнче вĕрентнĕ.1915 çулччен пуп тивĕçне пурнăçланă. Элшел хĕрĕпе Дарья Никифоровнапа çемье чăмăртаса вĕсем 12 ача çуратнă. Улттăшĕ çамрăклах вилнĕ.

Тăхăрьял историне çырма вăл шкулта ĕçленĕ вăхăтра тытăнать. Ал çырăвне Н.И. Ашмарина кăтартать. Профессор сĕнĕвĕсене шута илсе кĕнекене çĕнĕрен майлаштарса çырать. Ун хыççăн тĕпчевçĕсене И.И. Яковлева тата Н.В. Никольские паллашма парать. Кĕнекене кăларнă хыççăн аван пурнăç шыраса Çĕпĕре, Томск кĕпĕрнинчи Щегловск уесĕнчи (хальхи Кемĕр облаçĕ) Топки ялне куçса каять.1923 çулччен Томск кĕпĕрнинче учительте ĕçленĕ хыççăн Элшелне тавăрнать. Каллех пупра ĕçлеме тытăнать. Икĕ çултан Шупашкара кайса архива вырнаçать. Анчах

темшĕн ăна каллех чунĕ аякка туртать. Вăл каллех Çĕпĕре, Щегловск хулине (хальхи Кĕмĕр) тухса каять. Шкулсенче ĕçлет. Каярахпа Çĕнĕ Кузнецк хулине куçать. 1932 çулта Ăремпур кĕпĕрнинчи Абдулино районĕнчи Анат Курмей ялĕнче пурăнма пуçлать. 1937 çулхи юпа уйăхĕн 9-мĕшĕнче ăна "ырă çынсен" элекĕпе район прокуратури "халăх тăшманĕ" тесе арестлеççĕ. Тепĕр эрнерен çĕрле 24 сехетре персе вĕлереççĕ.

Палăк уçнă самант

Палăк уçнă çĕре хаклă хăнасем килсе çитнĕччĕ: Чăваш Наци Конгресĕн президенчĕ Г. Архипов, Пăва район пуçлăхĕ В. Абузяров, "Тасма" фирмăн тĕп директорĕ В. Серебряков, тăхăр ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем тата поэтсем, çыравçăсем, таврапĕлӳçĕсем. Чĕмпĕртен И.Я. Яковлев ячĕллĕ çутĕç обществин ертӳçи А.Мордовкин, чăваш таврапĕлӳçисен ертӳçи Н.Казаков, хисеплĕ таврапĕлӳçĕ И.Кирпичников пулчĕç. Мероприятие шкул директорĕ В. Афанасьев ертсе пычĕ.

Килнĕ хăнасем пухăннисем умĕнче тухса калаçрĕç. "Тăхăрьял" кĕнекепе унăн авторĕ çинчен каласа пачĕç. Палăка ăсталакан та ырă сăмахсене тивĕçрĕ.

Мероприятие вырăнти артистсем юрă-ташăпа илемлетрĕç.



Торжественное открытие памятника Григорию Тимофееву



Книга «Тахарьял» - достояние чувашской национальной культуры





Главный вход в крепость Белгород – Днестровский

Аккерман крепоçне çитсе куртăм

Çу кунĕсенче эпĕ Белгород-Днестровский хулинчи Аккерман крепоçне çитсе куртăм. Мĕн чухлĕ курса тĕлĕнмелли кунта! Вулакансене эпĕ кĕскен унăн историйĕпе паллаштарасшăн.

2500 çул хушшинче Белгород-Днестровский хули нумай тӳссе ирттернĕ. Унăн ячĕ темиçе хут та улшăннă. Истрийĕ пирĕн эрăччен VI ĕмĕрĕн вĕçĕнчех тытăннă. Милета текен хула çыннисем Днестр шывĕн хĕвеланăç енне Офису-Тиру хулине никĕсленĕ. Çак хулан ванчăкĕсем хальхи Белгород-Днестровский историпе культура вырăнĕсем пулса тăраççĕ. Тиру вырăнне чи малтан 1900 çулта чавса шырама тытăннă. Кунта пурăнмалли çуртсем, хӳтĕленмелли сооруженисем, тăмран, тимĕртен тунă япаласем, укçа таврашне тупнă. Çакăнтан Тиру хули суту-илӳпе çӳрекенсен çулĕ çинче ларни палăрнă. Хулана гет, гонн вăрă-хурахĕсем тапăнни палăрнă. Пирĕн эрăччен пĕрремĕш ĕмĕрсенче хула Рим империне кĕнĕ, ăна Албă-Юлия тенĕ. XII ĕмĕрсенче Белгород Галицк-Волынск княжествине кĕнĕ. 1214 çулта Венгр королевстви йышăнăвĕпе хула Фагер-Вар-Половцы ят илет. Итали халăхĕ ăна – Монкастро, грексем –Аспро-Кастро, арабсем -- Акджа-Кермен, нимĕçсем – Вайсенберг тенĕ.



Башни крепости Белгород – Днестровский,
Одесская область Украина.

XIV ӗмӗр вӗҫӗнче 20 пинлӗ хула Молдави патшалăхне кӗрсе Четая-Абэ ят илет. Вăл кăнтăр провинцисен тӗп порчӗ пулса тăрать.

Çак тӗлелле вăтам ӗмӗрӗн зодчествин мăнаçлă крепоçне пӗтереççӗ. Çакна тума политикăн тикӗс мар лару-тăру хистенӗ. Ăна 200 çула яхăн çӗкленӗ. Крепость туллă-сăртлă çӗрте Днестр шывӗ хӗрринче 9 гектар çӗр йышăнать. Стенасен вăрăмăшӗ –2,5 çухрăм, çӳллӗшӗ –5 метртан тытăнса 15 метра çитет, хулăнăшӗ – 1,5-5 метр. Крепоçăн çурçӗр енче –Днепр шывӗ, виçӗ енче – тарăн çырма. Малтанласа ăна шывпа тултарнă, вăл 20 метр тарăнăш, 14 метр сарлакăш пулнă. Крепоçра çӳллӗшӗпе те, сарлакăшӗпе те, пӗлтерӗшӗпе те расна 34 башня, вӗсенчен 12-шӗ – хăвăл. Унта хураллакансене пурăнма тата халăх тыррине усрама пӳлӗмсем вырнаçнă. Хăш-пӗр башньăн ячӗ пур: Овидий, Пушкин, Темница, Комендант тата Сокровищница. Хула енчен кӗмелли тӗп хапхана Килийские теççӗ. Тахçан кунта çӗкленекен кӗпер, икӗ хапха, икӗ шӗвӗр решетке, иккӗмӗш ярăмра -- вӗри шыв тата вӗри сăмала сапмалли шăтăк пулнă.

Крепоçа тăватă кил картине пайланă, кашнин тăшманран хӳтӗленмелли майсем пур. Вӗсен тӗп тивӗçӗ—хула халăхне тăшмансенчен хӳтӗлесси. Крепость ăшӗнчи чи авалхи, чи асамли – Цитадель крепость. Вăл мӗнпур енчен хӳтӗленме пултарнă. Унта тапăнса кӗме май пулман. Унăн айӗнче вăрттăн çулсем, пытанмалли вырăнсем пур. Вӗсене паян кун та йăлтах тӗпчесе пӗтереймеççӗ-ха.

XV ӗмӗрте Оттоман империйӗ хулана тата крепоçа çавăрса илме темиçе хут та хăтланса пăхать. Чи хаяр çапăçусем 1484 çулта пулса иртеççӗ. Турци султанӗ II Баязит 300 пинлӗ çарӗпе, Крым ханӗ Менгли-Гирей 50 пинлӗ çарӗпе тата 100 çар карапӗ çыран енчен те, шыв енчен те тапăнаççӗ. Тапăнакансем тарăн çырана тăпрана тултараççӗ, артиллери вырнаçтарма шăтăксем чаваççӗ, пур енчен те тапăнаççӗ. Крепость темле хирӗç тăрсан та тăшмана парăнать. Çапла 328 çул унта туркка патшалăхӗ хуçаланать. Вăл Аккерман (шурă чул) ята илнӗ. Аккерман крепоçне тапăнакансем тата пулнă: Е. Дашкевич, И.Покотило, Г. Лобода, С.Наливко, Сулима атаманӗсем, И. Серко, С.Пали полковник ертсе пынипе XVI-XVII ӗмӗрсенче Украина казакӗсем тапăннă.

1770 çулта И.А. Игельстрем генерал ертсе пынипе Раççей çарӗсем те тапăнса пăхаççӗ. 10 кун пынă çапăçусем хыççăн хулан пӗр пайӗ раççейсен аллине куçать.

1789 çулта крепоçа Г.Потемкин, Ф.Ушаков ертсе пыракан Хура тинӗс флочӗ тата М. Кутузов,М. Платов çарӗсем штурмлаççӗ.

1806 çулта Аккерман А.Е.Ришелье герцог аллине куçать. 1812 çулта тин Бухарестăн мирлӗ килӗшӗвӗпе Прут тата Днестр хушшинчи çӗрсем Раççей империне куçаççӗ.

1832 çулта крепость çар-хӳтĕлев сооруженийĕ тивĕçне пурнăçлама пăрахать, 1896 çулта историпе архитектура палăкĕ пулса тăрать.

11821 çулта хулана ссылкăна ăсатнă Пушкин пырса курнă. 1825 çулта А.Мацкевич, Л.Украинка хăй кунта пулни çинчен «Подорож до моря» сăввинче, А.Горький—«Старуха Изергиль» калавĕнче сăнарласа кăтартнă.

1918 тытăнса 1940 çулччен Аккерман Румыни королевствине кĕнĕ. 1941 çултан тытăнса1944 çулччен нимĕç фашисчĕсен аллинче пулнă. 1944 çулхи çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнче тин хула Белгород-Днестровский ята илнĕ.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнчен тытăнса кунта реставраци ĕçĕсем пыраççĕ. Украина Совминĕн Указĕ тăрăх, Белгород-Днестровский крепоçа архитектура палăкĕ пек сыхлаççĕ.

Крепость çулçӳревçĕсемпе таврапĕлӳçĕсемшĕн çеç мар, кино ӳкерекенсемшĕн те юратнă вырăн. Крепоçра «Отелло», «Корабли штурмуют бастионы», «Адмирал Ушаков», «Дорогой ценой», «Чертова дюжина», «Белеет парус одинокий», «Капитан немо», «Рыцарский замок», «Юность Петра», «20 лет спустя», «Исцеление любовью», «Обреченная стать звездой» кинофильмсене ӳкернĕ.

Градостроитель Симбирска Богдан Хитрово



Нумаях пулмасть эпĕ Богдан Матвеевич Хитрово выртакан Новодевичье мăнастирти Смоленск чиркĕвĕнче пултăм. Унта эпĕ Псков облаçĕнчи Чудское кӳлли хĕрринчен таврăннă чух çула май кĕрсе тухма шутларăм. Чĕмпĕр хулине никĕслекенĕн вилтăприне питĕ курас килчĕ. Путвалне анса сăн ӳкересшĕнччĕ. Анчах унта тăруках кĕртмеççĕ. Малтан секретарь патне кĕрсе заявлени çырмалла. Ăна пĕр талăк хушшинче тин пăхса тухаççĕ. Заявлени çыртăм, анчах пуйăса васканипе кĕрсе курмасăрах киле таврăнтăм. Тепĕр кунне мана шăнкăравларĕç, пырса курма чĕнчĕç. Шел, курасси пулмарĕ, анчах кĕскен вулакансене Богдан Хитрово çинчен каласа парасшăн.

Унăн йăх-тымарĕ Ордаранах тытăнать. Икĕ пĕртăван – Салахмир тата Еруган пурăннă. Еругана питĕ чее пулнипе «хитр» тесе чĕннĕ. Çавăнтан пулса кайнă та вĕсен Хитрово хушамачĕ. Еруган православи тĕнне йышăнса Андрей ята илет.

Богдан Матвеевич 1615 çулта çу уйăхĕн 6-мĕшĕнче Калуга çывăхĕнчи Григоровское ялĕнче çуралать. Ашшĕн – Матвей Елизаровичăн--пуян хуçалăх пулнă. Ку яла Хитровсене Василий патша уйăрса панă. Чиркĕвĕ халиччен те сыхланса юлнă. Ăна Богдан Хитрово 1660 çулта туса лартнă. Богданăн ашшĕ Алексей Михайлович патшапа пĕрле ӳснĕ пулнă, çавăнпа та патша хăй тантăшне нумай пулăшнă. Михаил патша вăхăтĕнче Богдан Хитровона çар пуçлăхне çирĕплетеççĕ. Богдан ертсе пынипе унăн çарĕ крепоçсем, чикĕсем палăртма тытăнать. Чикки Сăр шывĕ çывăхнех çитет. 1667 çулта Богдан Матвеевич Карсун крепоçне туса лартать. 1668 çулта Чĕмпĕр крепоçне тума тытăнать. Авăн уйăхĕнче вăл Мускава таврăнать. Çулталăка яхăн Челобитный приказĕн пуçлăхĕнче ĕçлет, ун хыççăн тата тăватă çул –Земски приказĕн пуçлăхĕнче. 1653 çулта ăна Польша элчине çирĕплетеççĕ. 1656 çулта Богдан Матвеевича Оружейничи чинне параççĕ. Çак ĕçре вăл мĕн виличченех вăй хурать.

Богдан Хитрово вĕреннĕ çын пулнă. Хăйĕн тăванне Федор Ртищева грекпа-латынь академине йĕркелесе яма пулăшнă. Хăй çуралнă ялĕнчи мăнастире вăл кĕнекесем, турăшсем, ылтăнран касса тунă алăк, кĕмĕлтен тунă савăт-сапа тата 5 чан парнеленĕ.

Унăн икĕ хĕр пулнă – Ирина тата Василиса. Ирина пĕчĕклех вилнĕ. Тепĕр кунне Богдан Матвеевичăн чĕри те тапма чарăннă. Иккĕшне те пĕр шăтăка пытараççĕ. Василиса ӳссен Иван Троекуров кнеçе кавча кайса икĕ ывăл (Иван тата Федор) çуратать. Федор амăшĕнчен çулталăкра юлать. 1740 çулта арçынсен енчен йăхĕ пĕтет. Хĕрарăмсен йĕрĕпе Лев Толстой писатель Богдан Хитровон çиччĕмĕш сыпăкри мăнукĕ пулать.

Карсун тата Чĕмпĕр крепоçĕсене никĕслекен Богдан Хитрово çар пуçне 2005 çулта Ульяновскра бронзăран 6,5 метр çӳллĕш палăк лартаççĕ. Авторĕ—Олег Клюев.



Открытие памятника Б. Хитрово. Фото Н. Кондр. Ульяновск 2008 г.

Список председателей губисполкома, облисполкома, Глав администраций Симбирской губернии, Ульяновской области

Ксандров Владимир Николаевич декабрь 1917-февраль 1918
Гимов Михаил Андреевич февраль 1918-март 1921
Самохвалов Александр Степанович март-август 1921
Рейн Рихард Петрович август 1921-июнь 1923
Теплов Николай Павлович июль 1923-март 1924
Хахарев Константин Григорьевич март 1924—октябрь 1925
Рыбочкин Иван Федорович январь 1926-июль 1928
Прокофьев Борис Григорьевич июль 1928-март 1930
Батраков Н.Н. март 1930 –июль 1930
Киселев Кузьма Венидиктович январь 1943-ноябрь 1943
Евсеев Евгений Александрович ноябрь 1943 –май 1945
Семикин Николай Васильевич май 1945 –август 1947
Флоентьев Леонид Яковлевич август 1947 –декабрь 1948
Чернышев Михаил Александрович январь1949-май 1952
Баранов Алексей Алексеевич май 1952 –май 1953
Алферов Павел Никитович май 1953 –январь 1954

Серегин Иван Михайлович	январь 1954-март 1961
Васильев Владимир Петрович	март 1961-декабрь 1962
Праведнов Виктор Федорович (промышленный облисполком)	декабрь 1962-ноябрь 1964
Кохов Николай Иванович (сельскохозяйственный облисполком)	декабрь 1962-ноябрь 1964
Васильев Владимир Петрович	декабрь 1964-апрель 1978
Кузьмичев Владимир Семенович	июль 1978-январь 1982
Большов Александр Михайлович	февраль 1982-март 1987
Горячев Юрий Фролович	март 1987-апрель 1990
Казаров Олег Владимирович	апрель 1990-январь 1992
Горячев Юрий Фролович	январь 1992-декабрь 2000
Шаманов Владимир Анатольевич	декабрь 2000-

Губернаторы Симбирской губернии, в дореволюционной России высшие правительственные чиновники в губернаторы назначались на должность императором. В Симбирской губернии должность губернатора просуществовала с 1796 по 1917 год.

Толстой Александр Васильевич (1796-1799)
Сушков Василий Михайлович (1799-1803)
Хованский Сергей Николаевич (1803-1808)
Долгоруков Алексей Алексеевич (1808-1814)
Дубенский Николай Порфирьевич (1814-1816)
Магницкий Михаил Леонтьевич (1816-1819)
Умянцев Андрей Петрович (1819-1822)
Лукъянович Андрей Федорович (1823-1826)
Жмакин Александр Яковлевич (1826-1831)
Загряжский Алексей Михайлович (1831-1835)
Жиркевич Иван Степанович (1835-1836)
Хомутов Иван Петрович (1836-1838)
Комаров Николай Иванович (1838-1840)
Гевлич Авксентий Павлович (1840-1843)
Булдаков Николай Михайлович (1843-1849)
Черкасский Петр Дмитриевич (1849-1852)
Бибиков Николай Петрович (1852-1857)
Извеков Егор Николаевич (1858-1861)

Анисимов Михаил Иванович (1861-1864)
Вешо Иван Осипович (1865-1866)
Орлов-Давыдов Владимир Владимирович (1866-1868)
Гойнинген-Гюне Александр Федорович (1869)
Еремеев Дмитрий Павлович (1869-1873)
Долгово-Сабуров Николай Павлович (1873-1886)
Теренин Михаил Николаевич (1887-1893)
Акинфов Владимир Николаевич (1893-1902)
Ржевский Сергей Дмитриевич (1902-1903)
Яшвиль Лев Владимирович (1904-1906)
Старынкевич Константин Сократович (1906)
Дубасов Дмитрий Николаевич (1906-1911)
Ключарев Александр Степанович (1911-1916)
Черкасский Михаил Алексеевич (1916-1917)



Реконструкция древней истории Волжской Болгарии.Условный ккараван арабского посольства Ибн Фадлана «встречает» болгаро-чувашский писалель и художник Николай Кондрашкин, Болгар 2014



В Новодевичьем монастыре покоится прах Б Хитрово



Дом чувашского космонавта № 2 Бударина поселок Кирья ЧР

Араб посольстви – Ульяновск çĕрĕ çинче

Кубрат кнеç вилнĕ хыççăн Аслă Пăлхар патшалăхĕ пайланнă. Çавна пула Çурçĕр Кавказра, Атăлçи тăрăхĕнче, Дунайра политикăпа экономика улшăнăвĕсем пулса иртнĕ.

660 çулта Кубратăн ывăлĕсем Аслă Пăлхар çĕршывĕнче ашшĕ вырăнне йышăнассишĕн çапăçма пуçланă. Тĕллевне пурнăçламасăр вĕсем хăйсене парăннă çарсене пухса тĕрлĕ еннелле тарнă. Кĕçĕн ывăлĕ Аспарух – Дунай леш енне кайса хальхи Пăлхар çĕршывне йĕркеленĕ. Кубратăн аслă ывăлĕ Кăтра хăйĕн çарне (200 пин пăлхар тата сăвар) Вăтам Атăл тăрăхне илсе кайнă, вăтам ывăлĕ Бат Боян Çурçĕр Кавказрах юлнă.

660-670 çулсенче пăлхар тата сăвар йăхĕсем Дон шывĕн пуçĕнчен Атăлăн сылтăм çыранĕпе Самар кукри еннелле куçнă, унтан вара Атăлăн икĕ енĕпе вырнаçса ларнă. Суварсемпе пăлхарсенчен нумайăшĕ вăтам Атăлпа Кама шывĕсем хушшинчи çĕр çинче тĕпленнĕ, Атăлçи Пăлхар çĕршывне никĕсленĕ.

Атăлçи тăрăхĕнчи халăхсем X ĕмĕрĕн пĕрремĕш çурринче Хазар каганачĕн пусмăрĕнче пулнă.

960 çулсенче хазар патши Иосиф хăйĕн патшалăхĕ пирки çапла çырать: «Эпĕ Итиль ятлă шыв хĕрринче пурăнатăп. Юханшыв хĕрринчи ялсемпе хуласенче тĕрлĕ халăхсем тĕпленнĕ: хăшĕсем çерем çинче, теприсем тавралла тăшманран сыхланма тĕреклетнĕ хуласенче ... Пурте вĕсем мана пăхăнаççĕ, куланай тӳлеççĕ».

Араб çулçӳревçи Ибн Фадлан та çакăн пиркиех пĕлтерет: «Славянсен (пăлхарсен) патши çине те хырçă (дань) хунă, вăл ăна хазарсен патшине тӳлет. Унăн патшалăхĕнчи кашни килрен – хура сăсар (соболь) тирĕ».

Хазар каганачĕпе хирĕç тăни X ĕмĕрте Атăлçи Пăлхар çĕршывне йĕркелеме май парать.

Никама пăхăнасшăн мар пулса пăлхар патши Алмуш Багдад халифачĕпе (мăсăльман çĕршывĕнчи патша) килĕшӳ тăвать. 921 çулхи çуркунне Багдад халивĕ Муктадир патне Алмуш посолсем ярать. Вĕсене Башту ывăлĕ Абдуллах ертсе пырать. Алмуш халифран хăйĕн пĕтĕм патшалăхĕнчи çынсене ислама вĕрентме, мечĕт туса пама, ун ячĕпе кафедра хăпартма (унта хутба лартса эрнекунхи кĕлĕсем ирттерме) пултаракан çынсене яма ыйтать. Çаплах Алмуш тăшмансенчен сыхланма крепость туса пама ыйтать.

Çакăн пек çыру илнĕ хыççăн 921çулхи çĕртмен 21-мĕшĕнче (мăсăльмансен çул шутлавĕпе – 11 сафара, хиджры 309 çул) Сусан ар-Раси (Рази) ертсе пыракан араб посолĕсем Багдадран (халĕ Ираккăн тĕп хули) çула тухаççĕ. Посольствăна секретарь майĕпе Ахмед Ибн Фадлан та кĕнĕ.

Ибн Фадлан –Х ĕмĕрĕн пĕрремĕш çулĕнчи араб çулçӳревçи тата писателĕ. Вăл Хĕвелтухăç Европăра пулса курнă. Ăна 904-905 çулсенче Египета çĕнсе илнĕ çар пуçлăхĕ Мухаммед ибн Сулейман хăй хӳтлĕхне илнĕ, ун патĕнче Ибн Фадлан аслă çыруçă-чиновник шутланса тăнă.

Ибн Фадлан хăйĕн çырăвĕсенче огузсен, пăшкăртсен, пăлхарсен, руссемпе хазарсен пурнăçне, политика хутшăнăвĕсене çырса кăтартнă. Çак çырусене арабпа перс тĕнчинче интересленсе вуланă.

Хĕвелтухăç çĕршывсенче ислам тĕнне сарнисĕр пуçне араб халифĕ çав патшалăхсенче политика енчен те хăй витĕмне ӳстерме тăрăшнă.

Атăлçи Пăлхар çĕршывĕсемпе пĕрле пулса суту-илӳ енчен хăйсене çăмăллăхсем кĕтнĕ.

Посольство çулĕ Кавказа кĕрекен хазар çĕрĕсенчен айккине пăрăнса иртнĕ. Вĕсем Рей, Нишапур урлă Бухарана (Узбекистан) кĕнĕ, унтан каялла Амударья шывĕ тăрăх аялалла кайнă, Хорезмăн тĕп хули Кяс патне çитнĕ. Ун хыççăн Дурджанире (Кивĕ Ургенч) хĕл каçнă, юлашкинчен çурçĕрелле, Атăл çыранĕсем хĕррине, пăлхарсен патшалăхне çитнĕ.

Хĕл каçнă хыççăн 922 çулхи пушăн 4-мĕшĕнче посольство çурçĕрелле, огузсен çĕршывне çул тытать. Багдадран посольствăна пĕрле тухнă «çамрăксем», саккуна тата ислам тĕнне вĕрентекенсем огузсен çĕршывне кĕме хăраса посольствăран тараççĕ. Çак самантран посольствăн ислам тĕнне сармаллипе пурнăçламалли мĕнпур ĕçĕ пĕр Ибн Фадлан çине тиенет.

Успорт урлă каçсан посольство 922 çулхи пушăн 20-мĕшĕнче огузсен (е гузсен) çĕршывне пырса çитет. Вĕсем хальхи Казахстанăн хĕвеланăç енче вырнаçнă. Паллă çынсенче чи хисепли Огуз çарĕн пуçлăхĕ Этрек пулнă. Вăл посольствăна ырă кăмăлпа кĕтсе илнĕ, анчах та ислам йышăнма сĕннине асăрханса йышăннă. Посольство каялла килне çул тытнă чухне кăна хурав пама шантарнă. Этрек çар пуçлăхĕсене пухнă, анчах вĕсем унта ислам ыйтăвне мар, посолсемпе малашне мĕнле пулмаллине, мĕн тумаллине сӳтсе явнă. Хăш-пĕр çар пуçлăхĕсем посолсене çурмаран касса пăрхма, теприсем ним юлми çаратма, виççĕмĕшĕсем вĕсене хазарсене парса хăйсен тыткăна лекнĕ ентешĕсене тавăрма сĕннĕ.

Çапла вара огузсен çĕршывĕнче посольствăна дипломати енчен пĕртте ăнман. Сывă та чĕрĕ юлса унтан тухса кайма пултарнишĕн савăнмалли кăна юлнă.

Хăйсене курайман пушкăртсен çĕрĕ витĕр тухса (пушкăртсене тĕл пуласран çынсем çӳремен çулпа кайнă) 922 çулхи çу уйăхĕн 12-мĕшĕнче халиф посольстви пăлхар патшалăхне Алмуш патне çитет.



Одна из самых красивых девушек Волжской Болгарии 2014г.

Ибн Фадланăн Вăтам Азири çулĕ пирки нумай пĕлетпĕр пулсан хальхи Ульяновск, Самар çĕрĕсемпе посольство мĕнле пынине пĕлместпĕр тесен те йăнăш мар. Çак çула палăртас тĕллевпе вырăс тата совет вăхăтĕнчи тĕпчевçĕсен ĕçĕсене пăхса тухрăм. В.И. Артьемевăн «Река Урал и путь Ибна Фадлана в пределах Ульяновского Заволжья» кĕнекипе, XIII ĕмĕрти араб географĕ тата энциклопедисчĕ Йакутым ар-Руми хатĕрленĕ карттипе тата географи словарĕпе (пĕрремĕш хут 1823 çулта Раççей академийĕ нимĕçле пичетлесе кăларнă), 1680 çулта Бахши Иман çырнă «Джагфар тарихы» (2001 çулта кĕнеке евĕрлĕ Пăлхар Республики кăларнă) документсемпе паллашнă хыççăн эпĕ çакăн пек пĕтĕмлетӳ турăм: Ибн Фадлан секретарь ертсе пыракан арабсен посольстви Самар облаçĕнчен Атăлçи пăлхарăн тĕп хулине Пăлхара кайнă чухне хальхи Ульяновск облаçĕн Атăлăн сулахай енчи çĕрĕсемпе иртнĕ. Чĕмпĕр (Сэмбэр) вăл вăхăтра Атăлçи Пăлхар патшалăхĕн хули шутланнă. Посольствăн секретарĕ тĕп хуларан аякрах вырнаçнă кун пек пысăк хулана кĕрсе курмасăр пултарайман.

Раççей географи обществин Ульяновскри уйрăмĕпе «Ульяновск—город новостей» информа агенстви, культура

еткерлĕхĕн комитечĕ ыйтăва туллин татса парассипе Ибн Фадлан çулĕпе экспедици йĕркелеме палăртнă.

Эп «Джагфар тарифы» авалхи пăлхарсен летописĕн пуххин карттипе усă курса араб посольстви 922 çулта Самар, Ульяновск облаçĕсенчен тата Тутарстан çĕрĕсемпе иртнĕ маршрута хатĕрлерĕм. Ибн Фадлан караванĕ Ăренпур тăрăхĕнчен тухса Самар облаçне çитнĕ, унтан çулĕ Ульяновск облаçĕпе çак çулпа иртнĕ: Джарамсан (Çарăмсан) юхан шывĕ, ун хĕрринчи Яна Ширдаг пĕчĕк ял (Никольское сали) урлă Чăваш тата Тутар Калмаюрĕсем патне çитнĕ, Кормок (Чартаклă поселокĕ), Уран (Урень), Майна юхан шывĕсем, Кивĕ Майна, Урамняк ялĕ (Красная река ял), Кандалка су (Кандалка юхан шыв), Уман (Утка) юхан шыв, малалла çул хальхи Тутарстан Республикин çĕрĕпе кайнă.

Араб посольстви çулçӳревре палăрнă тĕллевĕсене пурнăçлаймасть. Огузсем ислам йышăнмаççĕ, пăлхар патши Алмуш крепость тума укçа илейменнипе халифа шанма пăрахать, малтанхи пекех Вăтам Азипе тачă çыхăнăва сыхласа хăварать.

Авалхи картта

Пĕр тăван Пициганосен картти çинче Шупашкар пур-и?

Франческо тата Марко Пициганосем хатĕрленĕ картта – тинĕс карттисенчен чи пирвайхисенчен пĕри. Ăна 1375 çулта Каталон атласне кĕртнĕ карттăсем витĕм кӳни сисĕнет. Çав вăхăтра вĕсене чылай маларахри çулсенче (Х ĕмĕрсенчен тытăнса) хатĕрленисем çине таянса тунă. Пициганосен карттине пергамент çине ӳкернĕ, вăл Парма (Итали) библиотекинче упранать.

Атăл таврашĕнчи лаптăксенче Тверь хулине, кнеçлĕхĕн тĕп хулине –Чулхулана, ятсăр хулана (вырăнĕпе Шупашкарпа тӳр килет) Хусан ханлăхĕн (1338-1345 çулсенче цĕркеленнĕ) тĕп хулин ятне Хусана – палăртман, Боргара (1431çулта пĕтнĕ), Караболама, Самара, сулахай çыранта Йолахине, сылтăмра Логахине, Тарага, Танике (Танице?), Кабакона, Салнене, Кабанкăна, Тортанллие, Ылтăн Урман тĕп хулине Сарая, Чибикарине кăтартнă. Кама çывăхĕнче XIV ĕмĕр вĕçĕнче аракатнă Шокатин, Кар, Пашкерти, Корманаико хулисене палăртнă. Каталон атласĕн виççĕмĕш картти çинче те Шупашкар вырăнĕсенче ятсăр хулана ӳкернĕ.





Автор книги среди французских солдат на киносъемке...

БОРОДИНО хирĕнче пулса куртăм

Бородино хирĕнче çапăçу иртнĕренпе кăçал 194 çул çитрĕ. Историксем ăна улăпсен çапăçăвĕ тенĕ. Мĕншĕн тесен Наполеон çарĕнче 650 пин салатак çапăçнă, Кутузовăн –540 пин. Вĕсем иккĕшĕ те паттăр полководецсем. Наполеон Европăри пур патшалăха та пăхăнтарса тăнă. Португали, Германи, Австрали, Румыни, Польша, Испани, Швеци халăхне хăй енне çавăрнă. Кутузов вара ăсĕпе, чеелĕхĕпе уйрăлса тăнă.

Наполеонăн çарти ĕçĕ-хĕлĕ Тула крепоçне илнинчен тытăнать. Унщăн вăл бригада генералĕ ята тивĕçет.

1796-97 çулсенче унăн çарĕ Итали халăхне Австри пусмăрĕнчен хăтарать.

1805 çулта Аустерлиц хули çывăхĕнче австри-вырăс çарне, тепĕр çултан -- Пруссен мухтавлă çарне çĕмĕрсе Берлина илет.

1810 çулта Раççей çĕршывне тапăнма хатĕрленет. Мĕнпур вăйне: хĕç-пăшал, салтаксене пуçтарать. Çапăçу умĕн салтаксене çапла калать: «Раççей шăпине пирĕн татса памалла. Неман урлă каçса Раççей çĕрне вăрçăпа кĕрĕпĕр, Европа çĕршывĕсен ĕçне 50 çул хутшăнса тăракан Раççей çĕршывне тĕп тăвăпăр».

1812 çулхи çĕртме уйăхĕн 12-мĕшĕнче Неман шывĕ урлă виçĕ пантон кĕпер хывса каçаççĕ. Наполеон, Европа çĕршывĕсене çĕмĕрнĕ пек, Раççей çарне те чикĕ хĕрринче аркатса тăкма шутланă.

Вырăссен 1 тата 2-мĕш Хĕвеланăç çарĕсем Смоленск хули еннелле чакса пынă вăхăтра Петербургран васкаса М.И. Голенищев-Кутузов пулăшма килсе çитет. Вăл 67 çулта пулнă. Аллăра чух Кутузов полководец ята тивĕçнĕ.

Çарсемпе çывăхрах паллашнă хыççăн вăл çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче Бородино çывăхĕнчи аслă çул çинче çапăçăва кĕрет. Ун умĕн Кутузов çапăçу хирне Турă Амăш сăнĕпе, кĕлĕ юррисемпе тухса салтаксене пиллеме хушать.

Çапăçăва пурĕ 250 пин салтак кĕрет. Вырăссен çарĕ 8 çухрăма тăсăлнă, 3 çар корпусĕ ăста ертӳçĕсем хыççăн пынă.

Наполеон малтан вырăссен сулахай енне аркатма, кайран варрине татса кĕрсе Мускав юхан шывĕ патне хăваласа кайса тĕп тума шутланă. Анчах вырăссем тăшманăн виçĕ тапăнăвне те сирсе янă. Багратиона амантсан вырăссем ик-виçĕ хутчен тăшмана тапăнса французсен утлă çарне çапса аркатнă.

Çапăçусем тĕрлĕ вырăнсенче пынă. Бородино хирĕнче Раевский çарĕ хĕрӳ çапăçнă. Вăл 15 сехете пынă. Ир енне вырăссем Мускав еннелле чакаççĕ. Çарсене сыхласа хăварас тĕллевпе Кутузов Мускав хулине вăхăтлăха тăшмана хăварать. Пĕрремĕш Александр патшаран килĕшӳ тума ыйтать. Лешĕ килĕшĕве Парижра тăвăпăр тет.

Франци çарĕсене Малоярославец хули патĕнче çапса çĕмĕрсен вĕсĕне Раççей çĕрĕ çинчен хăвалама, унпа пĕрлех ытти халăхсене ирĕке кăларма тытăнаççĕ.

1913 çулта Наполеон çарне Лейпциг çывăхĕнче тĕппипех аркатаççĕ. 1914 çулхи март уйăхĕнче вырăссемпе Европа халăхĕсен çарĕсем Парижа кĕреççĕ. Çак çапăçусем хыççăн Европа çĕрĕ çинче пĕр ĕмĕр хушши урăх пысăк вăрçăсем пулмаççĕ.

Бородино хирĕнче

Раççей халăхĕ Бородино хирĕнчи çапăçура Наполеон çарĕсене аркатса хамăр çĕр çинчен хăваласа янăранпа кăçал 200 çул çитрĕ. Çапăçусем çурла уйăхĕн 26-мĕшĕнчен тытăнса авăн уйăхĕн 8-мĕшчен пынă. Çак паллă кун манăн та ку тăрăха кайса уява хутшăнас килчĕ.

Бородино хирĕнче эпĕ иккĕмĕш хут пулса куртăм. Пĕрремĕш хут пилĕк çул каялла –1812 çулхи вăрçă иртнĕренпе 165 çул çитнине паллă тунă çĕре кайнăччĕ. Питĕ çĕкленӳллĕ кăмăлпа таврăнтăм ун чух. Кăçалхи уяв тата чаплăрах пек туйăнчĕ. Сарлака лапама çĕршывăмăрăн тĕрлĕ кĕтесĕсенчен 200-250 çынна яхăн пуçтарăннă. Кунта Мускав хулинчен, облаçĕнчен, Тула, Рязань, Псков, Смоленск, Санкт-Петербург, Свердловск, Ростов, Волгоград хулисемпе облаçĕсенчен, Пушкăрт, Чăваш, Тутар Республикисенчен – мĕнпурĕ 180 автобуспа тата çăмăл машинасемпе (вĕсен шучĕ те çук) килсе çитнĕ. Ульяновск облаçĕнчен «Витязь», «Руль», «Вега» клубсем пынăччĕ.

Мускавран кашни сехетре электричка килсе тăчĕ. Уявра ют çĕршывсенчен 2 пине яхăн хăначчĕ: французсем, итальянецсем, нимĕçсем, поляксем, венгрсем, швейцарсем, шведсем, румынсем, австриецсем, Америкăпа Канадăран та пур терĕç.

Мероприяти икĕ сехете яхăн тăсăлчĕ. Çар çыннисем 200 çул каялла мĕнле тăхăннă, уява та çавăн йышши тумсемпе пынă. Тупăсемпе 300 хут печĕç. Бородино хирĕ çийĕн çăра тĕтĕм çĕкленчĕ.

Вунпилĕк сехетре РФ Президенчĕ Владимир Путин вертолетпа вĕçсе çитрĕ. Пире обелиск çывăхне ямарĕç. Унта хаклă хăнасене тата ют çĕршыв делегачĕсене кĕтсе илеççĕ терĕç. Бородино çывăхĕнчи çапăçусене Чĕмпĕр кĕпĕрнинчен пĕр батальон хутшăннине пĕлетĕп. Ахăртнех, çавăнта чăвашсем те пулнă... Шел, ăна никам та тĕпчемен.

Нумаях пулмасть вырăс халăхĕ Куликово хирĕнче (Тула облаçĕ) 1380 çулта могол-тутарсене çапса аркатни 625 çул çитнине анлăн паллă тунă. Историе юратнă май, эпĕ çак уява çитсе курма тахçанах ĕмĕтленсе пурăнтăм. Çăмăл машинапа ывăлăма та илсе каясшăнччĕ, халĕ çул çӳреме питĕ йывăр. Бензин хаклă пирки пуйăспа пĕлченех кайма тиврĕ. Челябинск-Мускав пуйăс мана Теплый Стан станцине çитерчĕ. Малалла автобуспа Шацк хулине çитрĕм. Унтан çăмăл машинапа Сарай район центрне, унтан – Скопин хулине. Горлово ялне КамАЗпа çитрĕм. Малалла асфальт çук, 5-6 çухрăм хир-вăрман урлă Черемунево ялне çитрĕм. Каç та пулса кайрĕ. Пĕр пĕлмен вырăн чуна шиклентерет. Яла кĕтĕм. Манăн ăçта-тăр çĕр каçмалли вырăн шырамалла вĕт-ха тата. Йĕтем çумĕпе иртнĕ чух хуралçине тĕл пултăм. Ăна та Николай тесе чĕнеççĕ иккен. Эпĕ ăна хам ăçтан, мĕнле тĕллевпе килнине каласа патăм. Çын нушине ăнланаканскер пулчĕ. Килне кайса апат-çимĕç илсе килчĕ. Çапла иксĕмĕр хурал çуртĕнче çĕр каçрăмăр. Нумайччен калаçса лартăмăр.

Тул çутăлинченех çĕнĕ юлташа тав турăм та çула тухрăм. Воронежа каякан «Газель» çине лартăм. Монастырщино ялĕ çумĕпе (унта Куликово хирĕнчи çапăçусем çинчен каласа паракан музей пур терĕç) иртсе кайрăмăр. Манăн часрах Куликово хирне çитмелле. Тепĕр пилĕк çухрăма яхăн кайсан çӳллĕ палăк курăнса кайрĕ. Ăна Дмитрий Донской ячĕпе лартнă. Унтан инçех мар – Сергий Радонежский ячĕпе лартнă калам çук илемлĕ чиркӳ вырнаçнă. Акă тинех – Куликово хирĕ. Унăн çаврăнăшĕ 13-15 çухрăма яхăн пулĕ. Инçех мар Дон шывĕ юхса выртать. Унта Непрядва текен пĕчĕк юхан шыв авкаланса юхса кĕрет.

Летопись тăрăх, 625 çул каялла çак хирте иртнĕ çапăçусене пурĕ (икĕ енчен те) 400 пине яхăн салак хутшăннă. Хĕвелтухăç енче пысăк сăрт пур. Унта Мамайăн ставки пулнă. Вăл çапăçусем мĕнле иртнине сăнаса тăнă. Вырăс салтакĕсем Дмитрий Донской ертсе пынипе тутар-монголсене авăнăн 8-мĕшĕнче çапса çĕмĕрнĕ. Хирте касса вакланă этем кĕлеткисем сапаланса выртнă. Юхан шывсем юнпа хĕрелнĕ. Вилесене виçĕ кун пуçтарма тивнĕ. Дмитрий кнеç виçĕ кун та виçĕ каç вилесем хушшинче çӳренĕ: христиансене тупса ытти вилесенчен уйрăм пытарма хушнă.

Çӳллĕ сăрт çинче 300000 шăтăк алтма хушнă. Вĕсен вилтăпри çине юманран Таса Турă Амăшĕ çуралнă ятпа чиркӳ лартнă. 1865-1884 çулсенче ун вырăнĕнче чулран çак ятпах çĕнĕ чиркӳ çĕкленсе ларнă. Уява çĕршывăн пур кĕтесĕнчен, пурĕ 25-30 пине яхăн çын (900 автобус, çăмăл машинасен шучĕ те çук) килсе çитнĕ.



И.Н. Кирюшин у памятника Дмитрию Донскому.

Сăн ӳкерчĕкре: Дмитрий Донскоя халаллана палăк умĕнче.

Эпĕ хамăр регионтан килнĕ машинасене шырарăм – тупаймарăм, апла çакăнта Чĕмпĕр тăрăхĕнчен эпĕ пĕччен пултăм пуль.

Ирхине вунă сехете Раççей тата Мускав Патриархĕ 2-мĕш Алексей килсе çитрĕ, служба ирттерчĕ. Тула облаçĕн кĕпĕрнаттăрне «Çĕршывшăн тунă ырă ĕçсемшĕн» 2-мĕш степеньлĕ медальпе наградăларĕ. Çывăхри мăнастирсенчен çынсем Крестный ходпа çуран килнĕ. Пермь хулинчен вăрăм çула июль уйăхĕн 21-мĕшĕнчех тухнă.

Çамрăк салтаксемпе милиционерсем çак сăваплă вырăнта тупа турĕç.

Уявра анлă ярмăркка йĕркеленĕ: кĕнекесемпе буклетсем, кăкăр çине çакмалли паллăсем тата нумай-нумай асăнмалăх тавар.

Мĕн курни-илтнине, ăшра мĕн туйнине веçех каласа пама май çук. Анчах çакăнта çитсе хам куçпа курни, сăваплă вырăнсене пуç тайни мĕне тăрать! Историе манмалла мар, унсăр пуласлăх çук. Вăл вăхăтсенче тăван çĕре хĕçпе, ухă-сăнăпа хŷтĕленĕ. Аслă вăрçăра тăшмансене хăвалама алла пăшал тытнă. Тăван çĕршывшăн юна, чуна шеллемен, пуç хунă. Эпир вара аслăран та аслă çĕршывăмăра – СССРа – мирлĕ вăхăтра салатса ятăмăр. Çаваншăн чун ыратать.



На Куликово поле

Бородино хиренче – уяв



Бородино хире Мускав областенчи Можайск районне керекен Бородино яле сывахенче вырнаснаЁ вал 50 таваткал сухрам сер лаптаке йышанатьё Кунта 1812 сулхи сурла уйахен 26-мешенче (киве стильпе аван уйахен 7-мешенче) вырассен тата французсен саресем хушшинче вайла сапасусем пулнаё Хирте вырнасна ялсен унчченхи ячесем паян кунччен сыхланса юлнаё

1941-1942 сулсенче Можайск сывахенче Мускава хутелекен сарсем танаё Бородино хиренче Кутузов палакеЁ 1812 сулхи отечествалла варса тата Асла варса паттаресене халлалана 40 ытла палакЁ таванла вил таприсем пурё Хир варринче – историпе сар музейен теп сурче вырнаснаё Архитектурапа мемориал комплексне ике манастир тата пер чирку илемлететё

Кунти сапусусем иртнеренпе 25 сул ситне теле (1837 султа) чи сулле выранта палак лартнаё Ун сине сапла сырса хуна, «Благодарное Отечество положившим живот на поле честиё Русских генералов, убитых – 3Ё раненных –12ё Воинов – до 15000 убитыми? до 30000 раненымиё Отступили с честьюЁ чтобы вернее победить»ё

2005 султанпа Бородино хиренче кашни сул сурла уйахен юлашки канмалли кунесенче сарпа истори тата самраксен «Братья» фестивалесем иртессеё

Бударин космонавтăн çĕршывĕнче

Çу уйăхĕн 12-мĕшĕнче эпĕ чăвашсен иккĕмĕш космонавчĕ Николай Михайлович Бударин çуралнă Киря ялĕ (Чăваш Республикинчи Улатăр районĕ) кайса килтĕм. Унăн аслашшĕ чăваш йăхĕнчен пулнă. Совет вăхăтĕнче вырăс тесе çыртарнă. Амăшĕ вырăс çынни пулнă, хушамачĕ -- Кокина (1921-1986). Вăл шăл тухтăрĕнче ĕçленĕ. Космонавтăн ашшĕ -- Михаил Романович -- вăрман хуçалăхĕн маçтăрĕнче вăй хунă. Киря поселокĕнче тăватă çул пурăннă хыççăн вĕсен çемйи Мускав облаçĕнчи Щелково хулине куçса каять. 1970 çулта шкул пĕтерсен Николай лаборантра ĕçлет. Кайран завода куçса наладчик, электрик, мотажник-испытатель тивĕçĕсене пурнăçлать.

1979 çулта вăл Мускаври каçхи авиаци институтне пĕтерет, инженер-механик специальноçне алла илет. 1971-73 çулсенче Чехословакире хĕсметре тăрать. Николай Бударин пĕрремĕш хут тĕнче уçлăхне «Союз ТМ-21» караппа 1995 çулхи утă уйăхĕн 17-мĕшĕнче борт-механик пулса вĕçнĕ. А.Соловьевпа космос уçлăхне тухса, унта 43 минут пулнă.

Иккĕмĕш хут вăл 1998 çулхи кăрачăн 29-мĕшĕнче вĕçсе улăхса космосра çурла уйăхĕччен пулать. Виççĕмĕш хут – 2002 çулхи чӳк уйăхĕн 24-мĕшĕнче МКС-6 караппа (командир пулса) вĕçсе кайса Çĕр çине 2003 çулхи çу уйăхĕн 4-мĕшĕнче тин таврăнать.

Николай Бударин – 1-мĕш класслă космонавт. Вăл Ылтăн Çăлтăр медале, икĕ хутчен Раççей Геройĕ ятне, «Тăван çĕршыв умĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн» 3-мĕш тата 2-мĕш степеньлĕ орденĕсене тата виçĕ хутчен НАСА медале тивĕçнĕ.

«Канаш» хаçатăн тĕп редакторĕ Николай Ларионов унпа икĕ хут курса калаçнă: пĕрремĕш хут – Шăмăршăра иртнĕ ЧР Акатуйĕнче (унта вăл Н.Федоров президентпа вертолетпа вĕçсе килнĕ).

Бударинăн йăх-тымарĕ Чĕмпĕр çĕрĕпе те çыхăннă терĕç.

Киря ялĕнче пулнă май эпĕ космонавтăн çуртне ӳкертĕм, ял çыннисемпе калаçрăм. Ялти таврапĕлӳçĕ Бударин çемйи çинчен нумай каласа пачĕ. Вăл ирĕк панипе эпĕ шкулта таврпĕлӳ урокĕ ирттертĕм:хам çӳренĕ вырăнсем çинчен каласа патăм, сăн ӳкерчĕесем, авалхи вак укçасем кăтартрăм. Урокра 65 вĕренекен, вĕрентӳçĕсем тата шкул директорĕ пулчĕç. Директорĕ В.И. Степанов Йĕпреç районĕнчен иккен. Чăваш. Совет вăхăтĕнче ку ялта 17 пин çын пурăннă. Чăвашсем чылай пулнă. Халĕ 20 проценчĕ çеç чăваш. Директор шкул музейĕпе паллаштарчĕ, иксĕмĕр чăвашла тăраниччен калаçрăмăр.



Колокольня на Валааме



Валаам находится в середине Ладожского озера – моря 2012 г

ВАЛААМ УТРАВĔ

Валаам утравĕ Ладога кӳлли варринче вырнаçнă. Çĕршер пин çул каялла вăл Шурă тинĕсĕн заливĕ пулнă. Пăрлăх тапхăрĕнче вăл кӳлĕ пулса юлнă.

Кунта арçынсен мăнастирĕ пур. Ăна хăшĕсем Русь патшалăхне шыва кĕртнĕ вăхăтра, теприсем 14-мĕш ĕмĕрте туса лартнă теççĕ. Чиркӳпе мăнастир документчĕсем тăрăх ăна христианство сарăлнă вăхăтра туса лартнă теççĕ. Пуçарса яракансем – Сергий тата Герман преподобнăйсем пулнă. Герман каярахпа Соловец утравĕ çинчи мăнастире тухса каять.

Валаам çинчи мăнастире тепер майла Великий Лавроль тенĕ. Кунтан нумай çеттуй çын тухнă, Александр Свирский преподобнăй, Корнилий Палеостовский, Арсений Коневский, Савватий Соловецкий, Герман Аляскинский.

Валаамăн Соборĕн уявĕ – çурлан (август) 20-мĕшĕнче.

XIX-мĕш ĕмĕр мăнастирĕн чечекленнĕ тапхăрĕ шутланать. Дамаскин игумен вăхăтенче мăнастирĕн заводсем пулнă, сăмала, çурта, тир тăвакан, пулă тытакан ферма, çĕр ĕçĕсен ушкăнĕ.

1917-1940 çулсенче Валаам территорийĕ Финлянди çĕршывне кĕрет. Коммунистсен вăхăтĕнче мăнастир пушă ларать. Горбачев

вăхăтĕнче, 1989 çулхи раштавăн 14-мĕшĕнче, мăнастире ултă инок килсен унăн ĕçĕ çĕнĕрен тытăнса каять.

Мăнастирĕн архитекторĕ – А.М. Горностаев. Унăн проекчĕпех (Спас-Преображени соборĕ туса лартаççĕ. Чиркӳ тăрри (чан çапмалли вырăн) 72 метр çӳллĕш. Собора тĕпрен юсанă хыççăн 2005 çулхи çурлан 19-мĕшĕнче Мускав тата Пĕтĕм Раççей Патриархĕ II-мĕш Алексий çутатать.

Соборăн аялти пайĕнче Антин Валаамскин çĕрмен ӳчĕ (мощь) упранать.

Утрав çинче тата 6 скит пур: Никольский, мĕнпур Çветтуйсен, Предчетенски, Воскресенски тата Гефсимански.

Елеон тăвĕ çинче Турă çӳлти тĕнчене улăхнă ятпа пилĕк тăрăллă часавай лартса хунă. Унсăр пуçне Турра хĕрес çине пăталаса асаплантарса вĕлернĕ ятпа хăйне часавай лартнă. Ăна коммунистсен вăхăтĕнче аркатаççĕ. Халĕ унта мрамортан тунă пусă кăна тăрса юлнă.

Çветтуйсен утравĕ çинче Александр Свирскин ту хăвăлĕ (пещера) пур, унта 1759 çулта йывăçран ăсталанă хĕрес вырнаçтартнă. Унăн çĕрмен ӳчĕ те çакăнтах упранать.

Унсăр пуçне утрав çинче игумен масарĕ пур, ăна Дамаскин 1876 çулта çĕклеме тытăнать. Вăрман ăшĕнче чиркӳ тата звонница вырнаçнă.

Валаам мăнастирĕнче пирĕн ентеш Никита Бичурин виçĕ çул ларать. Ăна кунта13 çул хушши Китайра ĕçлесе тавраннă хыççăн хупса хураççĕ.

Вăрçă хирĕнчен – самолетпа

Кивĕ Улхаш ялĕнчен паттăрсем сахал мар тухнă. Вĕсенчен пĕри – Михаил Анисимович Кирюшин летчик.

Вăл 1912 çулта çуралнă. Ялти шкулта çичĕ класс пĕтернĕ. 1933 çулхи ноябрь уйăхĕнче ăна Хĕрлĕ Çара илнĕ. Михаил 1816-мĕш чаçри авиамотористсен бригадине лекнĕ. Икĕ çултан хĕсметрен таврăннă. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи тытăнсан вăл июль уйăхĕнче çĕршыва хӳтĕлеме тухса кайнă. Михаил истребительсен хĕвеланăç 161-мĕш авиаполкне лекнĕ. Вăрçă чарăнинченех тăшмана аркатнă. 1945 çулхи ноябрь уйăхĕн 25-мĕшĕнче тин ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Хушăвĕпе ăна çартан хăтарнă.

Мĕнпе аса юлнă-ха Михаил Анисимович?

Хаяр вăрçă çулĕсенче вăл хăй самолечĕпе икĕ хутчен яла вĕçсе килнĕ. Пĕрремĕш хут 1942 çулта -- çулла. Ун чух Хĕвеланăçри Спасск-Дальний хулине вăрçă хатĕрĕсемпе вĕçеве тухнă пулнă. Самолет вĕçсе килнине курсан ял халăхĕ хăраса ӳкнĕ. Вăл вăхăтра самолета çывăхран курнисем сахал пулнă-ха. Ял çумĕнчи хире (халĕ

çав вырăнта гаражсем) анса ларсан пурте хĕрлĕ çăлтăрлă çар самолетне курма чупнă. Михаил Анисимович пухăннисенчен: «Кам яла çӳлтен курасшăн?»-тесе ыйтсан çынсем самолет çине улăхма мар, çывăха пыма хăранă. Хăюллисем тупăннă. Унăн ашшĕ – Анисий Евграфович (унпа тата икĕ çын) сывлăша вĕçсе улăхнă, икĕ-виçĕ хутчен ял çийĕн çаврăннă.

Иккĕмĕш хут вăл Улхаша 1943 çулта вĕçсе килнĕ. Ку хутĕнче самолета кăштах сиен тунă теççĕ. Кун пирки мана Марье акка, Михаил Анисимовичăн йăмăкĕ, каласа пачĕ. Летчикăн ашшĕ – Анисим Евграфович – 1919 çулсенче чухăнсен комитечĕн председателĕ пулнă. Арăмне Анастасия Андреевна Юманова тесе чĕннĕ. Ялта вĕсене Петрушкасем теççĕ. Вĕсем чи пуяннисем шутланнă.

Вăрçă хыççăн Михаил Анисимовичăн тĕрлĕ çĕрте пурăнма тивнĕ. Вăл шӳтлеме, каласма юратакан çын пулнă. Çавăнпа та сутуилӳ ĕçĕнче ăнăçлă ĕçленĕ. Пĕр вăхăт Венгри çĕршывне çӳренĕ, «Зингер» çĕвĕ машинисемпе аппаланнă. Монголирен сăран куртăсем, плащсем, атăсем илсе килсе сутнă. Çакăн çинчен мана унăн тăванĕ Н.И. Имангулов каласа пачĕ.

Юлашки çулсенче Кирюшинсем Ульяновск хулинчи Мир урамӗнче уйрăм çуртпа пурăннă. Вăрçă ветеранĕн ĕмĕрĕ вăрăм пулнă. Вăл 1993 çулхи март уйăхĕн 9-мĕшĕнче 81 çула çитсен çĕре кĕнĕ. Ăна Ишевке масарне пытарнă.



Исторический документ



Реконструкция средневековой истории Симбирска сегодня 2014г

Аваллăха тавраннăн туйăнчĕ

Утă уйăхĕн 12-13-мĕшĕсенче Ульяновск районĕнчи Çĕнĕ Беденьга ялĕнче «Волжский путь» ятпа Пĕтĕм тĕнчери виççĕмĕш фестиваль иртрĕ.

Кĕске истори. Çĕнĕ Беденьга Ишевкерен сакăр çухрăмра вырнаçнă. Çак авалхи çĕрĕн лаптăкĕ 1000 метр тăршшĕ, 700 метр сарлакăш. Кунта ĕлĕк крепость, стенасем, валсем, шăтăксем пулнă. Археологсем ку тĕлте 3-4 çул каяллах шырав ĕçĕсем ирттерме тытăннă. Ĕлĕкхи япаласене тупса тавраплĕлӳ музейне панă.

Çакăнта Пăлхар чăвашĕсем VIII ĕмĕртен пурăннă. Атăл леш енче – Кременки ялĕнчен инçех мар—Пăлхар чăвашĕсен Чертово городище текен хула пулнă. Кунта та икĕ çул каялла археологсем шырав ĕçĕсем ирттернĕ.


Уява нумай çĕртен килсе çитнĕччĕ: Белоруси, Украина çĕршывĕсенчен, Мускавран, Рязаньтен, Пензăран, Чулхуларан, Хусантан, Самартан, Шупашкартан, Тольятирен, Свердловскран, Ĕпхӳрен. Хутшăнакансем пурте çарпа истори клубĕсенче тăраççĕ, çавăнпа та вĕсем хăйнеевĕр çар тумĕсемпе, хĕç-пăшал пе килнĕ. Унсăр пуçне хăйсемпе пĕрле тимĕрçĕ лаççи тиесе килнĕ. Пухăннисене тимĕртен хĕç ăсталаса тĕлĕнтерчĕç. Теприсем тата вак шăрçа тăвакан станок илсе килнĕ, тăхланран шăратса шăрçа турĕç. Курава авалхи арчасем тата ытти япаласем те тăратнăччĕ.

Паттăрсем хире-хирĕç тăрса (20 салтака яхăн пĕр енче --çавăн чухлех тепĕр енче) ĕлĕкхи Пăлхар чăвашĕсем монгол тутарĕсемпе çапăçнине кăтартса пачĕç.

Çак мероприятие илсе пыраканĕ -- Чăваш ачи – Шупашкартан инçех мар Макаç ялĕнчен терĕç. Халĕ Хусанта пурăнать. Тата Пушкăрт Республикинчи Çармăс ялĕнчен икĕ ентеш пурччĕ. Пĕртăван Пигняшкинсемпе паллашрăм. Уявра пулни аваллăх тĕнчине тавраннăнах туйăнчĕ.



Кондр-батор (Тимер) на башне Волжской крепости 2014 г



11 Кирюшин на реконструкции древней истории «Волжский путь»

Гурий Комиссаров-Вантер çуралнăранпа –130 çул



Юпа уйăхĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Енри Çĕрпӳ районĕнчи Чăваш Патăрьел (Богатырево) ялĕнче ăслăлăхпа практика конференцийĕ иртнĕ. Ăна çакăнтан тухнă паллă историк, этнограф, педагог, литератор, чăвашсен таврапĕлӳ юхăмне пуçарса яракансенчен пĕри Гурий Иванович Комиссаров-Вантер çуралнăранпа 130 çул çитнине халаллана.

Конференцине чăваш тĕнчин тĕрлĕ кĕтесĕсенчен килсе çитнĕ. Пирĕн облаçран тăватă таврапĕлӳçĕ кайнă: Д.В. Кузьмин, Н.А.Казаков, И.М.Кирпичников тата Н.Н.Кирюшин. Хăнасене ялти клубăн вулавăшĕнче кĕтсе илнĕ. Вулавăш ĕçченĕсем Гурий Комиссаровăн пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ çинчен каласа паракан стенд хатĕрленĕ. Клубри музейпа паллаштарнă хыççăн Гурий Комиссаровăн тĕп килĕ вырăнне илсе кайнă. Акă мĕн каласа парать ун пирки Николай Казаков таврапĕлӳçĕ.

-Чăваш Патăрьел ялĕ сарлака та илемлĕ. Çырмасем пур. Ытларах пĕренерен тунă кивĕ çуртсем. Гурий Комиссаров çуралнă вырăнта халĕ урăххисем пурăнаççĕ, кирпĕчрен купаланă хăтлă çурт ларать.

Çак ялта чăвашсен тепĕр паллă çынни Фёдор Павлов композитор çуралнă. Ку тĕле те çитсе куртăмăр. Çурчĕ çине Асăну хăми вырнаçтарнă. Унтан чиркĕве çул тытрăмăр. Чиркĕвĕ кивĕ, тахçанах юсаман курăнать. Ялти пачăшкă Гурий Комиссарова асăнса чăвашла кĕлĕ ирттерчĕ. Унтан вăтам шкула кайрăмăр. Чăваш халăх ăслăлăх тата ӳнер академийĕн президенчĕ Евгений Ерагин, вырăнти шкул директорĕ Л.П. Данилова тата икĕ шкул ачи шкул çурчĕ çине вырнаçтарнă Асăну хăмине уçрĕç. Шкулти пысăк залра конференци уçăлчĕ. Ăна Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн директорĕ Юрий Исаев ертсе пычĕ.

Шупашкартан килнĕ сумлă хăнасем: ЧПУ профессорĕ В.Г.Родионов, кооператив институчĕн профессорĕ Л.А.Таймасов, гуманитари институчĕн ăслăлăх сотрудникĕ Г.Б. Матвеев, ЧНАНИ Уралçи филиалĕн ертӳçи И.Г. Тарасов, ЧНАНИ президиумĕн членĕ, чăваш халăх ăсчахĕ В.П. Станьял тата нумай сумлă çын кĕске докладсем турĕç. Чĕмпĕр таврапĕлӳçисенчен эпир Николай Кирюшинпа тухса калаçрăмăр. Николай Николаевич авалхи несĕлĕмĕрсен йĕрĕпе çул çӳрени çинчен каларĕ, сăн ӳкерĕксемпе

çирĕплетрĕ. Эпĕ Гурий Вантерăн чăваш таврапĕлӳ ĕçĕнчи вырăнĕ çинчен каласа патăм.

Комиссаровăн Мария ятлă йăмăкĕн хĕрĕ З.Г.Сорокина калаçнине итлеме кăмăллă пулчĕ.

-Эпĕ тетене лайăх ас тăватăп. Вăл ир-ирех тăрса аллине перо тытатчĕ те мĕн çĕрлеччен çыратчĕ. Ăна 30-мĕш çулсенче репрессиленĕ. Вăл 1969 çулхи нарăсăн 25-мĕшĕнче вилнĕ. Ăна Киров облаçĕнчи Санчурск ялĕнче пытарнă. Вилес умĕн вăл тăван ялĕ питĕ тавăнасшăн пулнă. Анчах чире пула çула тухайман,- терĕ вăл тетĕшĕн ал çырăвĕсене тата сарăхнă çырăвĕсене кăтартса. Юрий Исаев Гурий Комиссаровăн 5-6 томран тăракан хайлавĕсен пуххисене шкул вулавăшне парнелерĕ.

Кашни тухса калаçакана конференци тĕлне ятарласа кăларнă Гурий Комиссаровăн юбилей медалĕсене çакса ячĕç. Çакна эпир те тивĕçрĕмĕр.



Чувашская народна академия каждый год награждает за достигнутые успехи в краеведении и личный вклад в национальную культуру медалью Гурия Комиссарова (Вандера). Среди награжденных медалью Комиссарова, Н. Кирюшин, Н. Кондрашкин и И. Казаков и др. На снимке члены чувашской академии 2014 г.

Жадовкăсене çӳлтен пĕлтернĕ

Барăш районĕнчи Жадовкăри мăнастир стени çине пĕр харăс виçĕ Турăш сăнарĕ тухнă.

Ку ĕç 1995 çулхи март уйăхĕнче кивĕ мăнастирте пулса иртнĕ. Ун тавра вылякан ачасем мăнастир стени çинче виçĕ Турăш сăнне асăрхаççĕ. Шурă пурăпа пĕветнĕ стенасем çинче унччен ун пек япаласем пулман-çке...Вĕсем хăраса ӳкеççĕ, мĕн курни çинчен пĕлтерме çывăхра пурăнакан Анастасия Чаадаева патне васкаççĕ. Лешĕ чупса çинĕ çĕре унта ялти киномеханик Михаил Висарионов тата участокри милиционер Владимир Пономарев тăнă. Стена çинче вăтамран 30 тăваткал сантиметр лаптăксенче Христос Турă, Турă Амăшĕ тата Николай Чудотворец сăнĕсем уççăнах курăннă. Часах тĕлĕнтермĕше курма тавра ялсенчен те çынсем чупса килнĕ. Куçпа курсан та ĕнеме йывăр пулнă. Хăшĕсем аптранипе çамрăксем мăнастир çине слайдсем янă пулĕ тенĕ.

Турăш историйĕ çапларах: Хусан Таса Турă Амăшĕ ятне вăл 1709 çулта илнĕ шутланать. Ăна Карсун уесне кĕрекен Румянцево ялĕнче пурăнакан Тихон ятлă хресчен тупнă. Вăл вăрах чирлесе выртнă. Утайман. Пĕр каç ăна тĕлĕкре пирĕшти: «Жадовка енне кай. Унта Самородка текен шыв юхса выртать. Çавăнта Турăша тупăн. Çăлкуçĕнчи шыва сыпсан, кĕлеткӳне йĕпетсен чĕрĕлĕн»,- тенĕ. Тихон тĕлĕке ĕненмест. Тепĕр каç ăна каллех çав пирĕшти курăнать. Хальхинче вăл Тихăна вăрçах калать. Утайманскер, хăй сисмесĕрех сиксе тăрса Жадовка енелле çул тытнă. Тĕл пулакансем Тихăнран тĕлĕнсе кайнă.

Вăл юхан шыв тăрăх кайса çăл куç патне тухать. Чăнах та, çуталса выртакан Турăша курах каять. Пирĕшти хушнă пек шывне сыпать, çăвăнса тухать. Вăл сывалать. Çапла тупăннă Хусан Турă Амăшĕн сăнĕ. Ун хыççăн çак асамлă вырăна чирлисем çӳреме тытăнаççĕ. Часавай лартаççĕ. Хусан чиркӳ сыннисем çакна илтсен Турăша Хусан тĕпчепме илсе каяççĕ. Унăн вăй-хăвачĕ чăннипех пулнине ĕненсен ăна хăй вырăннех илсе килеççĕ. 1714 çултанпа çак таса вырăна Жадовка хирĕ теççĕ.

Мăнастир патнех таврăнар. Турăшсен сăнарĕсене курма нумай çын пухăннă. Вĕсен хушшинче ӳсĕррисем те, ĕненменнисем те пулнă. Хăшĕ шăппăн кĕл тунă, хăшĕ намăс сăмахпа кăшкăрашнă, вăрçăшнă. Сасартăк Турă Амăшĕн куçĕнчен куççуль юхса аннă. Пурте шăпланнă. Çил те чарăннă. Пĕлĕтрен çутатса çаврака чăмăр (шар) аннă. Турăшсен сăнĕсем майĕпен çухалнă. Турă çынсене мăнастире, чиркӳсене çĕнетсе яма, йĕркеллĕ пурăнма ыйтнине пĕлтернĕ.

Мелекесс тата Ульяновск проклĕ çак пулăма çапла ăнлантарать:

«Çут çанталăкра пулса иртекен кирек мĕнле пулăм та Турă ирĕкĕпе пулать. Виçĕ сăнар пĕр харăс курăнни вара Жадовкăри мăнастир ĕçне çĕнетсе, йĕркелесе яма вăхăт çитнине пĕлернĕ».

Унтанпа 12 çул иртет. Кăçал Филарет игумен тăрăшнипе мăнатире тĕпрен юсанă, тăррине çичĕ купол вырнаçтарнă. Унсăр пуçне ун çумне апат çимелли пӳлĕм, хăна çурчĕ, тата ытти кирлĕ çуртсем хăпартнă, çăл куç тавра тирпей-илем кĕртнĕ. Асăннă ĕçсене йăлтах ĕненекенсен укçи-тенкипе тунă. Халĕ кунта кĕлĕсем иртеççĕ.



Развалины крепости Изборск Псковская область.



Труворов крест

Изборск крепоçĕ

Авăн уйăхĕнче эпĕ вырăссен чи авалхи хула крепоçне Изборска кайса килтĕм.

Летопись тăрăх, хулана пуçласа яраканĕ -- Новгород хулин кнеçĕн Гостомыслăн ывăлĕ Словен пулнă. Хулана малтан Словен тенĕ. Каярахпа – Словенăн ывăлĕ Избора ячĕпе Изборск теме тытăннă. Хула историйĕ пиртĕ пуян. Вăл 862 çултан тытăнать. Крепость-хула çине шав тапăннă. Анчах пĕрре те çĕнтереймен.1581 çулта тин сутăнчăксем пулăшнипе Польша патши Стефан Баторий крепоçа алла илет. 1920-1940 çулсенче Изборск Эстони Республикине, 1945 çулта – Псков облаçĕнчи Печорск районне кĕнĕ.

Крепоçăн стенисем сыхласа юлна-ха. Вал 2,4 гектар çĕр лаптăкĕ йышăнать, вăрăмăшĕ – 850, стена сӳллĕшĕ – 7-10, вышкисем – 12-15, хулăнăшĕ – 4 метр пулнă. Экскурси ертӳçи каланă тăрăх, çуллахи уйăхсенче кунта 10 пин çын ытла курма килет. Курса тĕлĕнмелли вара чăнах та нумай. Виçĕ-тăватă метр çӳллĕш шыв сикки мĕне

тăрать! Крепость йĕри-тавра канмалли çуртсем, сипленмелли санаторисем, музей вырнаçнă. Печора хулинче тата çĕр хăвăлĕн мăнастирĕ пур терĕç, эпĕ унта çитеймерĕм.

Изборск хула тавралăхне Н.К. Рерих художник та питĕ кăмăллана. Кунта вăл «Гонец», «Идолы», «Дозор», «Тайник», «Волокут волоком» картинисене ӳкернĕ. Изборск крепоçĕнче «Андрей Рублев», «Семен Дежнев», «Открытая книга», «Армия трясогузки», «Звезда пленительного счастья» илемлĕ фильмсем ӳкернĕ.

Крепоçран инçех мар «Труворово городище» текен вырăн пур. Çумĕнчех – виçкĕтеслĕх евĕрлĕ 40 метр çӳллĕш ту çĕкленсе ларать. Унта – Никольски чиркĕвĕ тата ĕлĕкхи масар вырнаçнă. Масар çинче Трувор хĕресĕ тĕлне пулатăн. Ăна 14-мĕш ĕмĕртех лартнă. Унăн çӳллĕшĕ – 2 метр та 28 сантиметр. Хĕресĕ çине «Царь славы, Иисус Христос, Ника» тесе çырнă. Çак хĕресрен пĕр енчен – паха, тепер енчен— начар вăй тухать терĕç. Çавăнпа та эпĕ ăна перĕнме хăрарăм. Трувор кнеç Изборск крепоçне 862 çулта Рюрик тата Синеус пертăвансемпе килсе тĕпленнĕ. Икĕ çул хуçа пулнă хыççăн вилнĕ.



Внуки Гостомысла: Рюрик, Трувор, Синеус. художник Илья Глазунов



Измаил - Остатки Измайловской крепости

ИЗМАИЛ КРЕПОСЕ

1790 çулхи раштавăн 22-мĕшĕнче А.В. Суворовăн 31 пиллĕ çарĕ Измаил крепоçне илнĕ.

Измаил хули хăçан никĕсленни пирки тĕрĕс çирĕплетни çук. Версийĕ пумай. Измаил крепоçĕ пирки пĕрремĕш хут 1529 çулта асăнни пур. Ун тăрăх, Ренида çывăхĕнче авалхи грексем пурăннă. Каярах Рим çыннисем Измаил çывăхĕнче Сморнис текен тăрăх никĕсленĕ. IV ĕмĕртен тытăнса XIV ĕмĕр таранччен Измаил вырăнĕнче славянсен Смил хули пулнă. Ун пирки Рим историкĕ Касторий çырса хăварнă. XVI ĕмĕртен тытăнса Измаила тĕрĕк крепоçĕ пек пĕлнĕ. Тепĕр верси тăрăх, 1484 çулта çак тăрăха Измаил ятлă хан тытса илнĕ. Хулана ун ятне панă. Çав çулах тĕрĕксем Килия тата Белгород (Аккерман) крепоçĕсене тытса илсе нагай тутарĕсене тĕпленме ирĕк панă.

1538 çулта Сулеман Кануни султан Измаил хула ячĕпе хăйĕн ывăлне Исмаил ят панă (иммасль — «услышь, Аллах»). Дунай шывĕ хĕрринче (Измаил хули тĕлĕнче) крепость туса лартакан Э.Челеби хăй кĕнекинче (1659 çул) çапла çырнă: «Измаил хулинче 2000 кил, 800 лавкка пулнă. Хула тăватă пайран тăнă, виççĕшĕнче мăсăльмансем пурăннă, пĕринче -- грексемпе эрменсем, еврейсем, пăлхарсем, караимсем. Крепость пысăках пулман. Унăн тăршшĕ—6 сухрăм. Крепоçа çĕртен тата чулран 6-8 метр çуллĕш валсемпе çирĕплетнĕ, çумĕнче -- 12 метр сарлакăш, 6-10 метр тарăнăш шăтăк. Унта мăй таран шыв тăнă. Крепоçра 8 мечеть, 3 грек тата 1 эрмен православи чиркĕвĕ пулнă».

Çар гарнизонĕнче 25 пин çын тăнă, вăл шутра 8 пин кавалери, 265 çар хатĕрĕ, хĕç-пăшал. Çар ертӳçи – Айдос-Махмет-Паша пулнă.

Вырăссен çарне А.В. Суворов ертсе пынă. Ун аллинче 31 пин салтак, 500 çар хатĕрĕ пулнă. Де Рибас флотили ертсе пынă, унăн 70 çар хатĕрĕ шутланнă, ытти хĕç-пăшал карапсем çинче вырнаçнă. Измаил крепоçне Александр Суворов 1790 çулхи раштавăн 11 (22)-мĕшĕнче çĕнсе илнĕ.

«Штурм Измаила Суворовым» кĕнекинче Н. Орлов çапла çырать: «Суворов çарĕ 1000 тутар çине пырса кĕнĕ. Крепость хапхине çĕмĕрсе кĕрсе тутарсене аркатма тытăннă. Вырăссем «Ура! Да здравствует Екатерина!» тесе кăшкăрса малалла ыткăннă. Хаяр вăрçă тытăннă. Суворов талăк хушшинче тăшмансене тĕп тума хушнă. Куç тĕлне кам пулнă—йăлт вĕлернĕ. Ачасемпе хĕрарăмсене те шеллемен. Лаша витинчен 4 пин лаша ирĕке тухса халăха тапта-

тапта мӗнпур вӑйран вирхӗнсе çӳренӗ. Çак çапӑçура тӑшман 4 пин çынна çухатнӑ, пин çын аманнӑ. 650 вырӑс офицерӗнчен 400 салтак вилнӗ тата аманнӑ. 9 пин тӗрӗке тыткӑна илнӗ, 2000 çын тепӗр кунне сурансене пула вилнӗ. Вилнисене Дунай шывне пӑрахнӑ. Вырӑссене крепость тулашне, пӗр шӑтӑка чавса пытарнӑ.

Суворов Потёмкина çапла çырса пӗлтернӗ: «Тыткӑна 4285 православи, 140 эрмен, 900 болгар, 135 жид çыннисене илтӗм. Раççее илсе кайма хысна укçине тӑкаклас мар тесе пӗр пайне Раççей офицерӗсене парнеленӗ, ытти сене казаксем конвойпа Николаев хулине ӑсатнӑ». Çул çинче нумайӑшӗ вилнӗ. Малтанхи 35 çухрӑмра кашни утӑмрах виле выртнӑ.

Измаила тытса иличчен малтан Систов (Болгари) хулинче конференци ирттернӗ. Унта хӗвеланӑç Европа дипломачӗсем Раççее хӑйсен условийӗсемпе Турципе килӗшӳ тума хистенӗ. Англипе Прусси хистенипе Турци мирлӗ калаçса татӑлма килӗшмен. Суворовӑн крепоçе штурмлама тивнӗ. Хастарлӑхӗпе вӑл Европӑна тӗлӗнтернӗ. Çапла килсе тухнӑшӑн тӗрӗксем Европа дипломачӗсене айӑпланӑ.

Çавӑн хыççӑн крепость комендантне Кутузова çирӗплетнӗ. Гарнизонра 4 егерь батальонӗ, 2 мушкетёр полкӗ тата 2 пин казак хӑварнӑ. Кутузова крепость тавралӑхне сӳтме хушу панӑ. Крепоçӑн пӗр пайне сӳтнӗ.



Удивительное рядом – Дивная гора

Илемлĕ ту

Воронеж облаçĕнчи Лиски районĕнче Большие Дивы текен ял пур. Ку тăрăха эпĕ кăçалхи авăн уйăхĕнче кайса килтĕм. Ялӗнчен инçех мар Илемлĕ тусем (Дивные горы) ятлă ту мăнаçлăн çĕкленсе ларать. Унăн çӳллĕшĕ – 60-70 метр. Ту çинче икшер метр çӳллĕш çирĕм ытла ту сапаланнă. Халĕ вĕсене пурă чулĕсем (меловые останки) теççĕ. Ĕлĕк-авал манахсем кунта хăвăл туса кĕрсе Сицили Турă амăшĕн мăнастирне туса хунă. Унăн вăрăмăшĕ 426 метр пулнă, халĕ 237 çеç тăрса юлнă. XX ĕмĕрте ку вырăнта пурă кăларма тытăннă. Тăвăн пĕр пайне аркатса, сирпĕтсе пĕтернĕ. Халап тăрăх, Сицили Турă амăшĕн сăнне 1092 çулта вырăс салтакĕсем илсе килнĕ. Вĕсем вăл вăхăтра грек императорĕ Михаил Пафлагонский патĕнче хĕсметре тăнă. Салтаксем мăсăльмансемпе Сицили утравĕшĕн çапăçнă. Тепĕр халапра çапла калани пур: Илемлĕ тусем çине ку турăша Сицили утравĕ çинчен грексен православи манахĕсем Ксенафонт тата Иосаф илсе килнĕ. Çак тăва чавса мăнастир тума манахсене Турă амăшĕ хăй систернĕ имĕш. Ксенафонтпа Иосаф вăйĕпе пулнă та çак мăнастир.

1831 çулхи çĕртмен 14-мĕшĕнче халăх çак турăша пуççапма тытăнать. Шăпах çак вăхăтра халер чирĕ сиксе тухать. Ĕненекенсем турăшпа, хĕрессемпе çӳрев ирттерсен тин чир пĕтет. Çак турăш темиçе хутчен те пулăшать халăха: пушартан сыхласа хăварать, шыв илесрен çăлать. Çавăн хыççăн турăша □Исцеляющееся□теççĕ.

Ту çинче Маяцк крепоçĕ сыхланса юлнă. Ун тавра çĕр питĕнчен 2-3 метр çӳллĕш, 1,5-2 метр тарăнăш валсем палăраççĕ.

VIII ĕмĕрте çак вырăнта Алан-Пăлхар йăхĕсем пурăннă. Вĕсем çурçĕр Кавказран куçса килнĕ. Çак вырăнтан инçех мар Пăлхар патшин Кубратăн вил тăпри пур. Эпир пĕлетпĕр, Кубратăн пĕр ывăлĕ Кожраг (Кăтра) Дон юхан шывĕ енне куçса вырнаçать, кайран вăтам Атăл тăрăхне улăхать.

1630 çулта кунта вырăссем Белгорода хӳтĕлекен вырăн тума килеççĕ. Çав çулсенче Мускав правительстви Воронеж крайĕн чиккисене сыхлама çар янă. Ăна Чернигов полковникĕ Дзиньковский ертсе пынă.

Революци хыççăн Илемлĕ ту мăнастирĕ хупăнать. Совет вăхăтĕнче пансион уçаççĕ.

2007 çултанпа ку вырăнта археологсем ĕçлеççĕ. 80 тăваткал метр çĕр лаптăкĕ чавса 47 шăмă тупаççĕ. Радиоуглерод мелĕпе тĕрĕслесен вĕсем 13370 çулта пулнине пĕлнĕ. Унсăр пуçне çакăнта пурă каньонĕ пур. Унăн вăрăмăшĕ 600, çӳллĕшĕ 35 метр.

Вӑл Маяцк крепоҫӗнчен 800 метрта вырнаҫнӑ. 30-40 пин ҫул каялла ку вырӑнта тинӗс пулнӑ.

Инҫех мар авалхи масар пур. Археологсем 170 этем шӑмшакне, 20 яхӑн асӑнмалли япаласем, чашӑк-тирӗк ванчӑкӗ тупнӑ.



Лестница к колокольне



Горы – сказка всегда завораживает воображение путника.



Школьниксем скульптор Николай Кондрашкин Кивё Улхашри лартнă палăк уменче асăнмаллăх мёлке çапăнаççё. 2014 ç.

Шăматкунхи тёлпулу

Нарăсăн 15-мёшёнче, шăматкун, Кивё Улхашри вăтам шкула Ульяновскра ёçлесе пурăнакан пултарулла, чăваш тёнчинче палăрма ёлкёрнё ентешсем килсе çитрёç. Хăйсемпе паллаштарчёç, ёçё-хёлё çинчен каласа пачёç.

Николай Кондрашкин, Вăта Тимёрçентен тухнăскер, тёрлё енлё аталаннă маçтăр. Вăл ăста художник, скульптор, çыравçă, таврапёлўçё, обществăшăн тăрашакан ăсчах тата тёрлё хисепе тивёçлё ентеш. Вăл ăсталанă палăкёсем Чăнлă тăрăхёнче кăна мар, кўрлё регионсенчи тавралăха илем кўреççё.16 кёнеке çырса, пичетлесе кăларнă Николай Григорьевич. Юлашки çулсенче тёнче шайёнс юрăхлă ёçсем тăвать: авалхи Пăлхар патшалăхён историне çанă тавăрса тёпчет, Болгарири ăсчахсемпе, культура ёçченёсемпе çыхăнса ёçлет. Вăл Николай Кадебина МАБИК академин члене йышăнни çинчен калакан удостоверени тата кёмёлтен туна медальон пачё. Медале Бургасран (Болгари) Петьер Петров ярса панă.

Николай Кирюшин –Кивĕ Улхаш çынни. Çак шкулта вĕреннĕ ывăна пĕлмен çул çӳревçĕ. Ăçта кăна çитсе курман-ши вăл? Урал,Çĕнĕр, Кавказ, Атăл тăрăхĕнчи паллă вырăнсенче, Крымра, Соловец, Кижи утравĕсем çинче, Измаил, Полтава, Бородино, Куликово хирĕсенче. Пурне те асăнса та пĕтерес çук. Тĕллевĕ мĕнреха тĕлевçĕн? Кашнинчех вăл истори фактне кăна мар, чăвашлăх йĕрне шырать, çĕнĕ пулăмсем, ятсем, топонимсем тупса ăнлантарать. Мĕн чухлĕ литература, сăн ӳкерчĕк, документ илсе килнĕ вăл тăван шкула...

Николай Казаков --Çĕнĕ Йĕлмел чăвашĕ. Мĕн ачаран таврапĕлӳ ĕçне парăннă. Тăван ялĕн историне тĕпчесе таврапĕлӳçĕсенчен чи малтан кĕнеке пичетлесе кăларчĕ. Хальхи вăхăтра вăрман хуçалăхĕнче вăй хурать. Çав вăхăтрах халăх хушшинче пулса истори документчĕсене сыхласа хăварас тĕллевпе архивсене парать.

Владимир Ярухин Çĕнĕ Упи чăвашĕ, Раççей халăхне чĕререн парăннă çын подполковникăн та шкул ачисене нумай каласа пачĕ. Афган, Чечня вăрçи витĕр тухнă офицер Совет тата Раççей çарĕсен салтак паттăрлăхĕ, нуши çинче чарăнса тăчĕ, çĕршыва сыхлакансене паянах хатĕрлемелли пирки каларĕ. Вăл йăх-тымарне тĕпчет, шкул ачисене çак ĕçе явăçтарма сĕнчĕ Владиир Егорович.

Хăнасем пирĕн патăмăра **Николай Кадебин** вĕрентекен чĕннипе килнĕ. Николай Константинович пирĕн шкулта таврапĕлӳ ĕçне ертсе пырать. Совет Союзĕн Геройĕ Н.Г.Князькин музейĕ те вăл тăрăшнипе тусса кайман-ха: аталанать, ĕçлет. Пуçтарăннисене вăл Кивĕ Улхаш поçчĕсемпе паллаштарчĕ, вĕсен хăш-пĕр сăввине вуласа пачĕ. Воронеж çывăхĕнче ĕçлесе пурăнакан Кивĕ Улхаш хĕрĕ Александра Алеева (Подколзина) илемлĕ сăвăсем çырать. Вăл шкула ярса панă сăвă кĕнекипе, хайлавĕсемпе паллашрăмăр. Николай Яргункин та хулăн проза кĕнеки çырса кăларнă, шкула ярса панă. Вăл Рязань çывăхĕнче ĕçлесе пурăнать.

Икĕ сехет сисĕнмесĕрех иртсе кайрĕ. Хăнасем шкул музейĕпе паллашрĕç, шкул ачисемпе пĕрле вăрçăра вилнĕ, хыпарсăр çухалнисене асăнса лартнă палăк умĕнче асăнмалăх сăн ӳкерĕнчĕç. Палăка колхоз председателĕ Г.Я. Ледюков тăрăшнипе Николай Кондрашкин ăсталаса лартнă.

Пирĕн патăмăра килнĕ пултаруллă çынсем çамрăк ăрăва тĕрĕс воспитани парас тĕллевпе вăхăчĕсене шеллемесĕр тăрăшаççĕ. Пысăк тав вĕсене уншăн.

Анастасия НЯГА, Дарья ВРАЖКИНА, Светлана БАБАЕВА, вуннăмĕш класра вĕренекен таврапĕлӳ кружокĕн членĕсем.



Мастер-классы чувашских академиков в Староалгашинской школе



Сегодня в школе Н. Кондрашкин, Н. Кирюшин и Н. Казаков.



Урок истории и патриотизма в классе Николая Кадебина



Урок мужества Владимира Ярухина в сельской школе

Улхашсем Чăваш Енрен килнĕ

Эпĕ ачаранах чăваш халăхĕ, Чĕмпĕр облаçĕ, хам çуралнă Кивĕ Улхаш ялĕн историйĕпе кăсăкланатăп. Манăн тĕрлĕ вăхăтра туяннă историллĕ кĕнекесем пайтах. Нумай вуласа ытларах пĕлес килет. Астăватăп-ха, иккĕмĕш, виççĕмĕш классенче вĕреннĕ чухне атте ял пуçланса кайни çинчен каласа паратчĕ.

Кивĕ Улхаша Чăнлă районĕнче чи кивĕ ял теме пулать. Атте каланă тăрăх, яла пуçласа яракансем Чăваш Енри Çĕмĕрле районĕнчи Пысăк Улхашран 15-мĕш ĕмĕрсенчех килсе тĕпленнĕ. Малтанах Чăнлă шывĕн леш енне икĕ çемье – Рахмановсемпе (ялта вĕсене Кушаксем теççĕ) Яргункинчсем (Кăтрисем) килсе вырнаçнă.

Архиври документсем тăрăх, 1834 çулта ялта 213 кил (1545 çын) пулнă,1935 çулта 600 киле (5000 çынна) çитнĕ.

1858 çулта аçа çапса ялти чиркӳ çунса кайнă. Ĕненекенсем кĕл тума Çĕнĕ Улхаша çӳреме тытăннă.

1891 çул калама çук типĕ пулнă. Яла мур чирĕ килсе нумайăшĕн пурнăçне илсе кайнă.

1895 çулта выçлăхран хăтăлса юлнă çирĕп хуçалăхсем çĕнĕ çĕрсене – Тюмень тата Кемерово облаçĕсене – куçа-куçа кайнă. Пин-пин çухрăма лашасемпе виçшер-тăваттăр уйăха çула тухнă.

1887-1902 çулсенче Атăл тăрăхĕнче каллех выçлăх хуçаланнă. Улхашсем хăнăхнă çĕрсене пăрахса Çĕпĕре тухса кайнă. Çĕнĕ вырăнĕсене Пысăк Улхаш е Чĕмпĕр ят панă. Вĕсем картта çинче паян та çак ятпах. Ял витĕр аслă çул иртнĕ. Çак çулпа Хаяр Иван патша хăй çарĕпе Хусана кайнă.

Эпĕ тахçантанпах Чăваш Енри Çĕмĕрле районне кайса Улхаш ялне çитме ĕмĕтленнĕ. Иртнĕ çулла тинех 13 çулхи ывăлăмпа çăмăл машина çине ларса çӳлçӳреве тухрăмăр. Чăнах та, кунта Пысăк Улхаш, Вырăс Улхаш, Чăваш Улхаш ялĕсем пур. Малтан Пысăк Улхаша чарăнтăмăр. Ял администрацине çитсе пуçлăхĕпе тĕл пултăмăр. Ялти архивпа паллашрăмăр. Кунта та ман хушаматлисем Кирюшинсем – тăватă çемье. Эпĕ те Кивĕ Улхашран, манăн хушамат та Кирюшин пулнине пĕлсен пуçлăх малтанласа ĕненмесĕр паспорт ыйтрĕ. Манăн ăна водитель удостоверенине кăтартма тиврĕ. Çак ялта та пирĕн ялти пек Селиванов, Шиваев хушаматлисем пур. Çак ял пĕлтĕр 632 çул тултарнине палларĕ тунă.

Чăваш Улхаша та чарăнтăмăр. Шел, ял администраци пуçлăхĕне курса каласма тӳр килмерĕ, вăл ĕçпе Çĕмĕрлене кайнă терĕç. Эпир çак яла мĕншĕн Улхаш ят панипе кăсăклантăмăр. Малтан килсе шурлăха типĕтсе çурт лартакан хĕрарăма Ольга тесе чĕннĕ, хушамачĕ Шӳ пулнă имĕш. Çапла майпа ял ятне Ольгаши тенĕ. Каярахпа ăна Алгаши теме тытăннă.



1 Выступление Николая Кирюшина на отчетном собрании чувашских академиков 2013

2 «Хаят патти» в с Убеево РТ

Кăçал çĕртме уйăхĕнче ваттисен кунĕнче Çĕнĕ Упи ялĕнче Хăят -- ĕлĕкхи чăваш тĕнĕпе сыхăннă уяв -- иртрĕ. Хăят пăттине çĕнĕуписем иккĕмĕш хут пуçтарăнчĕç. Çак йăлана çĕнĕрен чĕртсе яма шухăшланă çын – çав ялта çуралса паян Ульяновск хулинче пурăнакан хастар таврапĕлӳçĕ Владимир Ярухин.

Владимир Егорович чĕннипе эпир, унпа пĕр шухăшлă сынсем, Ульяновскран Çĕпрел район чăвашĕсем уявсене еплерех паллă тунине курма кайрăмăр. Кăнтăр иртсе виçĕ сехетелле Çĕнĕ Упине çитрĕмĕр. Мĕнпур ял халăхĕ, шур сухаллă мучисемпе çӳçĕсене кĕл тĕсĕ çапнă кинемисем, арсемпе хĕрарăмсем, çамрăксем, ача-пăча, Çĕнĕ Упи ял шкул картишне пухăннă -- кивĕ шкулпа сывпуллашма. Çитес вĕренӳ çулĕнче ялта çĕнĕ шкул ĕçлеме пуçланăран ĕлĕкхи шкула сӳтме тĕв тунă. Ял çыннисем вара хăйсен шкул пурнăçне шăп та шай çак çуртпа çыхăнтараççĕ-çке. Шкулта юлашки хут экскурсии йĕркелерĕç, 2014 çулта пĕрремĕш класа каякан ачасем аслă çул ӳсĕмрисене пĕрремĕш шăнкăрав сассине «парнелерĕç».

Ял халăхĕ йăх-несĕлĕсем чи малтан килсе вырнаçнă çĕре -- Çут вырăнне – чӳк тума пухăннă. Пĕлтĕр ял-йышпа пĕрле лартса хăварнă юпа (çӳллĕш 5 метр, ун йĕри-тавра авалхи пăлхар-чăваш саспаллисемпе çырнă) тĕлĕнче Владимир Ярухин кĕлĕ вуларĕ: ваттисене, пиртен ĕмĕрлĕхех уйрăлнисене асăнчĕ, ентешĕсене çирĕп сывлăх сунчĕ, тыр-пул тухăçлă пултăр тесе ырă сăмахсем каларĕ. Кĕлĕ туса пĕтерсен ĕмĕтсем пурнăçланччăр тесе пуç çанса, йăлăнса юпа йĕри-тавра виçĕ хут çаврăнтăмăр.

Унтан уй-хир пуçĕнче çерçи чӳкне тупа çере хутшăнтăмăр. (Куннехинче çерçи вырăнне уписем шурă кăвакарчăна вĕçтерсе ячĕç). Вĕçен кайăка çурĕç, уринчен пуçласа пуçĕ таран çу сĕрчĕç. Вал пĕр хут вĕçсе çаврăнчĕ те пирĕнпе сывпуллашса Хĕвел тухăç еннелле (аван паллă) кайса курăнми пулчĕ. Халăх савăнчĕ – эппин кăçал тыр-пул çителĕклĕ пулать! Эпир вара малалла утрăмăр,Таккавар юхан шывĕ хĕрринче ӳсекен йывăç турачĕ çине «ĕмĕт кантрине» çыхрăмăр. Кавча кайман хĕрсене шурă кăвакарчăнсем пачĕç. Вĕсем вара килĕ еннелле утрĕç.

Каярахпа ваттисене асăнса апат çирĕмĕр. Йăхташăмсем ятне шурă така пусса пăтă пĕçернĕ. Кашниех тутанса курчĕ техĕмлĕ çимене.

Уяв малалла тăсăлчĕ. Ялти чи сумлă ватăсем картана тăрса ĕлĕкхи чăваш юррисене юрларĕç. Çамрăксене йыхăрса сăвă каларĕç, вăйăсем вылярĕç.

Ульяновск область чăвашĕсен таврапĕлӳ ушкăнĕн председателĕ Николай Казаков Çĕнĕ Упи тăрăхĕнче чăвашлăха упраса пурăннă çĕрте ырми-канми тăрăшнăшăн Упи ял тăрăхĕн пуçлăхне Алексей

Ярухина (Владимир Егоровичăн тăван шăллĕ) ĕлĕкхи пăлхарсен медальне пачĕ. Ăна Болгарири Бургас хулинчен илсе килнĕ. Владимир Ярухин Афган çĕрĕ çинче хĕсметре пулнă Çĕнĕ Упи каччине Валерий Лашманова медаль парса чысларĕ.

Уявра çамрăксем нумай пулни кăмăла çĕклерĕ, хавхалантарчĕ. Хамăр йăх-несĕлсен йăли-йĕркине чĕртсе тăратса чаплă уявсем ирттерис çĕре йăмăксемпе шăллăмсен хутшăнмаллах тесе шутлатăп



Село Старое Убеево Дрожжановский район РТ

Бичурин çуралнă ялта

Çĕртмен 26-мĕшĕнче Николай Казаков таврапĕлӳçĕпе тата унăн ывăлĕпе Алешăпа Никита Яковлевич Бичурин (Иакинф) çуралнă Тиннер ялне çитсе куртăмăр. Чулран тунă палăкĕ умне чарăнса пуçăмăрсене тайрăмăр. Çул хĕрринче йывăçран Китай стилĕпе ăсталанă 10 метр çӳллĕш стелла ларать.

Вырăнти таврапĕлӳçĕпе курса калаçас шухăш пурччĕ. Ял çыннисем пире «пурччĕ пирĕн ăслă таврапĕлӳçĕ, вăл икĕ çул каялла вилчĕ» терĕç.

Тиннер ялĕнче виçĕ урам. Çынни сахал. Çамрăксем çукпа пĕрех. Шкул çуккипе ачасем Акулево ялне вĕренме çӳреççĕ. Ялĕнчен Шуршăл курăнса ларать. Сĕнтĕрвăрри районĕнчен тĕнчипе паллă икĕ çын тухнă: Андриян Николаев космонавт тата Никита Бичурин ăсчах.



Памятный знак, место где родился Н. Бичурин

Никита Яковлевич 1777 çулхи çурла (август) уйăхĕн 29-мĕшĕнче Хусан кĕпĕрнине кĕрекен Шупашкар уесĕнчи Тиннер ялĕнче çуралнă. Ашшĕ – Яков Данилович – пачăшкăра ĕçленĕ. Амăшĕ - Акулина Степановна – вĕренмен чăваш пулнă. Никита 2 çулта чух ашшĕне Пичурин (Шĕнерпуç) ялне чиркĕве ĕçлеме яраççĕ. Никита пĕчĕкренех пултаруллă пулнă. 1789 çулта ăна Хусанти тĕн семинарине вĕренме янă. Кунта ачана Пичуринский хушамат параççĕ, каярахпа вăл Бичурин хушаматпа çӳреме пуçлать. Манах санне парсан вăл Иакинф пулса тăрать.

1807 çулта синод Бичурина Китая ĕçлеме ярать. Вăл унта 14 çул пурăнать. 1821 çулхи çу уйăхĕнче 15 тĕвепе 400 пăт кĕнеке, картта, словарь таврашĕ тиесе тăван çĕршыва таврăнать. Кĕнеки кăна 167 тĕрли пулнă, вĕсенчен ытларахăшĕ 10-шар томран тăнă.

Вăл вăхăтра Ази халăхĕсем (китайсен, монголсен, тибетсен, уйгурсен, джунгарсен, манчурсен, калмыксен, тутарсен, чăвашсен, хуннсен) çинчен Раççейре унран аванрах пĕлекен çын та пулман.

Бичурин 10 чĕлхе пĕлнĕ. Тăватă хутчен Демидов премине тивĕçнĕ. Вăл Пушкинпа, Одоевскийпе, Герценпа, Панаевпа, Белинскиийпе, Крыловпа туслă пулнă. Никита Бичурин Çĕпĕрте тата Байкал тăрăхĕнче пулать. Кяхта хулинче китайла вĕрентмелли училище уçать. Çĕпĕрте Бестужев тата Пестель декабристсемпе тĕл пулать.

1853 çулхи çу уйăхĕн 11 (25)-мĕшĕнче вăл Александр Невский Лавринче (76 çул тултарсан) вилсе каять.



Александро-Неыская Лавра где похоронен И Бичурин

Онега кӳлли хӗрринче пулни

Шурӑ тинӗс варринче вырнаҫнӑ Соловушки утравӗ ҫинче пулна хыҫҫӑн эпӗ Онега кӳлли хӗрринчи Беломорск хулинче чарӑнтӑм. Ҫак хуларан инҫех мар вӑрман ӑшӗнче чулсем ҫинче шӑйӑрса сырнисем пур. Ӑна Петроглиф теҫҫӗ. Вӑл 20 гектар ытла ҫӗр лаптӑкӗ йышӑнать. Ҫак вырӑнта 10-12 пин ҫул каялла **саами** халӑхӗ пурӑннӑ, вӗсем чул ҫинче сырма ӳкерме ӑста пулнӑ. Кунта мӗнле кӑна ӳкерчӗк сукмтискер кайӑксем, ухӑллӑ сынсем, хӗвел, уйӑх, ҫӑлтӑрсем. Ҫакӑн пек ӳкерчӗксем Онега кӳлли хӗррипе питӗ нумай теҫҫӗ. Петроглифсене ҫӳлтен аялалла пӑхса курма ятарласа пусмасем туса хунӑ. Ҫулла кунта тӗрлӗ ҫӗршывсенчен нумай сын килсе ҫӳрет. Эпӗ хам Германирен тӑватӑ машинапа килнӗ 15 ҫулҫӳревҫӗпе курса калаҫрӑм. Вӗсем икӗ эрне Карели, Мурманск облаҫӗсенче, Хибинра, Соловушки утравӗ ҫинче пулнӑ, вӗсен ҫулӗ Валаам утравӗ ҫинех выртать.

Карели тӑрӑхӗ питӗ илемлӗ. Вӑл 450 метр ҫӳллӗш тусемпе, шурлӑхсемпе, пысӑк чулсемпе пуян.



Карельские петроглифы...



Никольская гора в Ульяновской области.

Микула тăвĕ – таса ту

Ульяновск облаçĕнче таса, сăваплă вырăнсем нумай. Вĕсенчен пĕри – Сăр районĕнчи Микула тăвĕ. Кашни çул май уйăхĕн 22-мĕшĕнче кунта облаçри районсенчен, кӳршĕ республикăсенчен, Мускав, Чулхула, Санкт-Петербург тата ытти пысăк хуласенчен çынсем пуç тайма çӳреççĕ.

Микула тăвне килекенсен шучĕ çулсерен нумайланса пырать. 2003 çулта, сăмахран, çакăнта 2,5 пин çын пулса курнă.

Çак асамлă ту çинче виçĕ çăлкуç тапса тăрать. Кашни çăлĕ çывăхĕнче шыва кĕмелли вырăнсем тунă. Кунта ваттисем кăна мар, пĕчĕк ачасене те шыва кĕртеççĕ. Çав кун кунта чăн-чăн уяв, Ульяновск-Мелекесс епископĕ хăй килсе кĕлĕ ирттерет, шыва çутатса тасатнă хыççăн тĕне ĕненекенсем ăна савăтсене тултарса ту çине улăхаççĕ. Çӳллĕш – 50-60 метр. Çакăнта часавай пур. Унпа юнашар

Микулайăн тĕлĕнмелле ĕçсем тăвакан палăкĕ. Мĕнпе чапа тухнă-ха çак ту?

Историксем каланă тăрăх, XV ĕмĕрте Мускав çине Нагай çарĕ тапăнса килнĕ. Тăшмансем Сăр шывĕ патне çитерехпе çак ту çинче Микулай мĕлки тухса тăнă. Çак çеттуй мĕлкине курсан тăшман çарĕ хăраса ӳкет, тарма тытăнать.

Ку чăн пулнă, ун пирки мрамортан тунă плита çине славян чĕлхипе çырса хунă. Раççей çĕрне Турă авалтанпах пулăшса пынă пирки нумай çыраççĕ.

Çак асамлă вырăна эпĕ пиллĕкмĕш хут килсе куратăп.Чăннипех те пăхса ытармалла кунта: çӳлтен пăхсан – Сăр шывĕ авкаланса выртать, çакăнтан вăрман тытăнать. Вăл Çĕмĕрлепе Канаш тăрăхĕсене çитичченех тăсăлать. Ту çинчен 30 çухрăм инçетрине курма пулать.

Николай Казаков таврапелусепе эпир Калмаюр ялне ситсе куртамарĕ Хамарпа паллаштарса менле салтавпа килнине анлантарсан пире хапал тусах шкула ченсе кертресĕ

Шкул сурче пысакĔ ана Совет власе вахатенчеĔ ачасем нмай вахатра тунаĕ Шкула сак ялтах суралнаĔ политикапа ытти есре пысак ситенусем туна Дамир Исмагилович Шарипов ятне панаĕ Елекхи шкул Чаваш Калмаюран сере синче вырнасна пулнаĔ хальхи вара—тутарсем пуранакан енчеĕ Те саванпа шкуклта пер чаваш сынни анчах еслет—Галина Пантелеймоновна физика предметне верентетĕ Чаваш ачисем сахаллипе челхемере верентмессе (ашше-амаше верентесшенех мар…)Ĕ -тере завучĕ Тутарсем пайтах пулсан та тутар челхине факультатив мелепе кана верентессеĕ Глобализации текен пулам кашни ялтах хусаланма тытанче тесен те йанаш марĕ

Шкул музейне ертсе пыраканенĔ Гильсияр Ибрагимовна КаримованĔ паян канмалли кун пулсан та ана телефонна шанкаравласа ыйтсан вал сур сехетренех килсе пире музейри экспонатсемпе хавхаланулла паллаштарма тытанчеĕ Каласа хавармалла, кун пек пуян музей район центренче те кашнинчех марĕ Ике пысак пулемре мен кана сук! Сулахай енче—тутарпа чавашан авалхи тумеĕ Пер арсын кепи 1910 сулхиехĕ Унтах палла сынсен портречесемпе весен автобилгоафийеĕ Сак музея усакан Александр Дмитриевич Соколов синчен калакан пысак стенд та пурĕ ИĕЯĕ Яковлеван кун-сулне уса паракан выран сумла выран йышанатьĕ «Ачасем вал камнеĔ унан тивесле есесем синчен пелсе усчер»Ĕ- тере каласа параканĕ

Тухтар йахен стедче синче те Соколовсемĕ Палла спортсменсенĔ артистсенĔ савассемпе сыравсасем синчен теплен анлантарса панаĕ Весен хушшинче чавашсем пайтах пулни тата хыта савантаратьĕ

Музейра ял тата колхоз историйе пысак выран йышанать

Çĕршыва яланах хӳтĕлеме хатĕр

Афган çĕрĕ çинчен пирĕн çарсем тухнăранпа 25 çул çитрĕ, апла пулин те унти вутра çуннă салтаксен аса илмелли нумай-ха. Тутарстанри Çĕпрел районĕнчи Хулаçырми ялĕнче çуралса ӳснĕ Валерий Степанович Нищетов та тамăк çулăмĕнче çуннă.

Салтака кайиччен вăл Аслă Нагаткинти техника професси училищинчен водителе вĕренсе тухнă. 1984 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче вăл çуралнă кунне паллă тăвать çеç -- ăна салтака илсе каяççĕ. Ульяновск хулинчен унпа пĕрле 23 яш тухса каять. Валера учебкăна хăй ял ачипе Валентин Угандеевпа Ашхабад хулине лекет. Пилĕк уйăх вĕреннĕ хыççăн Валерий Степановича мотострелоксен чаçне Панджшер текен ту хушăкне илсе каяççĕ. Угандеева çамрăк салтаксене вĕрентме чаçа хăвараççĕ. Панджшертан инçех мар Баграм хули пулнă, çумрах— кишлаксем. Панджшер – питĕ кирлĕ вырăн шутланнă. Ку тĕле душмансем хытă сăнаса тăнă, час-часах тапăннă. Çирĕп кăмăлне, хастарлăхне кура Валерий Степановича аслă сержант званине параççĕ, командирăн çумне çирĕплетеççĕ.«Çапăçура палăрнăшăн» пĕрремĕш медале вăл Панджшер ту хушăкне душмансенчен хӳтĕленĕ çĕрте паттăрлăх кăтартнăшăн тивĕçет.

Икĕ çул сисмесĕрех иртсе каять. 1986 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнче вăл тăван килне таврăнать. Кăштах кансан Ульяновкри строительствăпа монтаж управленине электрика вырнаçать, строитель профессине алла илет.

Авланать. Çĕнĕ Малăкла районĕнчи Курахви ял хĕрĕ Светлана унăн мăшăрĕ пулса тăрать. Нищетовсем пĕр ывăл çуратса ӳстереççĕ.

Валерий Степановичăн кăкăрне тĕрлĕ вăхăтра панă медальсем илемлетеççĕ: «Воин-интернационалист» (1987 çул), «СССР Хĕç-Пăшаллă Вăйсене --70 çул» (1987), «Пархатарлă Афган халăхĕнчен»(1988), «Афганистанран çарсем тухнăранпа 20 çул çитнĕ ятпа» (1989).

Салтак тивĕçне Афган çĕрĕ çинче пурнăçлама тивнишĕн вăл пĕрре те ӳпкелешмест. Кирлĕ пулсан паян та çĕршыва хӳтĕлеме хатĕр.

Орден хуçине тупайман

Аслă вăрçа Кивĕ Улхашран 650 çын ытла тухса кайнă, вĕсенчен 330-шĕ çеç таврăннă, нумайăшĕ аманнă.

Эпир Николай Григорьевич Князькин Геройпа тивĕçлипех мухтанатпăр.

Пирĕн ялта Герой ята илме тивĕçлĕ тепĕр çын – Василий Андреевич Юманов – пулнă. Унăн «Хĕрлĕ çăлтăр», 2-мĕш тата 3-мĕш степеньлĕ Мухтав орденĕсем упранаççĕ.



Барельеф герою Н.Г. Князькину
Автор: скульптор Н. Кондр.

Тăван çĕршыва хŭтĕленĕшĕн вăл нумай медаль тата Сталинран Тав хучĕсене тивĕçнĕ. Василий Андреевича виççĕмĕш Мухтав орденне пама йышăннă пулнă, анчах награда хуçи патне паян та çитеймен. Самани çапларах пулнă, ун пирки шутлама вăхăт пулман. Кайран та шыраман. Енчен те виçĕ орденне те илнĕ пулсан – В.А. Юманов тивĕçлипех Герой пулса тăрĕччĕ.

Василий Андреевич – Петрушкасен йăхĕнчен. Унăн аслашшĕ, Петр Иванович, Андрей ывăлĕпе пĕрле 4-5 лашапа Иваново хулине тавар илме çŭренĕ. Ялта хăйсен лавки пулнă. Хĕрлĕ кирпĕчрен тунă çурт халĕ те ларать-ха.

Василий Андреевич 1924 çулта çуралнă. Вĕсем вăрçă тытăниччен Чĕмпĕрте пурăннă. 1942 çулта ăна çĕршыва хŭтĕлеме илсе кайнă. Вăрçă хирне кĕриччен 21-мĕш автополка вĕренме яраççĕ. Салтака танк çине пулеметчика лартаççĕ. Çулталăк хушши вăл Хĕвеланăç тата Балтика тăрăхĕнчи фронтсенче хаярăн çапăçать. 1943 çулта ăна 608-мĕш стрелковăй полка куçараççĕ. Хастар разведчика «чĕлхесем» тытса килнĕшĕн 2-мĕш, 3-мĕш степеньлĕ орденсем панă. Валентина Васильевна мăшăрĕ каласа панă тăрăх, разведчиксен вырăнтан хускалмасăр икшер талăк шурлăхра выртма тивнĕ. Вăрçă çулĕсем мăшăрĕн сывлăхне самаях хавшатнă. Каярахпа вăл ŭпке чирĕпе аптранă.

Василий Андреевич Польша, Венгри, Румыни çĕрĕсене тăшманран тасатнă çĕре хутшăннă. Вăл икĕ хутчен аманнă. Тăван ене 1946 çулта тин таврăннă. Ульяновскра водительте ĕçленĕ. Хĕрпе ывăл ŭстерсе аслă пĕлŭ панă. Анчах вăрçă суранĕсене пула унăн ĕмĕрĕ 55 çула çитсен татăлнă.

Несĕлĕмĕрсен йĕрĕпе

Çĕртме уйăхĕнче эпир -- Чĕмпĕр таврапĕлӳçисем -- Николай Казаковпа унăн ывăлĕ, Владимир Пушкин, Фёдор Искендеров пĕр кун хушшинче Пăлхар чăвашĕсен пулнă виçĕ хулине çитсе куртăмăр. Тутар енчи маттур чăвашсемпе юлашки çулсенче Николай Григолрьевич Кондрашкин тĕплĕ çыхăну тытатчĕ, вăл пире те çак чăвашлăхăн тĕпчев ĕçĕсене çыхăнма сĕнетче.


Вырĕна çитсенех эпир малтан **Пӳлер** хулинчи ту çине улăхрăмăр. Унта 444 картлашкапа хăпармалла. Ку чулсем ахальлисем мар, вĕсенче темле асамлă вăй пур теççĕ. Улăхнă çĕрте ĕлĕк-авал 11 пысăк шăтăк пулнă. Халĕ виççĕшĕ çеç упранса юлнă. Хаяр Иван патша вăхăтĕнче çак шăтăксенче мишерсемпе ытти халăхсене шыва кĕртсе православи тĕнне йышăнтарнă. Ту тăрринчи йывăçсем те асамлăн курăнаççĕ. Вĕсем çине çулçӳревçĕсем хăюсем çыхса хăвараççĕ. Çакăн пеккине эпĕ ăçта пулнă, çавăнта куратăп. Унсăр пуçне кунта тĕлĕнмелле чул выртать. Унăн çӳллĕшĕ – икĕ метр çурă. Ту çинче ĕлĕкхи крепоçсен вырăнĕсем халĕ те палăраççĕ. Крепость Пӳлер хулинчен пĕр çухрăмра вырнаçнă. Вăл 800 гектар çĕр лаптăкĕ йышăнать. Крепоçăн валĕсем çĕр питĕнчен 2 метр çӳллĕрех, 3-4 метр тарăнрах.

Ялĕнче музей пур. Шел, вăл хупăччĕ, кĕрсе кураймарăмăр. Кăнтăр хыççăн эпир çеттуй шыв ăсса илтĕмĕр те **Сувар** енне çул тытрăмăр. Малтан музейне кĕрсе куртăмăр. Унăн пуçлăхĕ (мишер хĕрарăмĕ) пире экспонатсемпе паллаштарчĕ. Кунта 800 ытла япала. Курмалли, тĕлĕнмелли сахал мар. Унтан Сувар крепоçне кайрăмăр. Вăл Кузнечиха ялĕ çывăхĕнче вырнаçнă. Унăн валĕсем çӳллĕ те тарăн. Çумăр тытăннипе кунта нумаях çӳреймерĕмĕр**,**

Пăлхара çул тытрăмăр. Ку хулара эпĕ пилĕк хут та пулнă. Юлашки икĕ çул хушшинче улшăнусем пайтах. Кунта халĕ йăлтах тутарла. Авалхи несĕлĕмĕрсен патшалăхĕ веçех мишерсен аллинче. Атăл хĕрринче чаплă мечĕт çĕкленсе ларать. Залĕнче ытăнпа тата хаклă чулсеме илемлетнĕ Коран выртать. Çулçӳревçĕсем валли хăна çурчĕсем туса лартнă. Атăл хĕрринчи асфальтлă çулсене хунарсем çутатаççĕ, пуянсен пĕчĕк пăрахучĕсене чарăнма меллĕ вырăнсем туса панă.

Пĕр сăмахпа, пăлхар-чăваш вырăнĕсене услам енне, Пăлхара çĕнĕрен мусульман тĕнне çавăрса пыраççĕ. Çапларах пулчĕ пирĕн çулçӳрев: тĕлĕнмелли те, пăшăрханмалли те.

Патриархăмăрăн вил тăпри çинче пулнă хыççăнхи шухăшсем



Могила И.Я. Яковлева на Ваганьковском кладбище, г. Москва.

Чăвашсене çутта кăларакан И.Я.Яковлевăн пурнăçĕ мана тахçантанпах кăсăклантарать. Манăн унăн çинчен кĕнекесем те, вырăсларан куçарнă Библи те пур. Мăшăрăм та вăл çуралнă Кăнна Кушки ялĕнчен. Малтанласа эпĕ Иван Яковлевича Чĕмпĕре пытарнă тесе шутланă. Унăн вил тăпри Мускавра пулнине пĕлсен унта çитсе курма ĕмĕтленсе пурăнтăм.

Усламçă ĕçне пуçăнсан эпĕ Мускава уйăхра икшер хутчен те çӳреме тытăнтăм. Пĕлтĕр раштав уйăхĕнче тĕп хуламăра кайсан пушă вăхăт тупса Ваганьково масарне васкарăм. Патриархăмăр вил тăприине виçĕ сехет шырарăм—тупаймарăм. Иккĕмĕш хут каяс умĕн палланисенчен ăçтарах шырамаллине ыйтса пĕлтĕм. Ку хутĕнче тупрăмах. Хĕресне курсан савăнса кайрăм. Вил тăпри çине чечек çыххи хутăм. Çумра фотоаппарат çуккишĕн питĕ кулянтăм.

Юлашки хут кăçал утă уйăхĕн вуннăмĕшĕнче пултăм. Халĕ унăн вил тăприне çăмăллăнах тупатăп. Кунта чăвашсем сахалтарах çӳреççĕ

курăнать. Пĕри-тавра çум курăкĕ пусса илнĕ. Алăк тăпси татăлса аннă, вăчăра çинче тытăнса тăрать. Ăна никам та юсакан çук ахăр. Эх, шутларăм эпĕ çумсене тăпăлтарнă май, Иван Яковлевич Чĕмпĕрте выртнă пулсан мĕнле кăна пăхса тăмĕччĕç... Унăн çывăх тăванĕсем Францире, Германире, Польшăра пурăнаççĕ те ун çинчен манса та кайрĕç пулĕ. Мускаври чăвашсен те тирпейлесе тăма вăхăчĕсем çук ахăр. Чĕмпĕр чăваш шкулĕ е чиркӳ çумне илсе килсе пытарнă пулсан мĕнле аван пулĕччĕ. Хисеплĕ çыннăмăр хальхи пек çум курăк айĕнче выртмĕччĕ.

Чăвашсен паттăр ывăлне А.Г. Николаев космонавта хăй çуралнă çĕршывне пытарса чăваш халăхĕ тĕрĕс турĕ тесе шутлатăп. Эпĕ Шурăвăта та час-часах пулатăп. Унăн вил тăпри çинчен çын татăлмасть. Пархатарлă чăваш халăхĕ сума-суса пăхса тăни куçкĕретех.

Чĕмпĕрсем И.Я. Яковлева чысласа палăк лартрĕç. Тинех пирĕн Аслă Патриархăмăра асăнса чечек çыххи хума вырăн пулчĕ. Анчах вил тăприйĕ аякра пулнишĕн чун ырат



Возложение цветов к памятнику И.Я. Яковлеву. г. Ульяновск.



Машина-памятник Ю А Гагарина

Пĕрремĕш космонавт çуралнă çĕршывра

Ачаранах ĕмĕтленнĕ ĕмĕтĕм пурнăçланчĕ. Эпĕ тĕнче уçлăхне çĕкленнĕ пĕрремĕш космонавт Юрий Алексеевич Гагарин çуралнă çĕршыва çитсе куртăм.

Юрий Гагарин Смоленск облаçне кĕрекен Гжатск районĕнчи Клумино ялĕнче (Мускавран 180 çухрăмра) çуралнă.

Ялĕ пысăк мар. Йĕри-тавра вăрман, инçех мар – юхан шыв. Вăл çуралнă çурта Гагарин хулине куçарнă (1968 çулта Гжатск хулине Гагарин ят панă). Ăна музея хирĕç вырнаçтарнă. Кивĕ çурт вырăнне çĕнĕрен туса лартнă. Халĕ унта музей.

Аслă вăрçă тытăнсан çак яла нимĕçсем килсе кĕнĕ. Тăшмансем кунта икĕ çул хуçаланнă. Гагаринсен çемйине килĕнчен хăваласа кăларнă. Вĕсен пахчара çĕр пӳрт туса пурăнма тивнĕ. Эпĕ унта кĕрсе куртăм. Пӳлĕмĕ виçĕ тăваткал метр лаптăк йышăнать. Кăмака пур. Икĕ енче йывăçран ăсталанă икĕ хутлă кравать вырнаçнă. Икĕ пĕчĕк пукан ларать. Çак шăтăкра пурĕ ултă çын пурăннă. Кун пирки мана музей сотрудникĕ каласа пачĕ.

Музей çумĕнче – кĕленче çурт. Унта Правительство парни -- çăмăл машина –хура «Волга». Пахчара пăхăртан ăсталанă амăшĕн палăкĕ ларать.

Музей экспонатсемпе пуян. Унта тĕрлĕ вăхăтра ӳкерĕннĕ сăн ӳкерчĕксем, ют çĕршывсем панă парнесем тата ытти те.

Юрий Гагарин хăйĕн тăван çĕршывне тăтăшах килсе тăнă. Юлашки хут вăл кунта 1967 çулта пулнă. Тепĕр çултан—1968 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче – вăл Владимир облаçĕнчи Киржач хулинчен иçех мар Новоселово ялĕ çумĕнчи вăрман çинее ӳксе çунса вилнĕ.



Дом и погреб семьи Гагариных.



Пианино нашего земляка коипозитора Григория Лискова 2013 г

ИНТЕРЕСНОЕ РЯДОМ

Григорий Лисковăн пианини Кӳкеҫре упранать

Нумаях пулмасть Николай Григоревич Кондрашкинпа Дунай Пăлхар хăнине, ăсчах Ангел Христова Шупашкара илсе кайнă чух эпир Кӳкеҫ поселокĕнче чарăнтăмăр. Кунта Никита Бичуринăн музейĕ пур. Музейпа паллашнă май Григорий Григорьевич Лисков композиторăн пианини куҫ тĕлне пулчĕ. Музей директорĕ Удалова (хĕр хушамачĕ Эльмукова, Кивĕ Улхаш хĕрĕ) пирĕн ентеш çинче тĕплĕнрех чарăнса тăчĕ. Григорий Лисков 1890 çулхи ноябрĕн 27-мĕшĕнче Чăнлă райнĕнчи Чăвашкассинче çуралнă. 1907-1915 çулсенче вăл Чĕмпĕр чăваш шкулĕнче вĕреннĕ, унпа пĕрлех тантăшĕсене сĕрме купăс калама вĕрентнĕ. Хăй ăста каланă.

Выçлăх тытăнсан (1921 çулта) вăл Томск облаçне тухса каять. Дурново ялĕнче ачасене вĕрентет. Çулталăк хушши Кузбасс хулинче счетоводра ĕçленĕ хыççăн Казахстанра çичĕ çул вăй хурать.

Вăрçă тытăннă çул Мускаври музыкăпа педагогика институтне пĕтерет. 1931-1937 çулсенче Шупашкарти музыка театрне ертсе

пырать. 1945 çултан тытăнса тивĕçлĕ канăва кайиччен Шупашкарти музыка училищинче вĕрентет. 1963 çулхи сентябрĕн 24-мĕшĕнче унăн чĕри тапма чарăнать. Ăна Шупашкарта пытараççĕ.

Григорий Лисков халăх пултарулăхĕпе кăсăкланнă, Чăваш ен, Тутарстан тата Пушкăрт Республикисен ялĕсем тăрăх фольклор пуçтарса çӳренĕ. Нумай юрă илемлетнĕ, çĕннисене кĕвĕленĕ.

Унăн пианинине Христофор Макарович Макаров тавралĕлӳçĕ Шупашкар районĕнчи Урай Макаç ялĕнче тупнă. Çавăнтанпа вăл Кӳкеçри музейра упранать.

Çак инструмента 1910 çулта Раççей империнче вырнаçнă нимĕçсен Фридрих Мюльбах фирми туса кăларнă. Фирма кунта 1856 çулта тĕпленсе 1915 çулччен ĕçленĕ. 25 сул хушшинче вăл 16 медале тивĕçнĕ, вĕсенчен вуннăшĕ – ылтăн.



Обмен артефактами общей истории и культуры (нумизматы).

Болгарский ученый Ангел Христов в гостях у чувашских коллег, с удовольствием делится старыми и новыми болгарскими монетами с нумизматом и краеведом Николаем Кирюшиным в художественной мастерской Николая Кондрашкиным, июнь 2013 г



Вход в пещерный монастырь

Сканово сер хавале

Пенза областенчи Наровчат районенче Сканово текен ял пурĕ Кунта XVII емерте херарамсен Троица-Сканов манастире пулнаĕ Унччен ана Сканово-сер хавал (пещера) манастире теневĕ Хавала манахсем чавса тунаĕ Асчахсемпе археологсем калана тарахĔ сак манастир Киев-Печăра манастиренчен те маларах никесленнеĕ

1667 султа пушарта архивра упранакан хутсем сунса кайнаĔ саванпа терле халап суретĕ Пер халапе тарахĔ кунта Нарчатка ятла княгинина пусне хунаĕ 1237 султа ку тарахра пысакĔ хаяр сапасусем пулса иртессеĕ Буртассемпе палхарсем тутар-монголсене хирес сапасассеĕ Вайсем тан пулманĕ Нарчатка ертсе пыракан сар темле хирес тарсан та тутарсен саресем весене хессеĔ теп туса пырассеĕ Нарчатка вара кулле сиксе вилетĕ Сакан хыссан тытанна та манахсем пысак шатак чавмаĔ княгининашан кел тумаĕ

Сер айенчи манастир ту синче вырнаснаĕ Унта 236 картлашкапа улахмаллаĕ Ту пусламашенче салкус тапса таратьĔ сакантах шыва кемелли выран пурĕ Эпе малтан саванта чамса тухрамĕ Кайран ту сине улахрамĕ

1976 султа асчахсем сер хавалне тепчессеĕ Унта ялан 12 градус аша таратьĕ Таршше—670Ĕ суллеше—2 метрĕ Вал вуна хутла пулнаĔ хале виссешне сес курма пулатьĕ Аялтисем серпе хупланнаĕ



Пещерный монастырь

Тата тепер халап суретӗ Сер айенче куле пурӗ Унта елекхи шурсухалсем пуранассе имешӗ Манахсен сер айенче аптека та пулнаӗ Унта -- терле йышши куракӗ Сер айенче те мул нумай пулнаӗ Шыв тата симеллисем пасалмассеЁ сара серсисенЁ шашисен виллисем те сермессе тесседӗ Сер хаваленче саса теленмелле янаратьӗ Шаппан каласнине те уссанах илтме пулатьӗ Сакан пек асамла выранта пулса куртам эпе иртне суллаӗ



Велосипед на котором обошли весь мир

Вĕрентӳçĕ, çулçӳревçĕ

Сăр поселокĕнчи шкулта географи предметне вĕрентекен Владимир Николаевич Кочетковпа эпĕ тахçанах тĕл пулма ĕмĕтленнĕччĕ. Ун пирки кăçал «Волга» телекомпани интереслĕ сюжет кăтартнă хыççăн ăна курас туртăм тата вăйланчĕ. Вăл ахаль учитель кăна мар, çулçӳревçĕ те. Хăй вĕрентекен ачисене ăçта кăна илсе çитермест...

Унпа паллашнă май эпĕ çакна пĕлтĕм: унра чăваш юнĕ юхать иккен. Унăн аслашшĕ иккĕмĕш тĕнче вăрçинченех Чăваш Енрен Чĕмпĕр тăрăхне килсе тĕпленнĕ. Асламăшĕ те чăваш пулнă. Халĕ йăхĕ вырăсланнă ĕнтĕ. Владимир шкул пĕтерсен Ульяновскри пединститута вĕренме кĕнĕ. Çут çанталăка, тăван тавралăха юратаканскер, вĕреннĕ чухнех велосипедпа обласри паллă вырăнсене çитсе курнă. Пĕччен мĕнпурĕ 80 пин çухрăм çӳренĕ. Шкулта ĕçлеме тытăнсан çулçӳреве ачасене те явăçтарать. Малтанах обласри Карсун-Чĕмпĕр маршрутпа тухаççĕ. Каярахпа вĕсем тепĕр маршрут суйлаççĕ: Сăр тăвĕсене «алла илеççĕ». Сăр шывĕ ăçтан тытăнса кайнине тĕпчеççĕ. Унтан вăл вĕренекенĕсене обласри чи çӳллĕ вырăна -- Çĕнĕ Спасск районĕнчи Юрьево ялĕ çумĕнчи ту çине илсе улăхать. Çак вырăн Балтика тинĕсĕн шайĕнчен 364 метр çӳллĕрех. Унсăр пуçне вĕрентӳçĕ ачасене Пугачевпа çыхăннă вырăнсене те илсе çитернĕ. Вырăнтисем каласа панă тăрăх, Емельян Пугачев восстани вăхăтĕнче Шатăршан ялĕ çывăхĕнче хăйĕн ылтăнне пытарнă теççĕ.

Кунпах çырлахман çулçӳревçĕ-учитель. Вăл ачасемпе Европăна, Америкăна, Мексикăна, Китая, Индие, Пакистана, Ирана, Монголие тата Австралие çитет!

Владимир Николаевич халĕ тепĕр ĕмĕтпе пурăнать. Вăл кăçал хĕлле велосипедпа Кăнтăр Америкăна тухса каясшăн. Унăн çулĕ вара Панамăран тытăнса Чили патшалăхне выртĕ. Вăл Венесуэла, Бразили, Перу, Боливи, Аргентина çĕршывĕсене иртĕ. Чили çĕршывĕнче -- çулăмлă çĕр вырнаçнă. Çакăнта çитме ĕмĕтленет те йывăрлăхсенчен хăраман çулçӳревçĕ.



Средневековые защитные рвы Волжской Болгарии...

СĂВАР

Х ĕмĕрти араб çыравçисен ĕçĕсенче Сласски уесне кĕрекен Кузнечиха тата Пăлхарсен Сăвар хули пирки калани пур. Тутарсем Кузнечиха ялне – Иске Суар, чăвашсем – Кивĕ Свар, Кузнечихăна тутарсем – Иске Курсиха, Çĕнĕ Кузнечихăна – Янга Суар тенĕ, чăвашсем – Чене Свар. Чăвашсенчен эпĕ çакна ыйтса пĕлтĕм: Кузнечиха ялĕ çывăхĕнче авалхи хула вырăнĕ пур. Вăл çур çухрăмра вырнаçнă. Унта халĕ те вак укçа, кăкшăм, çăра,

капăрлăх тата ытти кивĕ япаласем тупаççĕ. Кузнечиха тесе яла вырăссем çеç калаççĕ. Самар кĕпĕрнинче пурăнакансем тата таврара тĕпленнĕ вырăс мар халăхсем çак авалхи хулана Свар е Суар теççĕ. Хули ялăн кăнтăр енчен икĕ çухрăмра, Утка текен юханшывăн тепĕр енче, Даниловка ялĕнчен – пĕр çухрăмра, Пăлхар ялĕнчен– 50 çухрăмра, Самар кĕпĕрнинчен – виçĕ çухрăмра вырнаçнă. Сăвар хули 100 гектар çĕр лаптăкĕ йышăннă. Крепость валĕ – 3 метр çӳллĕш, шăтăкĕсем – 5 метр тарăнăш, сарлакăшĕ—4 метр. Валĕсене икĕ рет чавнă. Хулара 10 пин çын пурăннă, суту-илӳпе аппаланнă. Унта Китай, Хĕвеланăç çĕршывĕсенчен каравансем чарăннă. Тĕвесемпе пурçăн, çĕр мамăк, ылтăн тата ахах-мерчен турттарнă. Хĕлле пĕренерен тунă çуртсенче пурăннă, çулла кĕççерен ăсталанă юртăсене куçнă. Атăлçи Пăлхарсем çинчен «Ашкал ал-билад» («Виды стран») кĕнекере çырни пур. Пăлхар – çĕршывĕнче ислам тĕнне пăхăнакансем пурăнаççĕ. Тĕп мечет те унтах вырнаçнă. Унтан инçех мар Сивар (Сувар) хули вырнаçнă. Пăлхарсемпе кӳршĕлле хазарсем, буртассем, мадьярсемпе славянсем, вырăссем пурăннă.

Сăвара IX ĕмĕрте никĕсленĕ, 1236 çулта монголсем аркатнă.



Экскурсия чувашских краеведов в г. Сувар. 2013 г.



Защитное сооружение...



Сергиев Посад Монастырь

(Çуралнăранпа 700 çул çитнĕ тĕле)

Сергиев Посад хули тата районĕ тĕн историйĕсемпе пуян. 1314 çулта Кунта Сергий Радонежский Çеттуй çуралнă. Унăн ашшĕне амăшĕ – Кирилпа Мария – боярсен йăхĕнчен пулнă. Вĕсем виçĕ ывăл çуратса ӳстернĕ. Ашшĕ ачисене вĕренме янă. Сергийĕн ĕçсем аванах пыман, çавăнпа та вăл Турă ăс патăр тесе кĕл тума тытăннă. Кĕл туни ахаль пулман. Лаша кĕтĕвĕ кĕтнĕ чухне ун тĕлне ватă манах тухать. Çакă Сергийе просфор тыттарать. Унччен вăл Варфоломей ятпа çӳренĕ. 23 çулта Сергий ята параççĕ.

Вăл пурăннă чухнех Çваттуй шутланнă: нумай çынна ăс панă, вĕрентнĕ. 1380 çулта –Куликово çапăçăвĕ умĕн -- Сергий Радонежский Дмитрий Донскоя тутарсене çĕнтерме халал панă. Çак çапăçура вырăссем вăл кĕл тунипе çĕнтернĕ теççĕ. Летописçре тата çапла çырни пур: пĕлĕт çинчи çап-çутă шар мишерсен пуçĕсене касакаса пĕтернĕ. Сергий Радонежский вăхăтĕнче пурĕ 70 Çваттуй пулнă, вĕсем 50 мăнастир туса лартаççĕ.

1422 çулта Сергей Радонежский Троицк соборне туса лартать (халĕ ăна Троицк Сергиева лавра теççĕ). Сергий Радонежский 1392 çулхи авăнăн 25-мĕшĕнче вилет. Ун вырăнне Никон преподобный юлать 1737 çулта кĕмĕлтен рака (тупăк) туса хураççĕ. Ăна тума 400 килограмм кĕмĕл каять. Рака çумĕнче Сергий Çеттуйăн япалисем упранаççĕ. Сергей Родонежскин учĕ халĕ те çĕрмен теççĕ. Çавăнтах нумай Çваттуйăн учĕсем выртаççĕ. 1540-1550 çулсенче мăнастире кирпĕчрен купалаççĕ. Вуникĕ тăрăллă крепоçĕн вăрăмăшĕ 1120 метр, çӳллĕшĕ -6, хулăнăшĕ –3,5. Пăлхав вăхăтĕнче Польшăн вăтăр пинлĕ çарĕ крепоçе çавăрса илесшĕн пулать. 16 уйăха тăсăлаççĕ хĕрӳ çапăçусем. Илеймеççĕ. Кунта курса тĕлĕнмелли сахал мар.



Даже дерево тянется в сторону света. Рис Н Кондр



Встреча с учителями из Цивильска ЧР

Çĕрпӳсем Чĕмпĕре килсе курчĕç

Акан 29-мĕшĕнче Чĕмпĕр хулине Çĕпрел районĕнчен тăван чĕлхепе литературине вĕрентекен 13 педагог килсе çитрĕ.

Лякри хăнасене Чĕмпĕр чăваш таврапĕлӳçисем тата Чӳрекел шкулĕн хисеплĕ вĕрентӳçи Лидия Ярославская икĕ вĕренекенĕпе кĕтсе илтĕмĕр. Малтан Иван Яковлевичăн музейне кайса кăтартрăмăр. Чылайăшĕ кунта пĕрремĕш хут иккен. Ун хыççăн чăваш чиркĕвне антăмăр, çуртасем лартрăмăр. Кайран 17-мĕш наци вулавăшне çул тытрăмăр. Унта пире вулавăш заведующийĕ Ольга Алькина кĕтсе илчĕ. Хăнасем кунта хăйсемпе паллаштарчĕç. Чăваш тумĕсене тăхăнса юрăсем шăрантарчĕç.

Чӳрекелсем те хатĕрленсе килнĕ. Лидия Федоровна хăйĕн ĕçĕхĕлĕ çинчен каласа пачĕ. Вĕренекенĕсем сăвăсем вуларĕç. Николай Казаков вырăнти таврапĕлӳçĕсен ĕçĕсем çинче чарăнса тăчĕ. Шкул ачисемпе вăрмансене сыхлассипе занятисем ирттерни çинчен каласа пачĕ.

Михаил Аляпкин хăнасене хăйĕн «Серебряные россыпи» кĕнекине парнелерĕ. Авалхи Пăлхар историйĕ çинчен каласа пачĕ.

Эпĕ те пăлхарсем пурăннă çĕрсене тата Раççейри 50 ытла вырăна çитсе курни çинчен каласа патăм, ӳкерчĕксемпе паллаштартăм. Эпир каласа панисем çĕпрелсен кăмăлне кайрĕç. Тарават йышăннăшăн пурне те тав сăмахĕсем каларĕç.



Николай Кондрашкин художник ӳкерчĕкĕ

Çил арманĕ – йывăç кайăк

Кивĕ Улхаш ялĕн хĕрринче, Пухтел çулĕ çинче ватăран та ватă çил арманĕ ларатчĕ. Хăнăхнăччĕ эпир ăна. Аякра пурăнакансем яла таврăннă чух вăл сывлăх сунса кĕтсе илетчĕ, ăсатса яратчĕ. «Çил арманĕ – йывăç кайăк» тенĕччĕ манăн хисеплĕ ентешĕм Николай Кадебин пĕр сăвăра ун пирки сират,.

Çил арманĕ – йывăç кайăк
Тивĕçне кура сана
Лартмалла ял-йышăн палăк
Тав туса. Сума суса.

Кун пирки Николай Григорьевич Кондрашкинпа калаçрăм та вăл мана хăйин шухăшесем пирки çапла каласа теĕлентерчĕ, Çак ĕçсене тума вăл вунă сул каяллах ĕметленнĕ иккен ха унпа перле калаçса татăлнă сынсем халĕ вильсе пĕтнĕ, теприсене нимĕн те кирлĕ мар терĕ. Кĕнеке валли хăй кăранташпа тунă çил арман мĕлкине пачĕ. Николай Григорьевича çакăншăн питĕ пысăк пуç таятăпĕ

Пурте пĕлетпĕр, вăхăта тытса чарма çук. Ватти вилет, ача-пăча çуралать, аталанать. Ял арманĕн те вилме вăхăт çитрĕ пулас. Кăçал вăл вăйлă çил-тăвăлпа çумăра тӳсеймесĕр юмахри паттăр евĕр йăванчĕ, вилчĕ. Савăнмалли пулăм мар ĕнтĕ. Арман ванчăкĕсене курсан такамăн та кăмăлĕ пăсăлать. Вăл хăй ĕмĕрне ырми-канми ĕçре иртернĕ. Ялти тата таврари хыпарсене вăл чи малтан илтнĕ. Çынсен кулянăвĕпе хурлăхне пĕлсе тăнă. Ку кăна та мар. Вăл ялта кам ытлă-çитлĕ пурăннине, камăн пӳлме тулли тырă пулнине, кам мăянпа çурмалла хутăштарнă тыррине илсе пынине, вĕсен килĕнче нуша хуçаланнине пĕлнĕ.

Хресчен лăпкă çанталăкра çил килессе хурал çуртĕнче кĕтсе ларнă, пурнăçри çивĕч ыйтусене, ял хыпарĕсене сӳтсе явнă. Вăркăш çил килсен армана хускатса янă, çăнăх авăртнă. Вăйлă çил-çтăвăл сиксе тухсан армана чарма васканă. Акă мĕнле йĕркесем пур Алексей Мердеев çырнă «Старая мельница» сăвăра:



Вот они остатки крылатой мельницы с Старые Алгаши



Это была последняя ветряная мельница (крылатая кормилица) в нашем чувашском краю возможно и в Ульяновской области

«Ты башнею средневековой
Стоишь на отеле села.
Где дышат машиною новью
У мельника нынче дела».

Чăн та, арман çумĕнчи аслă çулпа автобуссем, çăмăл тата пысăк машинасем вирхĕнсе иртеççĕ. Аслă çул çумĕнчех электричество вăйĕпе ĕçлекен шурă кирпĕчрен купаланă арман ларать.

Шурă кулачă валли çăнăх авăртма аякка каймалла мар.

Çил арманĕ Халăх культурин палăкĕ пулнине пурте ăнланатпăр. Çак авалхи палăка сыхласа хăварнă пулсан вăл таврана илем кӳме пултарнă вĕт-ха. Пĕлтĕр ун пирки Улхашра калаçу пулса иртнĕччĕ. Чăнлă район пуçлăхĕсем патне çыру та çырнăччĕ. Район пуçлăхĕн çумĕ Анатолий Узиков пире çапла хурав панăччĕ: «Çил арманне муляж евĕр юсатпăр. Укçа та уйăртăмăр...». Армана пулас ăру валли сыхласа хăварас шанчăк пур иккен тесе савăннăччĕ улхашсем. Армана ӳкесрен çирĕплетсе тирпейлесе лартнă пулсан вăл Улхаша кăна мар, пĕтĕм Чăнлă районне те илем кунĕ пулĕччĕ. Чăваш Енре, Тутарстанра çил арманĕсене тĕпрен юсаса çĕнĕ пурнăç панă тенине илтнĕччĕ. Улхашра вара çил арманĕ ишĕлчĕ, ванчĕ. Çынсен армана сыхласа хăварас ĕмĕчĕ сӳнчĕ. Питĕ шел.

СОЛОВЕЦК УТРАВĔ

Соловецк архипелагĕ Шурă тинĕс варринче вырнаçнă. Вăл Çурçĕр поляр ункинчен кăнтăралла 165 çухрăмра сарăлса ларать. Утравăн лаптăкĕ 300 тăваткал метр. Вăл шута тата 100 ытла пĕчĕк утрав кĕрет. Вĕсенчен чи пысăккисем – Пысăк Соловец, Анзер, Пысăк тата Пĕчĕк Муксалама, Пысăк тата Пĕчĕк Куян утравĕсем. Чи пысăкки Пысăк Соловец. Вăл 218 тăваткал метр çĕр лаптăкĕ йышăнать. Кунта та пысăк тусем пур, Голгофа --64 метр, Секирная—74 метр çӳллĕш. Поляр çывăхĕнче Соловки текен утрав пур. Унти каçсем 22 сехете тăсăлаççĕ, çутă каçсем çу уйăхĕнчен тытăнса утă уйăхĕн çурриччен тăраççĕ. Шурă тинĕс хĕлле те шăнмасть, утрав тавра кăна пăрланать. Чӳк уйăхĕнчен тытăнса çу уйăхĕччен материк çине пырса кĕме çук. Шурă тинĕсре 1500 ытла чĕр-чун тата ӳсентăран, пулă.



Угловая башня Соловецкого монастыря

Соловецк утравĕн историйĕ çапларах. Унта пирĕн эрăччен I-II ĕмĕр малтан çынсем пурăнма тытăннă. Вĕсене п р о т о-с а а м с е м теннĕ. Вилнисене çĕр чавса пытарнă, тĕмĕсем туса хăварнă. XV ĕмĕрте кунта и н о к с е м п е пĕрле преподобный Савватий килсе тĕпленет. Вăл таса Кириллăн вĕренекенĕ пулнă. Ун хыççăн çак тăрăха Германпа Зосим килсе вырнаçни паллă. Савватийпе Герман 1429-1435 çулсенче пурăннă. Савватий вилнĕ хыççăн Германпа Зосима утрав çине тавăнса мăнастир тума тытăнаççĕ. Ĕмĕр вĕçĕнче мăнастире Аслă Новгород хуçисем тытса илеççĕ. XVII ĕмĕрте вăл тинĕс хĕрринче пурăнакансен тĕн, хуçалăх тата çар центрĕ пулса тăрать. Филипп игумен мăнастир чултан тутарать, пысăк вулавăш пуçтарать, турăшсем çыракан шкул уçать. 1668-1676 çулсенче Никон патриархăн реформине пăхăнманшăн патша çарĕсем манахсене вĕлереççĕ. Пĕрремĕш Петĕр патша Соловкинче икĕ хутчен пулать (1694 тата 1702 çулсенче). Крым вăрçи вăхăтенче (1854 çулхи утă уйăхĕнче) акăлчан карапĕсем «Бриск» тата «Миранд» мăнастире вунă сехет хушши тупăсенчен переççĕ.

XX ĕмĕр пуçламăшĕнче Соловецк мăнастирне килсе куракансен шучĕ 20 пине çитет. Утрав çинче 400 çул хушши тĕрме пулнă. Унта кам кăна ларман, 1-мĕш патша вăхăтĕнче Петр Толстой та ларнă.

1582-1596 çулсенче мăнастире кирпĕчрен тата пысăк валунсенчен тăваççĕ. Вăл Раççейре чи пысăкки пулса тăрать, вăрăмăшĕ – 1200 метр. Стенисен хулăнăшĕ—7, çӳллĕшĕ – 11, башнисен çӳллĕшĕ – 17 метр.

Утрав кӳлĕсемпе пуян, пурĕ 500 ытла. 70 кӳлли каналсемпе çыхăннă.

Кунта аэропорт та пур.

Эпир утрав çине Кемь хулинчен пăрахутпа виçĕ сехет çурă кайрăмăр. Утрав хуларан 65 çухрăмра вырнаçнă. Кайнă чух шыв лăпкăччĕ. Каялла таврăннă чух аванах хăрарăмăр. Шыв çинче ăнсăртран 2-3 метр çӳллĕш тăвăл тытăнчĕ. Эпĕ ун пек хăрушă лару-тăрура нихçан та пулса курман. Ахаль каламаççĕ иккен: «Кам тинĕсре пулса курман, çав Турра ĕненмест»,- тесе. Чăн сăмах. Пăрахут çинче сĕтел-пукан, телевизор таврашĕ, йăлт вĕçе-вĕçе кайрĕç. Пĕр çемье хăйсен çине хĕрес хура-хура Турă кĕнеки вулама тытăнчĕ. Эпĕ те Турăран инкекрен хăтарма ыйтрăм. Тăватă сехет хушши çӳллĕ хумсем витĕр ишрĕмĕр. Вĕсем пăрахута малалла ишме памаççĕ.

Кемь хулинчен инçех мар Рабочеостровск текен ял пур. Çакăнта ӳкернĕ те иккен Павел Лунгин режиссер «Остров» кинона. Çав вырăнсене пăхса çӳрерĕмĕр, ӳкерĕнтĕмĕр.

Шыв килнипе кайнине сăнаса тăма питĕ кăсăклă пулчĕ. Вăл ирхине килет, каçалапа Шурă тинĕс енне каять.



Пушки Соловецкого кремля – монастыря молчат

СОЧИЕ курма кайрăм

Эпĕ çул çӳреме юрататăп. Мĕн курни-илтнине вулакансене пĕлтерме васкатăп. Ку хутĕнче эпĕ Сочи хулине çитсе курни çинчен каласа парасшăн.

Сочи – илемлĕ хула. Сывлăхшăн сиплĕ вырăнта нумайăшĕ каннă пулĕ. Кăштах унăн историйĕ çинче чарăнса тăрас килет.

Çак паллă хула 1898 çултанпах чирлĕ çынсене сиплемелли вырăн шутланать. Ăна пуçарса яраканĕсем Н.И. Мамонтовпа В.А. Хлудов (Мускав хулин хисеплĕ çынни) пулнă.

Мана «Ривьера» текен парк кăсăклантарчĕ. Кунта мĕн кăна çук: тĕрлĕ аттракционсем, автодром, партодром, америка тăвĕсем тата ытти те. Парк лаптăкĕ 14,7 гектар йышăнать. Унта пурĕ 240 тĕслĕ ӳсен-тăран, вĕсенчен 50-шĕ – сайра тĕл пулаканнисем.

Çакăнтах космонавтсен аллейи пур. Пурĕ 47 космонавт хăй аллипе монголи йывăçне лартнă. Эпĕ пирĕн ентешĕмĕр Андриян Григорьевич Николаев лартнине шыраса тупрăм. Вăл шап-шурă чечекреччĕ. Унăн вулли тӳрĕ те яштака. Ун пеккине урăх курмарăм. Мухтавлă чăваш паттăрĕ лартнăскере хам сисмесĕрех ачашшăн

çупăрласа илтĕм. Унра темĕнле асамлă вăй пур пек туйăнчĕ. Асăнмалăх виçĕ çулçине тата пĕр чечекне татса илтĕм.

Сочи хулин музейне те кĕрсе куртăм. Унта 60 пин экспонат упранать. Космонавтсене халаллана «Человек и космос» текен зал пысăк лаптăк йышăнать. Кунта А.Г. Николаевпа В.И. Севастьянов космонавтсем «Союз-3» караппа çĕртме уйăхĕн 1-19 –мĕшĕсенче сывлăшра пулнă хыççăн вĕçсе аннă аппарат упранать.

Паркра тата тимĕр ĕмĕрсенче зихи, адыгей, черкес халăхĕсем чулран тунă йывăр плитасем айне вилнисене пытарнă. Пĕр плити икĕ-виçĕ тонна таять.

Çапла манăн çулçӳрев интереслĕ пулчĕ. Эпĕ унта канма мар, курма кайрăм.



Синие ночи в городе Сочи

Регионти влаçсен ĕçне ырларĕç

Акан 4-мĕшĕнче облаçри ачасен пултарулăх Керменĕнче Ульяновск облаçĕнчи обществăлла контролĕн тĕрĕслĕх палатин (председателĕ – Захар Мисанец) пĕрремĕш съезчĕ иртрĕ. Чĕмпĕр чăваш таврапĕлӳçисенчен мана ячĕç.

Пурĕ 150 ытла делегат пухăннăччĕ. Çав кун шăпах пирĕн облаçа РФ Правительство председателĕ Дмитрий Медведев тата РФ çыхăну

министрĕ Михаил Абызов килнĕччĕ. Михаил Абызов съезд ĕçне хутшăнчĕ. ЖКХ, пенси тата çулсене юсас ыйтусене çĕклерĕ, регионти влаçсен ĕçне пĕтĕмĕшле ырларĕ. Обществăлла канашсен ĕçне çĕнетсе улăштарма, регионти ытусене йышăнас умĕн халăхпа сӳтсе явма, обществăлла тĕрĕслев ĕçне лайăхлатма сĕнсе çапла каларĕ:

-Тӳресене канлĕ ларма ан парăр, вĕсене ĕçлеттерĕр. Анчах вĕсене хисеплĕр, вĕсен ĕçĕ çăмăл мар.

Съездра тухса калаçакансем тата пулчĕç. Залра ларакансем те тăра-тăра сĕнӳсем пачĕç.

Тăван тăрăх пĕрлештерет

Тутарстан Республикинчи Кивĕ Çĕпрел ял вулавăшĕнче ку тăрăхра çуралса ӳснĕ таврапĕлӳçĕпе Николай Александрович Казаковпа тĕлпулу иртрĕ. Çыравçă хăйпе пĕрле Ульяновск облаçĕн пултарулăх тата вĕрентӳ ĕçченĕсене илсе килнĕ.

Тĕлпулăва Çĕпрел районĕнчи чăваш ялĕсенчи вулавăшçăсем тата чăваш чĕлхипе литаратурине вĕрентекенсем хутшăнчĕç.

Хурăнвар-Шăхаль ялĕн вăлавăшçи Алевтина Тарасова мероприятие ертсе пырса Кивĕ Çĕпрелĕнчи вулавăшăн ертӳçине сăмах пачĕ. Гельфия Яфизова пухăннисене саламларĕ. Ача-пăча вулавăшĕн ертӳçи И.А. Мадурова вулавăш ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштарчĕ.

-Пирĕн вулавăша 1360 вулакан çӳрет. Вĕсен хушшинче - чăвашсем, тутарсем, вырăссем тата ытти наци çыннисем. Чăваш ачисем тăван чĕлхене маниманни савăнтарать. Вĕсемшĕн фондра 700 ытла чăвашла кĕнеке. Хамăр тăрăхран тухнă çыравçăсен (Анатолий Чебанов, Валентина Тарават, Анатолий Юман, Николай Матросов, Валентин Макаров...) кĕнекисем чылай,-терĕ Ирина Аркадьевна.

Николай Кирюшин таврапĕлӳçĕ, чăваш халăх ăсчахĕ Николай Казаков, Николай Матросов çыравçă, Геннадий Карсаков учитель тăван тăрăх историйĕ çинчен каласа пачĕç. Ульяновск облаçĕнчи Майна районĕнчи Чӳрекел шкул вĕрентӳçи Лидия Ярославская тата унăн вĕренекенĕ Алена Волынщикова тĕпчев ĕçĕсен хăтлавне кăтартрĕç.

Тĕлпулу «Народные промыслы земляков XX века» куравпа вĕçленчĕ.

Геннадий КАРСАКОВ.

Тутарстан Республики, Çĕпрел районĕ, Çĕнĕ Йĕлмел ялĕ.



В школе с Новое Ильмово 2013 г



Встреча с библиотекарями района в Доме культуры с Старое Дрожжаное РТ



Уроки краеведения в школах родного края исследователя-путешественника Н Н Кирюшина



Кивĕ Сахчара тавраплĕлӳ урокĕ иртрĕ

Акан 9-мĕшĕнче Чĕмпĕрте ĕçлесе пурăнакан тавраплĕлӳçĕ Николай Кирюшин Мелекесс районĕнчи Кивĕ Сахчари вăтам шкулта (директорĕ Альфия Шагвалиева) хăйнеевĕрлĕ тавраплĕлӳ урокĕ ирттерчĕ.

Унччен хăнасене (Чăваш ăсчахне Николай Кирюшина, Димитровградра пурăнакан тавраплĕлӳçе, чăваш халăх академикне Геннадий Улюкина тата «Канаш» хаçат журналистне Нина Еграшкинана) шкул музейĕпе паллаштарчĕç.

Тавраплĕлӳ урокĕ коридорта иртрĕ. Аслă класра вĕренекенсем тата вĕрентекенсем (пурĕ 30 яхăн) тенкелсем çине вырнаçрĕç.

Николай Кирюшин малтан хăй çинчен каласа пачĕ.

-Эпĕ Чăнлă районĕнчи Кивĕ Улхашра çуралса ӳснĕ. Усламçă ĕçĕпе аппаланатăп. Унпа пĕрлех тавраплĕлӳ ĕçĕпе кăсăкланатăп. Çулталăкра пĕр-икĕ хутчен вăрăм çула тухатăп, чăваш халăх историйĕпе çыхăннă е ытти тĕнчипе паллă вырăнсене çитсе куратăп: сăн ӳкерчĕксем тăватăп, курни-илтнине çырса пыратăп. Ман хайлавсене кĕскен «Канаш» хаçат çутатса тăрать. Шел, хаçатра мĕнпур сăн ӳкерчĕке кăтартма май çук. Хамăн туйăмсене халăха туллин каласа парас шухăш ăшра тахçанах тĕпленнĕччĕ.

«Ху пухнă истории çӳпçине мĕн усăсăр выртăратăнан? Атя, пирĕнпе тухса çӳре, шкул ачисене каласа пар, халăхăмăра паллаштар», -терĕç мана пĕрре Чĕмпĕр чăваш таврапĕлӳçисем. Эпĕ çавна çеç кĕтнĕн хаваспах килĕшрĕм. Çапла эпĕ ăçта пĕччен, ăçта таврапĕлӳçĕсемпе пĕрле тĕлпулусене тухса çӳреме пуçлăрăм, тĕрлĕ вырăнта пурăнакан йăхташсем йĕркелекен мероприятисене хам машинапа илсе çӳреме тытăнтăм. Чăваш Республикинчи Муркаш, Етĕрне, Çĕрпӳ районĕсенче, Тутар Республикинчи Çĕнĕ Йĕлмелте, Ульяновск облаçĕнчи Çинкĕл районĕнчи Ялавăрпа Уличере, Чартаклă районĕнчи Первомайски ял çыннисемпе тата шкул ачисемпе тĕл пултăмăр ĕнтĕ. Паян та çав тĕллевпех эпир сирĕн патăра çитрĕмĕр,- терĕ вăл пурне те сывлăх сунса.

Николай Кирюшин Раççейри 55, чăваш несĕлĕсем пурăннă историллĕ 7 вырăна çитсе курни çинчен хавхаланса каласа пачĕ, сăн ӳкерчĕксемпе çирĕплетрĕ. Ачасемпе вĕрентекенсем питĕ тимлĕ итлесе ларчĕç, ӳкерчĕксемпе кăсăкланчĕç, алăран алла парса тимлерĕç. Шел, вăхăчĕ сахалтарах пулчĕ. Вăл хатĕрлесе килнĕ мĕнпур материалĕпе паллаштарма ĕлкĕреймерĕ. Мĕншĕн тесен ачасен шăпах апат вăхăчĕ çитнĕччĕ, çинĕ хыççăн кӳршĕ ялтан килнисене леçме автобус кĕтсе тăратчĕ. Николай Николаевич истори, географи урокĕсенче усă курма авалхи карттăсен копийĕсене, тата нумай сăн ӳкерчĕк парнелесе хăварчĕ. Вĕрентӳçĕсем таврапĕлӳ ĕçне чунтан парăннă хăнана хăйнеевĕрлĕ урокшăн чĕререн тав турĕç.



Урок путешественника в Верхнетимерсянской школе 2015.



Священный Монастырь нетленной Ламы в Бурятии

Тĕлĕнтермĕш çын (Далай-Лама)

Улан-Удэрен 30 çухрăмра вырнаçнă Иволгино ялĕнче тĕлĕнмелле çын пур. Вăл вилнĕ, çав хушăрах чĕрĕ те. Ăна Даши Доржо Итигэлов тесе чĕннĕ. Вăл 80 çул каялла 75 çул тултарсан вилнĕ. Ăна 1927 çулта çĕр айне чавса пытарнă. Вилес умĕнчи халалĕнче вăл çапла çырнă: «Манăн ӳт çĕрмест, 30 çултан чавса кăларсан хăвăр курса ĕненĕр». Унăн кăмăлне тивĕçтернĕ. Анчах вилтăприне 30 çултан мар икĕ çул маларах уçма тивнĕ. Мĕншĕн тесен ăна пытарнă ялта вăйлă тăвăл пулнă. Уçнă та – тĕлĕннĕ. Чăннипех те, Итигэлов чĕрĕ чухнехи пекех выртнă.

